К 76.12
Т-33
26971-чув

РСФСР Аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ министерстви
И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ

И. Я. ТЕНЮШЕВ

# Чăваш АССРĕнчи ĕçялкорсен массăллă рейчĕсем

Вĕренӳ пособийĕ

Шупашкар—1983

Национальная библио ека ЧР
4-026971

Ö02.6
Т33

РСФСР Аслă тата ятарлă вăтам пĕлÿ министерстви
И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕ

И. Я. ТЕНЮШЕВ

# ЧАВАШ АССРĕнчи ĔÇЯЛКОРСЕН МАССАЛЛА РЕЙЧĔСЕМ

Вĕренÿ пособийĕ

ПРОВЕРЕНО 5 ИЮН 2017
2007

Национальная республиканская библиотека им. Н. В. Никольского

Шупашкар—1983

Учебное пособие по спецкурсу «Организация рабселькоровских рейдов» предназначено для студентов IV курса отделения чувашского языка и литературы, проходящих специализацию по журналистике. Оно состоит из четырех глав. В первой главе рассмотрен рабселькоровский рейд как одна из важных форм массовой работы редакции газеты. Во второй — подробно охарактеризованы виды рейдов, в третьей — методика их проведения. Формы борьбы за действенность рейдов показываются в четвертой главе. В конце пособия даются тематика семинарских и практических занятий и рекомендуемая литература.

Тематический план 1983 г. поз. 1536.

Отв. редактор: канд. филол. наук, доцент И. И. ОДЮКОВ

ПРОВЕРЕНО
2010

26971-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

© Чувашский государственный университет, 1983 г.

## УМĔН КАЛАНИ

Халăхсен аслă çулпуçĕ В. И. Ленин пичетри сăмах вăйĕпе пĕлтерĕшне пысăка хурса хакланă, совет пичечĕн тĕп функцийĕсемпе принципĕсене вăл никĕсленĕ. «Хаçат пĕлтерĕшĕ çапах та идейăсем сарнинче çеç мар, политикăлла воспитани панинче тата политикăлла союзниксене явăçтарнинче çеç те мар. Хаçат — коллективлă пропагандист тата коллективлă агитатор çеç мар, çавăнпа пĕрлех коллективлă организатор та», — палăртнă Владимир Ильич «Мĕнрен пуçăнмалла?» статйинче[1]. Вăл пичет функцийĕсене çапла палăртни хальхи кунсемшĕн те тĕрĕс. Пичет коммунизм обществине туса хурассишĕн пыракан кĕрешӳре хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Совет пичечĕ — марксизм-ленинизм идейисене творчествăлла малалла аталантармалли тата пропагандăламалли чаплă хатĕр. Вăл пирĕн обществăн ăстăн тĕлĕшĕнчи пурнăçĕн паха сфери. Çакăнпа пĕрлех пирĕн хаçатсемпе журналсем промышленноçпа ялхуçалăх ĕçне, экономика аталанăвĕ епле пынине куллен çутатаççĕ, халăх пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырас ыйту çине тимлĕ пăхаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн 1983 çулхи июньти Пленумĕ «Партин идеологи ĕçĕпе массăллă-политикăлла ĕçĕн хальхи кирлĕ ыйтăвĕсем» постановленире çакна палăртать: «Идеологи ĕçĕ ытларах та ытларах малти вырăна тухса тăрать, унăн вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ ӳсеççĕ»[2]. Çав документрах идеологи ĕçĕнче пичет, телевиденипе радиовещани паллă вырăн йышăннине кăтартнă. «Пирĕн обществăра пресса — социализмла демократин чи кирлĕ институчĕ, ĕççыннисене кулленхи çивĕч ыйтусене сӳтсе явма тата татса пама хутшăнтармалли, общество шухăш-кăмăлне йĕркелемелли хатĕр», — тенĕ унта[3].

Хаçата профессиллĕ журналистсен аллипе кăна кăларса тăма çук. Совет пичечĕн вăйĕ — унăн ĕçне массăсем анлăн хутшăннинче. «Ертсе пыракан тата ялан çырса тăракан каш-

---

[1] Ленин В. И. Соч. тул. пух., 5 т., 11 с.
[2] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.
[3] Çавăнтах.

ни пилĕк литератор пуçне литератор мар работниксем пилĕкçĕр, пилĕк пин çын хутшăнсан çеç хаçат чăн та витĕмлĕ пулма пултарать», — тенĕ В. И. Ленин[4]. Çакна асра тытса, пирĕн хаçатсем хăйсен ĕçне рабочи корреспондентсемпе ялти корреспондентсене — рабочисене, колхозниксене, специалистсене, ертсе пыракан работниксене активлă хутшăнтараççĕ. Ĕçялкорсене куллен вĕрентсе, пулăшса пырассине редакцисем чи ответлă задачăсенчен пĕри тесе шутлаççĕ. Вĕсем пичет активисчĕсене, В. И. Ленин калана пек, «ку чухнехи вăхăт историне çырмашкăн» пулăшма, партипе халăхăн практикăри ĕçне май килнĕ таран усă куме вĕрентеççĕ[5]. Нумаях та пулмасть «Правда» хăйĕн умстатйинче çапла çырчĕ: «Пирĕн çĕршыври пресса — чăннипех пĕтĕм халăх трибуни, ĕççыннисене паянхи çивĕч ыйтусене сўтсе явма тата татса пама, хăйсен предприятийĕн, патшалăхăн, обществăн ĕçĕсене туса пыма хутшăнтармалли шанчăклă хатĕр»[6].

Рабочи тата ялти корреспондентсем — пиtĕ тимлĕ çынсем. Таврара пулса иртекен ĕçсемшĕн, коллективра кам хăйне епле тытнишĕн ответлăха вĕсем çивĕччĕн туяççĕ, тĕрĕслĕхшĕн çунаççĕ, йĕркесĕрлĕхпе киревсĕрлĕхе асăрхамасăр пулмаççĕ, пăрăнса иртмеççĕ. Пичет органĕсем ĕçялкорсемпе тачă çыхăну тытаççĕ, вĕсем хушшинче массăллă ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Ку ĕçĕн формисем чылаях пуян. Вĕсенчен пĕрисем — яланлăх формăсем. Вĕсен шутне редакцин штатра тăман пайĕпе обществăлла приемнăйĕ, ĕçялкорсен совечĕ кĕреççĕ. Тепĕр йышши формăсемпе редакци вăхăтран вăхăта, хĕрў ĕççи тапхăрĕнче е ун умĕн, пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем татса панă чухне усă курать. Вĕсене вăхăтлăх формăсем теме пулать. Çакăн пек формăсем шутĕнче — обществăлла смотрсем, ĕçялкорсен рейчĕсем, рабкорсен тата ялкорсен посчĕсем. Ку формăсем пĕрремĕш пилĕкçуллăхрах çуралнă, аталаннă социализм тапхăрĕнче çĕнĕ вăй илчĕç.

ПĔРРЕМĔШ СЫПАК

## ĔÇЯЛКОРСЕН РЕЙЧĔ — ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ ЙĔРКЕЛЕКЕН МАССĂЛЛĂ ĔÇĔН ПАХА ФОРМИ

Ĕçялкорсен рейчĕ тесе ĕçе ăнăçлă йĕркелеме тата чăрмавсемпе çитменлĕхсене пĕтерме пулăшас, малти опыта тишкерсе çутатас тĕллевпе пичет, телевидени радиовещани активисчĕсем рабочисемпе, колхозниксемпе, специалистсемпе пĕр-

---

[4] Ленин В. И. Соч. тул. пух., 9 т., 106 с.
[5] Т-р: çавăнтах, 208 с.
[6] Çивĕч, витĕмлĕ вăй. — Правда, 1983, июлĕн 2-мĕшĕ.

ле предприятисенче, колхозсемпе·совхозсенче, учрежденисемпе организацисенчеирттерекен обществăлла тĕрĕслеве калаççĕ. Çав тĕрĕслев вăхăтĕнче тупса палăртнине пĕтĕм бригада пĕрле сӳтсе явса тата пĕтĕмлетсе çырни рейд материалĕ пулать.

Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха рейд материалĕ ыттисенчен? Акă, «Пионер сасси» 1983 çулхи августăн 13-мĕшĕнче «Хатĕр-и шкул?» рейд» рубрикăпа «Шкул тунсăхлать» информаци корреспонденцийĕ пичетленĕ. Ку рейд материалĕ-ши? Рубрика çакна тĕрĕсех палăртать-ши? Корреспонденцире Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Урхас Кушкăри вăтам шкул тата районти ытти шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне епле кĕтсе илни çинчен сăмах пырать. Çук çав, ăна рейд материалĕ теме май килмест, мĕншĕн тесен ун айне пĕр автор çеç алă пуснă; тĕрĕслеве бригада мар, хаçат корреспонденчĕ пĕччен кăна ирттернĕ. Чăн ĕнтĕ, корреспондентпа пĕрле шкул директорĕ тата çутĕç пайĕн заведующийĕ çӳренĕ, анчах вĕсем тĕрĕслевçĕсем мар: хаçат корреспонденчĕ çав руководительсен ĕçне тĕрĕсленĕ.

Уйрăм корреспондент алă пуснине рейд материалĕ пек кăтартни ытти хăшпĕр хаçатсенче те тĕл пулать. «Молодой коммунист» хаçатăн пĕр номерĕнче «Ку вăл санăн кил» статья пичетленчĕ. Тĕп заголовок айĕнче хушса пани тăрать: «Студентсен общежитийĕсем тăрăх ирттернĕ рейд», — тенĕ унта[1]. ВЛКСМ обкомĕпе хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем студентсен общежитийĕсене çитсе курнă иккен, кунта мĕнле вĕреннипе тата каннипе интересленнĕ. Çавăн чухне мĕн палăртни çинчен çырнă та ку статьяпа хаçат корреспонденчĕ. Ăна рейд материалĕ теме тĕрĕслеве хутшăннисем пурте пĕрле сӳтсе явни, пĕрле çырни, пурте алă пусни çитмест.

Рейд вăхăтĕнче тĕрĕслев бригадин кашни членĕ вăл е ку пулăма хăй куçĕпе курать, хăйĕн ăс-хакăлĕпе виçет. Çавăнпа рейд хыççăн пурте пĕрле сӳтсе явни, тишкерсе хаклани, пĕрле çырни кирлĕ, мĕншĕн тесен рейд материалĕ пĕтĕм коллектив ĕçне пĕтĕмлетсе памалла. Унăн вăйĕ коллектив шухăшне палăртса тăнинче пулать те.

Пичет органĕн редакцийĕ ирттерекен массăллă ĕçĕн формисем пĕрин хыççăн тепри çак çулпа аталанса пынă: хаçатăн ударлă бригадисем — обществăлла смотр — поход-тревога — ĕçялкорсен массăллă рейчĕ т. ыт. те. Кĕскен кашни формиех уйрăм пăхса тухар. Ударлă бригадăсене чи малтан «Правда» хаçат пĕрремĕш пилĕкçуллăхра йĕркеленĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, хаçатăн ударлă бригадисем хальхи рейд бригадисем евĕрлех пулнă. «Патшалăх, производствăпа строи-

[1] Чабаев Ю. Это твой дом: Рейд по студенческим общежитиям. — Молодой коммунист, 1972, 22 янв.

тельство ёҫне тишҫерме, тĕрĕслеме тата тытса пыма массăсене чăннипех хутшăнтарас енчен пăхсан, вĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк... Пролетари массисем куллен тĕрĕслесе тăмалла тăвасси парти умĕнчи тĕп задачăсенчен пĕри пулать те ĕнтĕ. Репортер мар, редакци сотрудникĕ мар, инспектор мар, рабочи-ударниксен массисем хăйсем «Правда» пуҫарнипе ҫулталăк ҫурă хушшинче утмăл хутчен патшалăх, хуҫалăх, общество ĕҫĕ-хĕлĕн тĕрлĕ енĕсем *ҫывăхнех* пынă; *пирĕн строительствăн уйрăм участокĕсен ҫирĕплĕхне хăйсен аллисемпе тытса пăхнă; ĕҫре, практикăра, куҫпа курса, кĕнекесем тăрăх ҫеҫ мар, пурнăҫра строительствăн механизмĕпе паллашнă;* ҫав механизм епле ĕҫленине тĕрĕслеме, унăн тĕп ҫитменлĕхĕсене (ăнсăртран тĕл пулакан йăнăшсене мар) асăрхама, механизм ҫитменлĕхĕсене пĕтермелли уҫăмлă ҫулсем палăртма хăнăхнă»[2]. Ҫалас пулать, ҫавăн пек ударлă бригадăсем Чăваш АССРĕнчи хаҫатсем те йĕркеленĕ.

Хаҫат редакцийĕсем массăллă ĕҫре малтанхи вăхăтрах усă курнă, халĕ те тиркемен паха форма — обществăлла смотр. Ку форма та пĕрремĕш пилĕкҫуллăхра, ĕҫялкорсен рейдĕнчен маларах ҫуралнă. Унпа партипе правительство постановленийĕсемпе йышăнăвĕсене пурнăҫланине, политикăпа хуҫалăх кампанийĕсене хатĕрленсе ирттернине, коллективсем хăйсен обязательствисене пурнăҫа кĕртнине тĕрĕсленĕ чухне усă кураҫҫĕ. Обществăлла смотр ĕҫялкорсен рейдĕнчен ҫакăнпа уйрăлса тăрать: смотра ĕҫялкорсемпе пĕрле предприятин е хуҫалăхăн пĕтĕм общественноҫĕ хутшăнать. Смотр мĕн кăтартнине коллективсенче сӳтсе яваҫҫĕ, ĕҫе лайăхлатма мĕн-мĕн тунине пичетре пĕлтереҫҫĕ.

1930 ҫулхи мартра ВКП(б) Чăваш обкомĕ ҫывхарса килекен «Ҫуракин пĕтĕм фрончĕ тăрăх» смотр ирттерме йышăннă. Унăн тĕллевĕ — парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсем, батраксемпе чухăнсем, вăтам хресченсем ҫурхи акана епле хатĕрленнине, ăна мĕнле ирттернине тĕрĕслесси. ВКП(б) обкомĕн постановленине пурнăҫласа, республикăри хаҫатсем «Ҫуракине хатĕрленессин тата ирттерессин смотрĕн йĕркисем» документ пичетлеҫҫĕ[3]. «Красная Чувашия» «Смотр тĕллевĕ — ҫуракине епле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесси» умстатья ҫырса кăларать[4]. «Парти ертсе пынипе батраксемпе чухăнсем тата вăтам хресченсем большевикла ҫуракине класс кĕрешĕвĕ ҫивĕчленнĕ условисенче кĕтсе илеҫҫĕ. Ҫуракине ăнăҫлă ирттерме чăрмантарас, пĕрлешӳллĕ хуҫалăха кĕнисен шутне иксĕлтес, колхозсен производство планĕ-

---

[2] Ермилов В., Магид А. 60 рейдов: Опыт работы ударных бригад «Правды». М., 1930, с. 9—10.

[3] Положение о смотре готовности и проведения сева. — Красная Чувашия, 1930, 24 марта.

[4] Смотр — боевая проверка нашей готоности к севу.—Там же.

сене тултарассине путлантарас тĕллевпе кулаксем темĕн те тăваççĕ. Класс тăшманĕ çавăн пек урса кайса тапăннă вăхăтра батраксен, чухăнсен тата вăтам хресченсен речĕсене никам аркатайми çирĕп пĕтĕçтермелле», — тенĕ унта. Кунсăр пуçне, хаçат ĕçялкорсене, колхозник-активистсене чĕнсе каланине пичетлет, вĕсене смотра хастарлăн хутшăнма сĕнет. Çав çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче вара пичет органĕ смотра хаçатсемпе, ĕçялкорсен кружокĕсемпе тата уйрăм корреспондентсемпе пĕрле пĕтĕм совет общественноçĕ — парти, комсомол, профсоюз организацийĕсем, советсем, коопераци, колхозсоюзсем тата ялпа хăш енчен те пулин çыхăннă мĕнпур органсем активлăн хутшăнмаллине аса илтерет.

Смотра область хаçачĕсем—«Канаш», «Пирĕн ял», «Красная Чувашия», «Çамрăк колхозник», район хаçачĕсемпе ялсенчи стена хаçачĕсем ирттереççĕ. Вĕсем ĕçялкорсен бригадисене кашни ялтах, кашни стена хаçачĕ çумĕнче йĕркелеççĕ. Çав бригадăсем, ĕçялкорсен кружокĕсем тата уйрăм ялкорсем пĕтĕм ĕçе тĕплĕн тишкереççĕ; лайăххи çинчен те, ситменлĕхсем çинчен те хаçатсен редакцийĕсене тата стена хаçачĕсен редколлегийĕсене çырса пĕлтереççĕ. Хаçатсенче çĕнĕ рубрикăсем çуралаççĕ: «Çурхи ака кампанине хатĕрленнин смотрĕ», «Большевикла çуракине хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр», «Хаçат бригадисем рапортлаççĕ» т. ыт. те. Смотр бригадисен материалĕсене ун чухне кашни номертех курма пулнă. Хаçат редакцийĕсем хĕрлĕ тата хура хăмасем тунă, унта лайăх ĕçлекенсемпе юлса пыраканнисене кĕртнĕ.

Элĕк районĕнчи комсомолецсем çурхи акана хатĕррине тĕрĕслеме «Çăмăл кавалери» отрячĕсем тунă. Ялкорсемпе пĕрле вĕсем кахалсемпе бюрократсене, чăрмав кӳрекенсене хăюллăн тăрă шыв çине кăларнă. «Çăмăл кавалери» отрячĕсен ĕçне пĕтĕмлетес шутпа районта ятарласа слет ирттернĕ[5]. Çавăн пек отрядсене ытти районсенче те йĕркеленĕ.

Çуракине хатĕрленессин смотрĕ епле пынине ВКП(б) Чăваш обкомĕн бюровĕ хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă, «Çуракине хатĕрленесси епле пыни çинчен» постановлени йышăннă[6]. Унта çурхи акана хатĕрленессине хăвăртлатасси, смотр епле пынине пичетре çутатасси пирки кирлĕ сĕнӳсем панă.

Хаçат редакцийĕсем ялкорсен бригадисене пур майсемпе те пулăшнă. Ĕç майĕсемпе паллаштарас шутпа канашлусем ирттернĕ, бригадăсен ĕç опытне çутатакан материалсем пичетленĕ. Çавăн пек материалсенчен пĕри—Улатăрти «За коллективизацию» хаçат бригади çинчен. Ку бригада районти çĕрĕç пайне «сасартăк» пырса тĕрĕслет, ун чухнехи пек кала-

---

[5] См.: Легкая кавалерия — на боевые участки посевного фронта. — Красная Чувашия, 1930, 13 апр.
[6] См.: там же, 10 апр.

сан, «налет» тăвать. «Тĕрĕслев теми — çĕрĕç пайĕ çуракине мĕнле хатĕрленнине палăртасси, — çырнă çав материалта.— Ĕçялкорсен бригади виçĕ çынтан тăрать, ăна редакци сотрудникĕ ертсе пырать. Малтан бригада канашлăвĕнче тĕрĕслевĕн пĕтĕмĕшле планне сӳтсе яваççĕ. Унтан бригада членĕсем камăн мĕн тăвасси пирки калаçса татăлаççĕ»[7]. Пĕри учреждени руководителĕпе тĕл пулса калаçать, тепри ялхуçалăх машинисен склачĕсене тĕрĕслет, виççĕмĕшĕ ĕç хучĕсемпе документсене тишкерет, учрежденире ĕçлекен активистсене хаçат валли материал çырма заданисем парать. Тĕрĕслев çĕрĕç пайĕн чылай çитменлĕхĕсене тупса палăртать.

Çуракине хатĕрленнин тата ăна ирттернин смотрĕ республикăра июлĕн 1-мĕшĕччен пынă. Унта ĕçялкорсем, коммунистсемпе комсомолецсем, профсоюз членĕсем, активлă колхозниксемпе ялхуçалăх специалисчĕсем йышлăн хутшăннă. Кашни ялта тенĕ пекех тĕрĕслев ирттернĕ. Çав тĕрĕслев чăннипех те массăллă пулнă. Смотр вăхăтĕнче уйрăмах активлăх кăтартнăшăн, ку е тепĕр колхозпа çĕр обществи ĕçне пичетре лайăх çутатнăшăн ялкорсен бригадисемпе кружокĕсене, уйрăм корреспондентсене премисем панă.

Пичет органĕсем хуçалăхпа культура строительствин ыйтăвĕсемпе смотрсем ирттересси вăтăрмĕш çулсенче сарăлсах пырать. Çакăнпа пĕрлех вĕсем поход-тревогăсем йĕркелеççĕ. Тĕслĕхрен, «Красная Чувашия» тата «Канаш» хаçатсем 1931 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче ĕçялкорсен пĕр кунлăх поход-тревогине ирттереççĕ. Çав кун вĕсем промфинплан мĕнле пурнăçланнине, вăрман касса турттарас тата çуракине хатĕрленес ĕçсем епле пынине тĕрĕслеççĕ. Поход-тревога ирттересси çинчен хаçатсем ĕçялкорсене вунă кун малтан пĕлтернĕ, çакă вара тĕплĕн хатĕрленме тата ĕççыннисене йышлăн явăçтарма май панă. Ун чухнехи поход-тревога хăйĕн тĕллевĕсемпе тата камсене хутшăнтарнипе ĕçялкорсен хальхи массăллă рейчĕсене аса илтерет.

Пирĕн çĕршывра малтанхи рейдсене Харьковри рабкорсем 1928 çулта ирттернĕ. Вĕсен пуçарăвĕ Чăваш республикинче те анлăн сарăлать. «Рейд» сăмах (ун чухне ăна кавычкăна илсе çырнă) «Красная Чувашия» хаçатăн 1931 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнчи номерĕнче пĕрремĕш хут тĕл пулать, çавăн хыççăн вара ку сăмаха хаçат полосисенче пĕрмаях асăрхатпăр. Партипе совет пичечĕн активисчĕсен Пĕтĕм Союзри пиллĕкмĕш канашлăвĕ умĕн «Нижегородская коммуна» хаçат редакцийĕ продукци пахалăхĕшĕн кĕрешме икĕ вунăкунлăх ирттерет. Çакна курса, «Канашпа» «Красная Чувашия» февралĕн 10-мĕшĕпе мартăн 10-мĕшĕ хушшинче Чăваш АССР

[7] Опыт работы Алатырской колхозной газеты «За коллективизацию». Красная Чувашия, 1930, 5 мая.

предприятийёсенче пахалăхшăн поход йёркелесси çинчен пĕлтереççĕ. Хаçатсем пичетлесе кăларнă план тăрăх февралĕн 10-мĕшĕнче пур предприятисенче те рабкорсен слечĕсене пухаççĕ. Унта предприяти директорĕ коллектив ĕçĕнчи пахалăх кăтартăвĕсем çинчен каласа парать. Кунсăр пуçне рабкорсем пахалăхшăн кĕрешекен ударлă бригадăсен ĕç опычĕпе паллашаççĕ. Кунтах рабкорсен ударлă бригадисене йĕркелеççĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче çав бригадăсем пĕрремĕш рейд ирттереççĕ: промфинплан çинчен, продукци пахалăхне ӳстерессипе мĕн тумалли çинчен рабочисене ăнлантарса панине тĕрĕслеççĕ. Февралĕн 17-мĕшĕнче рабкорсем иккĕмĕш рейда тухаççĕ: обществăлла организацисем пахалăхшăн кĕрешнине, çав ĕçе рабочисем епле хутшăннине тишкереççĕ. Февралĕн 20-мĕшĕнче вара рабкорсен ударлă бригадисем тĕрĕслеве пĕр-пĕрин предприятине каяççĕ: шупашкартисем—шупашкартисенех, Çĕмĕрлери «Большевик» комбинатпа Вăрнарти фосфорит арманĕ, Сĕнтĕрвăрринчи эрех завочĕпе Ивановăри кирпĕч завочĕ пĕр-пĕрне тĕрĕслеççĕ. Çапла йĕркеленĕ рабкорсен малтанхи массăллă рейчĕсене.

Пирвайхи вăхăтра ĕçялкорсем рейд материалĕн уйрăмлăхĕсене ăнланса çитерейменни те пулнă, иккĕн-виççĕн алă пуснă кирек мĕнле информацие те рейд материалĕ пек кăтартма пăхнă. Пĕр тĕслĕх:

«Штанаш, мартăн 8-мĕшĕ (телефонпа). Штанаш ял Советĕнче пилĕкçуллăх заемне палăртнă цифрăран ирттерсе сарнă...

«Красная Чувашия» ялкорĕсен посчĕсене йĕркелеме тытăнтăмăр, унта хĕрсене чылай явăçтаратпăр.

Тури Вылăна буксира илтĕмĕр, унта массăллă ĕçе сарса ятăмăр.

«Красная Чувашия» ялкорĕсен рейчĕ: Ив. Кириллов, А. Смирнова тата Н. Гаврилов»[8].

Ку вăл виçĕ автор алă пуснă заметка çеç пулни куç умĕнчех. Çакăн пек йăнăшсенчен ĕçялкорсем часах хăтăлаççĕ, рейдсене мĕнле ирттермеллине те лайăх пĕлсе çитеççĕ. Партипе правительство вĕсен пархатарлă ĕçне тĕрĕс çулпа яма мĕн кирлине пурне те тăваççĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1931 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче «Ĕçялкорсен юхăмне çĕнĕлле йĕркелесси çинчен» постановлени йышăннă. «Эхер ĕçялкорсен юхăмĕн пĕрремĕш тапхăрĕнче ĕçялкорсен тĕп задачи механизмăн «вак» çитменлĕхĕсене тупса палăртасси тата тăрă шыв çине кăларасси пулнă пулсан, халĕхи тапхăрта вара ĕçялкорсен социализм строительствин пысăк ыйтăвĕсене пурне те тарăннăн тишкермелле, çитменлĕхсене тĕрлĕ енчен уçса кăтартмалла, социализм строительствинчи ӳсĕмсен

[8] Красная Чувашия, 1931, 12 марта.

чи лайӑх енӗсене, унӑн мӗнпур участокӗсенчен, агрегатран, уйрӑмран, цехран, заводран, трестран тата ытти ҫӗртен илсе ҫутатмалла»,— тенӗ унта[9]. Постановленире массӑллӑ ӗҫӗн ҫӗнӗ формисемпе, ҫав шутра рейдсемпе анлӑн усӑ курма хушнӑ.

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн постановленийӗ ӗҫялкорсене ҫӗнӗ вӑй панӑ. «Правда» хаҫат, пичет ударникӗсемпе РКИ активне хутшӑнтарса, 1932 ҫулхи августӑн 15-мӗшӗнчен пуҫласа сентябрӗн 1-мӗшӗччен Чӑваш АССРӗнчи рабочисемпе колхозниксен ҫырӑвӗсем тӑрӑх мӗнле мерӑсем йышӑннине тӗрӗслеме рейд ирттернӗ. РКИ активне тата Шупашкарти журналистсене Канаш, Вӑрнар, Шӑмӑршӑ, Шупашкар, Пӑрачкав тата Куславкка районӗсенче тухса тӑракан хаҫат редакцийӗсене пулӑшма янӑ. Ӗҫҫыннисен ҫырӑвӗсемпе ӗҫлесси мӗнле пулса пынине тӗрӗслеме рейдсем пур районсенче те ирттернӗ. Ҫавӑн пекех ӗҫялкорсем республикӑри ҫӗнӗ стройкӑсенче, обществӑлла апатлану предприятийӗсенче пысӑк активлӑх кӑтартнӑ. Унтанпа паянхи кунччено пичет активисчӗсен рейд бригадисене хуҫалӑхпа культура строительствин пур участокӗсенче те куратпӑр. Массӑллӑ ӗҫӗн ку формине пичет, телевиденипе радио халӗ те пысӑка хурса хаклаҫҫӗ. Малтанхи пилӗкҫуллӑхсенчи ӗҫ опытне ӗҫялкорсем паян та аса илеҫҫӗ, унта мӗн пахи пур — ҫавӑнпа хӗпӗртесех усӑ кураҫҫӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗ 1960 ҫулхи июнӗн 28-мӗшӗнче «Совет пичетӗнче тата радиора обществӑлла йӗркепе ӗҫлессине малалла аталантарасси ҫинчен» постановлени йышӑннӑ. Рабочисемпе колхозниксене, интеллигенцие ҫак ӗҫе активлӑ хутшӑнтарни пичетпе радио ӗҫне лайӑхлатмалли паха май пулнине палӑртнӑ унта. Пичетпе радио ирттерекен массӑллӑ ӗҫсене, ҫав шутра пичет активисчӗсен рейчӗсене рабочисемпе колхозниксем, специалистсем кӑмӑл туртнипе, чӗре хушнипе хутшӑнаҫҫӗ. Асӑннӑ постановленире ҫакна ырланӑ, обществӑлла йӗркепе ӗҫлессине малалла аталантарма палӑртнӑ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗ «Районти хаҫатсен ӗҫҫыннисене коммунизмла воспитани парас ӗҫри пӗлтерӗшне ӳстересси ҫинчен» 1968 ҫулхи сентябрьте йышӑннӑ постановленире те хаҫат редакцийӗсене «авторсен активӗпе ӗҫлессине лайӑхлатма, рабочи корреспондентсемпе тата ялти корреспондентсемпе тытакан ҫыхӑнусене ҫирӗплетмешкӗн мерӑсем йышӑнма, вӗсене массӑллӑ рейдсене, общественность ирте-

[9] В кн.: Советская печать в документах. М., 1961, с. 186—187.

рекен смотрсене, колхозсем, совхозсем пĕр-пĕрне тĕрĕслес ĕçе активлă хутшăнтарма» хушнă[10].

Ĕçялкорсем хальхи вăхăтра ирттерекен рейдсен темисем анлăрах та кăткăсрах, вĕсем совет халăхĕн коммунизм строительствин паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе тӳреммĕн çыхăннă. Хальхи кунсен историйĕ кăларса тăратакан çивĕч темăсене суйласа илни рейд бригади ĕçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Массăллă ĕçĕн ăнăçлăхĕ çакăнтан нумай килет. Тема обществăшăн, производствăшăн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ, ĕççыннисем пичет активисчĕсене çавăн чухлĕ хĕрӳллĕрех пулăшаççĕ. Паха тема тупмашкăн çĕннине, халь çуралаканнине асăрхаса тăмалла; киввине, чăрмав кӳрекеннине парăнтарса, малалла ăнтăлаканнине, вăй илсе, аталанса пыраканнине курмалла.

Рейдсен темисене маларахах планлани кирлĕ. Республикăри, районти тата нумай тиражлă хаçатсенчен ытларахăшĕ вĕсене редакцин пĕтĕмĕшле планĕсенче палăртаççĕ. Ку ăнланмалла ĕнтĕ. Рейдсен те, хаçат усă куракан ытти майсен те тĕллевĕ пĕрре — халăха коммунизм тума пулăшасси. Рейдсене кирлĕ пек хатĕрленсе ирттересси, вĕсен витĕмлĕхĕшĕн тăрăшасси — редакци туса пыракан кăткăс ĕçĕн уйрăлми пайĕ, рейдсен темисем вара çав тапхăрта партипе совет тата хуçалăх органĕсем умĕнче тăракан задачăсенчен тухса тăраççĕ. Çапла вара, рейд — вăрăм сăнчăрăн пĕр сыпăкĕ. Эппин вĕсене пĕтĕмĕшле плана кĕртни вырăнлă.

Хаçат редакцийĕн пĕтĕмĕшле ĕç планне час-часах пĕчĕк кĕнеке евĕрлĕ е уйрăм листан типографире пичетлесе кăлараççĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ çавнашкал кĕнекесенчен пĕрне 1967 çулта, «Корреспондентсене пĕлсе тăма (Редакци ĕç планĕнчен)» ятпа пичетлесе кăларчĕ, ăна хайĕн корреспонденчĕсене ярса пачĕ. Брошюрăна кăларнин тĕллевĕ рабочи корреспондентсемпе ялти корреспондентсене пичет умĕнчи задачăсене татса пама активлăн хутшăнтарасси пулчĕ. «Ку вăл çывăх вăхăтра çырмалли хăшпĕр материалсен тематики, — тесе асăрхаттарать редакци. — Паллах ĕнтĕ, ку тематикăри хăшпĕр ыйтусемпе пĕр вырăнта статья çырма пулать, тепĕр вырăнта çырма май килмест. Корреспондентсенчен чылайăшĕ эпир сĕннĕ ыйтусене тишкернĕ май пачах çĕнĕ те интереслĕ ыйтусем хускатма пултарĕç»[11].

Рейдсен темисем пирки те çакнах каламалла. Редакци ĕç планĕнчи ыйтусемпе хăшпĕр çĕрте рейд ирттерни вырăнлă, тепĕр çĕрте уйрăм корреспондент хăй тĕллĕн материал çырса яни те çителĕклĕ. Тема пысăк пĕлтерĕшлĕ пулсан, ăна тĕплĕн

[10] В кн.: В. И. Ленин, КПСС о печати: Сборник документов и материалов. М., 1970, с. 152.

[11] Корреспондентсене пĕлсе тăма (Редакци ĕç планĕнчен).—Шупашкар, 1967, 9 с.

те анлăн тĕпчеме тата темиçе автор авторитечĕпе çутатма шутласан, рейд irттерни пысăк усă кӳрет.

Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцийĕ 1983—1985 çулсем валли перспективлă ĕç планĕ туса хатĕрленĕ, унта организациллĕ ĕçсемпе хаçат материалĕсен темисене виçĕ çуллăха палăртнă. Ĕçялкорсен рейчĕсене хăш ыйтусемпе ирттермеллине те палăртнă. Планра çакăн пек пунктсем пуррине куратпăр:

Социализмла обязательствăсене пурнăçланине тĕрĕслетпĕр (рейд материалĕсем тата ытти материалсем—уйăхра 2—3 хут).

Строительство — пилĕкçуллăхăн ударлă фрончĕ. Ĕçе кĕртмелли объектсенче. Рейд корреспонденцийĕсем тата ытти материалсем — уйăхра пĕрререн кая мар.

Хирти ĕçсем тума ялхуçалăх техникине тĕплĕн хатĕрлесси (рейдсем, информацисем, корреспонденцисем).

Хире — удобренисем (рейдсем, информацисем, корреспонденцисем).

Паха вăрлăх кăна акмалла (рейдсем, информацисем, корреспонденцисем).

Фермăсенчи хĕл (уйăхра 3—4 хут — рейдсем, корреспонденцисем, информацисем).

Çурхи кун çулталăк тăрантарать. Уй-хирти çурхи ĕçсем, механизаторсен ăмăртăвĕ çинчен (тĕрленчĕксем, репортажсем, рейд материалĕсем).

Хăвăрт та тăккаламасăр пухса кĕртер! (Репортажсем, корреспонденцисем, рейд материалĕсем).

Фермăсемпе комплекссем хĕле хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр (корреспонденцисем, рейд материалĕсем).

Ялти стройкăсенче (тĕрленчĕксем, рейд материалĕсем).

Улăх-çарансенче (корреспонденцисем, статьясем, рейд материалĕсем).

Апат рационĕ тата продукци хăйхаклăхĕ (статьясем, корреспонденцисем, рейд материалĕсем)» т. ыт. те.

«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцийĕ уйăхлăх тата эрнелĕх тăвакан оперативлă ĕç планĕсенче хăш темăпа хăш рейда камсем, хăçан тата ăçта ирттермеллине конкретлă палăртать, пурнăç кăларса тăратнă темăсене хушса хурать. Перспективлă ĕç планне редакци ятарласа типографире пичетлет, ăна авторсене пурне те ярса парать. Оперативлă ĕç планĕсем çинчен те редакци ĕçялкорсене вăхăтра пĕлтерсе тăрать.

Редакци ĕçне пĕтĕмĕшле планласси пекех, рейдсене планласси — коллектив ĕçĕ. Юлашки çулсенче рейдсен пĕлтерĕшĕ пысăкланнăран, темисем палăрмаллах анлăланнăран, ку ĕçе редакцин пур пайĕсем те хутшăнаççĕ. Патăрьел районĕнчи «Авангард» хаçат редакцийĕ, пайсен планĕсене никĕсе хурса, малтан квартал валли перспективлă пĕтĕмĕшле план,

çавăн тăрăх уйăх валли оперативлă пĕтĕмĕшле план туса хатĕрлет. Çав пĕтĕмĕшле плансенче иккĕшĕнче те «Редакцин массăллă ĕçĕ» уйрăм, ку уйрăмра «Ĕçялкорсен рейчĕсем» пай пур.

Пĕтĕмĕшле планра ытти редакцисем ялан тенĕ пекех редакцире мĕнле пайсем пур, çавăн пек уйрăмсем тăваççĕ. Ĕçялкорсен рейчĕсене вара редакци пайĕсем епле сĕннĕ, çавăн пек, кашни уйрăм тăрăх сапаласа тараççĕ. Пирĕн шутпа, патăръелсен варианчĕ лайăхрах, мĕншĕн тесен вăл редакцин мĕнпур массăллă ĕçне, çав шутра ĕçялкорсен рейчĕсене те пĕр вырăна пĕрлештерет. Ун тăрăх плана епле пурнăçланине тĕрĕслесе тăма та ансатрах.

Патăръел район хаçачĕн ĕç планĕнче çак ыйтусене куратпăр: 1. Рейд теми; 2. Тĕрĕслемелли объектсем; 3. Рейда редакцин хăш пайĕ, хăш журналист йĕркелени; 4. Рейд бригадине камсене кĕртме шутлани; 5. Тĕрĕслеве тухма палăртнă вăхăт; 6. Пурнăçа кĕртнине паллă туни; 7. Рейд материалĕ тăрăх ответ килни, ăна хаçатра пичетлени.

Вăхăт тапхăрĕсем тăрăх кварталлăха, уйăхлăха, эрнелĕхе хатĕрлекен пĕтĕмĕшле плансăр пуçне, хаçат редакцийĕсем политикăпа хуçалăх кампанийĕсене хатĕрленсе ирттерме ятарласа плансем тăваççĕ. Çав плансен хăшпĕр темисем — предприятисенче перекетлĕхшĕн кĕрешни, çуракине тивĕçлĕ хатĕрленӳпе ирттересси, ĕççи тапхăрĕ, культурăпа çутĕç учрежденийĕсен смотрĕ т. ыт. те. Ку плансенче те ĕçялкорсен рейчĕсене ятарлă уйрăмра кăтартни вырăнлăрах.

Политикăпа хуçалăх кампанийĕ вăхăтĕнче рейдсем йĕркелеме уйрăм план тума пулать. Акă, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн советсен ĕçĕпе йăла тата информаци пайĕсем «Çу кунĕсем çитеççĕ. Эсир хатĕр-и?» темăпа 1968 çулхи çуркунне рейдсем ирттермелли план тунă. Ку планпа пурĕ 7 рейд ирттерме палăртнă. Вĕсен темисем: «Спорт обществисем çуллахи сезона хатĕрленни», «Çуллахи спорт хатĕрĕсем туса кăларасси тата сутасси», «Шыв спорчĕ çĕнĕ сезон умĕн», «Пионер лагерĕсенчи хатĕрленӳ», «Шупашкарти парксене епле хатĕрлеççĕ?», «Суту-илӳ тата обществăлла апатланӳ предприятийĕсем çуллана хатĕр-и?», «Туризм енĕпе ĕç мĕнле тăрать?»

«Пионер лагерĕсенчи хатĕрленӳ» темăпа ирттермелли рейд планĕнче çаксене кăтартнă: «Рейда хутшăнакансем: И. М. Алтын-Баш, Т. Афанасьева, Г. Желтухин, Г. Дашкова.

Объектсем: Атăл хĕрринчи пионер лагерĕсем; ВЛКСМ обкомĕн шкул çамрăкĕсен тата пионерсен пайĕ; электроаппаратура заводĕнчи, çыхăнăвăн производствăпа техника управленийĕнчи, В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕнчи профсоюз комитечĕсем; облпрофсовет.

Тĕрĕслемелли ыйтусем: 1. Пионер лагерĕсен çурт-йĕрне юсанă-и? 2. Çулсене йĕркене кĕртеççĕ-и? 3. Лагерьсен территорийĕсене хатĕрлеççĕ-и? 4. Инвентарь тата сĕтел-пукан çителĕклĕ-и? Музыка инструменчĕсем, спорт хатĕрĕсем пур-и? 5. Кадрсем кирлĕ чухлĕ суйласа илнĕ-и? 6. Лагерьсене пысăклатма, çĕннисене тума шутлаççĕ-и? 7. Иртнĕ çулхи çитменлĕхсенчен мĕнле пĕтĕмлетӳсем тунă?»

Паллах, плана тĕплĕн туса хатĕрлени, унта бригада членĕсене, объектсене, тĕрĕслемелли ыйтусене кăтартни рейда ăнăçлăн ирттерме май парать. Перспективлă тата оперативлă плансем туса хатĕрленĕ чухне хаçат редакцийĕ партипе совет органĕсемпе, агропромышленность пĕрлешĕвĕн совечĕпе тачă çыхăну тытмалла, хăш ыйтусемпе рейдсем ирттересси пирки те вĕсемпе канашламалла. Халăх контроль комитечĕн тата «Комсомол прожекторĕ» штабĕн ĕç планĕсене шута илни пĕрлехи рейдсене планлама май парать.

Паллă журналист П. Рогозинский çапла çырнă: «Репортерăн пушар патне вăл сиксе тухиччен вунă минут маларах çитмелле, шӳтлеççĕ американецсем. Çакăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур. Хаçатçă пурнăç уттинчен юлмалла мар, пулăмсене пурне те курса тăмалла, вĕсенчен маларах пымалла, унтан та ытларах, çул кăтартмалла»[12]. Опытлă журналист сĕнĕвне рейдсен планне тунă чухне те асрах тытас пулать. Редакцин паянхине шута илнипе лăпланса лармалла мар, ыранхине, çитес уйăхрине, килес çулхине курса тăмалла. Çакă рейдсен темисене тĕрĕс палăртма пулăшать. Планланă чухне рейдсене тăтăш ирттерме кирлине асра тытмалла. Тепĕр чухне рейд материалĕ пĕр номертех иккĕ-виççĕ пичетленет, ун хыççăн вара темиçе номер çав материалсăр тухать. Ку пĕртте килĕшӳллĕ мар. Пурнăç плана час-часах улшăнусем кĕртме хистет: кивелнĕ темăсене кăларса пăрахтарать, çĕнĕ интереслĕ темăсене хуштарать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Район хаçачĕсене лайăхлатмалли майсем çинчен» 1952 çулхи январĕн 24-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, редакци ĕç планне парти комитечĕсем пăхса тухса çирĕплетеççĕ. «Район хаçачĕсене ертсе пырассине вăйлатас тĕллевпе ВКП(б) райкомĕсем редакцисен ĕç планĕсене тăтăшах пăхса тухмалла...»,—тенĕ унта[13]. Ĕçялкорсен массăллă рейчĕсен планне те партин тивĕçлĕ комитечĕсем пăхса тухса çирĕплетеççĕ.

Рейд бригадисем умĕнчи тĕллевсем ответлă та пысăк. Астăватпăр-ха, 1966 çулта район хаçачĕсен редакторĕсен республикăри семинарĕнче Канашри пĕрлештернĕ «Коммунизм-

---

[12] Рогозинский П. Журналист в командировке: Заметки корреспондента. М., 1961, с. 5.

[13] Советская печать в документах. М., 1961, с. 274.

шăн» хаçатăн ун чухнехи редакторĕ С. М. Михайлов массăллă рейдсем çинчен доклад туса пачĕ. «Сирĕн рейд бригадисем хальхи вăхăтра мĕн тăваççĕ?» — ыйтрĕç унран. Хуравĕ вара кĕске те уçăмлă пулчĕ: «Çĕнĕ пилĕк çуллăх плана ăнăçлăн тултарассишĕн кĕрешеççĕ». Чăнах та, пилĕкçуллăха пурнăçлассипе мĕн кăна çыхăннă, çавă пур корреспондентсене те шухăшлаттарать, пăшăрхантарать. Рабкорсем кашни цехра, кашни бригадăра пур. Ялкорсем кашни колхозпа совхозра, кашни ялта тата фермăра вăй хураççĕ. Аçта ĕç епле пыни, халăх пурлăхне упрани е хуçасăрла хăтланни мĕн тесен те вĕсене лайăххах курăнать. Рейд йĕркелеме вĕсем сĕнекен темăсем чи малтанах пилĕкçуллăх заданийĕсене пурнăçа кĕртессипе çыхăннă.

Рейд бригадисем нимрен малтан социализмла ăмăртăва ячĕшĕн мар, чăнласа йĕркелесшĕн. Акă, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Звезда» тата «Эльбарусовский» совхозсем — кӳршĕсем. «Урхас-кушкăсемпе хуракассисем кăçал та ăмăртса ĕçлеме килĕшнĕ, — вулатпăр «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Чăвашрадиопа пĕрле иртернĕ рейд корреспонденцийĕнче. — Анчах çак ăмăрту икĕ совхоза малалла аталантарма пулăшакан чăн-чăн вăй пулса тăрайман-ха. Кӳршĕсен делегачĕсем пĕр-пĕрин патĕнче хăçан пулнине те манса кайнă. Сăмах май каласан, кăçал çураки умĕн те, калчасене тĕрĕслесе йышăннă чухне те ăмăртакан хуçалăхсен руководителĕсемпе специалистсем пĕр-пĕрин патне кайма ерçӳ тупайман»[14].

Çав вăхăтрах кӳршĕ кӳршĕрен вăренмелли çук мар. Тĕслĕхрен, выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе «Эльбарусовский» совхозран чылай вĕренме пулать. Ку совхоз директорĕн выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе ĕçлекен заместитель пур, «Звезда» совхозра вара унашкалли çук. «Эльбарусовский» совхозра техникăна упрас, ăна тухăçлă ĕçлеттерес енĕпе кӳршĕсемшĕн усăлли сахал мар. Рейд бригади «Звезда» совхозра та паха опыт пайтах пуррине палăртать. Акă, ку хуçалăхра çырмаçатрасенче 20 пĕве тунă, 297 гектар çарансене, 52 гектар хăмла пахчисене шăвараççĕ.

Рейд бригадин материалĕ вулакана çакăн пек шухăш патне илсе пырать: социализмла ăмăртура формализм пулмалла мар; ăмăртакансем пĕр-пĕринчен вĕренмелле, пĕр-пĕрне пулăшмалла.

Ĕçялкорсен бригадисем социализмла ăмăртăва епле йĕркеленине тата вăл мĕнле пынине тĕрĕслесех тăмалла. «Ăмăртăвăн ĕç тухăçлăхне, ĕç укçипе танлаштарсан, хăвăртрах ӳстерме, халăха кирлĕ таварсем нумайрах туса кăларма, вĕсен пахалăхне лайăхлатма пулăшмалла», — тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Социализмла ăмăртăва йĕркелес ĕçе, унăн

---

[14] Айккинче тăни килĕшмест. — Коммунизм ялавĕ, 1983, майăн 27-мĕшĕ.

итогĕсене пĕтĕмлетмелли, ăмăрту çĕнтерӳçисене хавхалантармалли практикăна лайăхлатасси çинчен» 1983 çулта йышăннă постановленире[15]. Рейдсем вăхăтĕнче ăмăрту итогĕсене епле пăхса тухнипе интересленмелле: çакă ĕçлĕ лару-тăрура пулса иртет-и, ку ĕçе ĕççыннисене активлă хутшăнтараççĕ-и? Ăмăртура мала тухнă çынсемпе коллективсене хавхалантарма тĕрлĕ формăсемпе усă кураççĕ-и?

КПСС обкомĕпе Чăваш АССР Министрсен Совечĕ 1983 çулхи мартăн 21-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 11-мĕшĕччен колхозсем, совхозсем, Госкомсельхозтехника предприятийĕсемпе организацийĕсем, республикăри «Чувашсельхозхимия» пĕрлешӳ çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр ирттерме йышăнчĕç. Республика тата район хаçачĕсен редакцийĕсене, Чăваш АССР телевиденипе радиовещани государство комитетне обществăлла смотр мĕнле пынине анлăн çутатма, колхозсемпе совхозсенче, ялхуçалăх ытти предприятийĕсенче рейдсем ирттерме хушрĕç. Çакăн хыççăн «Коммунизм ялавĕ» «Çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр пырать», «Советская Чувашия» «Смотр готовности к весеннему севу» рубрикăсем турĕç, çине-çинех рейд материалĕсем пичетлерĕç.

Кăçалхи июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕшĕччен республикăра тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр пычĕ. Вăл икĕ тапхăрпа— малтан колхозсемпе совхозсенче, унтан — ăмăртакан районсенче иртрĕ. Ăна Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви, «Чувашплодоовощхоз» производство пĕрлешĕвĕ, «Тырпул продукчĕсен управленийĕ», «Птицепром» трест, халăх депутачĕсен вырăнти Совечĕсен ĕçтăвкомĕсем йĕркелерĕç. Республика тата район хаçачĕсен редакцийĕсем, телевиденипе радиовещани государство комитечĕ обществăлла смотр мĕнле пынине анлăн çутатрĕç, колхозсемпе совхозсем тата ытти ялхуçалăх предприятийĕсем ĕççине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли рейдсем ирттерчĕç. Çавăн пек рейдсенчен пĕрне «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕпе Чăвашрадио Шăмăршă районĕнче йĕркелерĕç. Рейд бригадин корреспонденцийĕ «Тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр» рубрикăпа пичетленсе тухрĕ[16]. Ун хыççăн рейд бригадин материалĕсене июнĕн 24-мĕшĕнче — «Кая юлсан, йывăр килĕ», июнĕн 25-мĕшĕнче — «Сводкăна ĕненес пулсан», июнĕн 26-мĕшĕнче «Халлĕхе васкамаççĕ-ха» ятсемпе çапса кăларчĕç. Обществăлла смотр рубрики хаçатра ĕççи пуçланиччченех çухалмарĕ.

---

[15] Коммунизм ялавĕ, 1983, сент. 30-мĕшĕ.

[16] Патне çитсен — ĕлкĕреймĕн. — Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 21-мĕшĕ.

Республикăра тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр ирттерни пысăк усă кÿчĕ. Колхозсемпе совхозсенче тата ытти ялхуçалăх предприятийĕсенче 1983 çулхи ĕççине хатĕрленесси хăвăртланчĕ. Тĕштырă комбайнĕсемпе транспорт хатĕрĕсене тата тырă тасатмалли-типĕтмелли агрегатсене чылай хуçалăхсенче вăхăтра тата тĕплĕн юсарĕç. Смотр вăхăтĕнче ĕççи планĕсене, машинăсен ĕç графикĕсене, социализмла ăмăрту условийĕсене туса çирĕплетрĕç. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра çынсене мораль тĕлĕшĕнчен тата пурлăхпа хавхалантармалли йĕркене çĕнĕрен пăхса тухрĕç, çав йĕркепе ĕççине хутшăнакансене пурне те паллаштарчĕç. Тĕплĕ хатĕрленӳ тырпула ăнăçлă пухса кĕртме май пачĕ.

Парти комитетĕнче сӳтсе явнă хыççăн тивĕçлĕ хуçалăхсемпе организацисем епле ĕçленине палăртас тĕллевпе хаçатсем, телевиденипе радио ĕçялкорсен рейчĕсене ирттересси йăлана кĕрсе пырать. Сăмахран, КПСС обком бюровĕн анлă ларăвĕнче республикăра тата уйрăм районсенче выльăх апачĕ хатĕрлесси епле пыни çинчен ыйту пăхса тухнă, Канаш районĕнче çакна япăх йĕркеленине палăртнă. Çавăн хыççăн пĕр-ик эрнерен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ районти хуçалăхсенче выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе мĕнле улшăнусем тунине тĕрĕслет. Рейд бригади «Канаш», Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен колхозсенче, «Канашский» совхозра тата ытти хуçалăхсенче пулать. Кунта пĕрисем йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене çине тăрса шыраççĕ, теприсем апат сахал хатĕрленин сăлтавне пĕрмаях йĕпе-сапа çине йăвантараççĕ. Хаçат корреспонденчĕсем хăйсем мĕн курнине «Çаплах васкамаççĕ» корреспонденцире тĕплĕн каласа параççĕ[17]. «Канаш район руководителĕсем курăксене июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне çулса пĕтерме, апат хатĕрлессине хăвăртлатма, унăн пахалăхне ӳстерме шантарнăччĕ. Июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне районта курăксен 73 процентне çеç çулса илнĕ, утă хатĕрлемелли плана 11,6 процент, сенаж хывмалли плана 81 процент кăна тултарнă»,— ӳпкелет канашсене рейд бригади, ĕçе лайăхлатмалли сĕнӳсем парать.

Тепĕр чухне рейд бригадисем хуçалăх руководителĕсен отчечĕсене тĕрĕслени те кирлĕ. Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăс ял Совечĕн сессийĕнче обществăлла выльăха хĕл каçарма хатĕрленни çинчен «Кубня» колхоз председателĕн отчетне итлесе сӳтсе яваççĕ. Отчет тăрăх ку ĕç япăх мар пырать, анчах чăннипе епле хатĕрленеççĕ-ши? Районти «Çĕнтерӳшĕн» хаçат корреспонденчĕсем çакна тĕрĕслесе пĕлме шут тытаççĕ.

---

[17] Коммунизм ялавĕ, 1983, июлĕн 19-мĕшĕ.



26971-чув.
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

«Фермăсем ялтан виçĕ çухрăмра, Кĕтне хĕрринчех. Акă, çĕр пуçа яхăн вырнаçмалăх ĕне вити. Стенасенчи шăтăксене ферма работникĕсем питĕрнĕ. Шалта таса, çутă, дезинфекци тунă. Пĕр сăмахпа каласан, хĕле хатĕр.

— Чăнахах сирĕн пурте лайăх иккен,— тетпĕр ферма заведующине Иван Кузьмич Сперлина.

— Эй, мĕн калаçатăр, — терĕ вăл пăшăрханса,— мĕнпурĕ те пĕр вите çеç хатĕр. Ыттисене хăçан хатĕрлесе çитересси куçпа пăхса та курăнмасть»[18].

Рейд бригади ферма заведующийĕн сăмахĕсем тĕрĕссине палăртать.

Производство планĕсемпе обязательствăсене пур енĕпе те пурнăça кĕртесси коллективра ĕç дисциплини епле пулнинчен нумай килет. КПСС Центральнăй Комитечĕн 1982 çулхи ноябрьти Пленумĕнче, çавăн пекех Мускаври станок тăвакансемпе тĕл пулнă вăхăтра Ю. В. Андропов юлташ çакна уçăмлăн палăртрĕ. Çавăнпа ĕнтĕ журналистсемпе ĕçялкорсем те ку ыйту çине тимлĕрех пăхма тытăнчĕç. «Коммунизм ялавĕн» рейд бригади Ю. Яргутов журналист ертсе пынипе Çĕмĕрлери автофургон комбинатĕнче ĕç дисциплини еплерех шайра тăнине тĕрĕсленĕ, ун çинчен «Малтисен малтах пуласчĕ» корреспонденци пичетлесе кăларнă (1983, февр. 19-мĕшĕ). Унта çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: «...Малта пыракан предприятире те ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлемелли пайтахха». Рейд бригади комбинатăн цехĕсенче ĕç дисциплини мĕнлине тимлĕн сăнанă, тишкернĕ, паха сĕнӳсем панă.

Рейдсен темисене чылай чухне ĕçялкорсем хăйсем сĕнеççĕ. Красноармейски районĕнчи ялхуçалăх управленийĕн госсельтехнадзор инженерĕ Г. Лукин, Хусанти «Вторцветмет» управленийĕн уполномоченнăйĕ М. Теплоухов «Ял пурнăçĕ» хаçат редакцийĕнче çапла пăшăрханса пĕлтернĕ: «Районăн кăçал 1.200 килограмм тĕслĕ металл пухса ăсатмалла. Çак шута алюмини, латунь, хура тăхлан кĕреççĕ. План пысăках мар, анчах паянхи куна хуçалăхсенчен государствăна тĕслĕ металл пĕр килограмм та паман».

Çакна пĕлсен, райхаçат редакцийĕ тимĕр-тăмăр хатĕрлес ыйтупа рейд ирттерме шут тытать, ĕçялкорсен бригадине йĕркелет, ăна конкретлă задани парать. Бригада «Звезда» колхозра тата «Красноармейский» совхозра çав ĕç епле пынине тĕрĕслет, 1982 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче «Тимĕр-тăмăра хакласчĕ» критика корреспонденцийĕ çырса кăларать.

Рейд теми час-часах хаçат редакцине пыракан çырусенчен тухса тăрать. Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ пир-авăр комбинатĕнчи нумай тиражлă «Текстильщик» хаçат редакцийĕ çыру илет: «Пир тĕртекен виççĕмĕш фабрикă-

[18] Сăмахпа ĕç уйрăлсан. — Çĕнтерӳшĕн (Йĕпреç), 1967, сент. 30-мĕшĕ.

ра 36-мӗш столовӑй филиалне уҫнӑранпа икӗ ҫул ҫитет. Анчах столовӑйра ӗҫлекенсем блюдӑсен пахалӑхне лайӑхлатасси, менюна пуянлатасси пирки пӗртте шутламаҫҫӗ, ахӑр. Сӑмахран, мартӑн 23-мӗшӗнче меню ҫакӑн пек пулчӗ: йӳҫ купӑста яшки, биточки ҫӗрулми нимӗрӗпе, компот. Буфетра вара канфет кӑна, вӑл та пулин хакли...»

Ҫак ҫыру айне 27 ҫын алӑ пуснӑ. Асӑннӑ столовӑй ҫинчен ырӑ мар хыпарсем унччен те килнӗ. Нумай тиражлӑ хаҫат редакцийӗ столовӑйра тата унӑн филиалӗнче рабкорсен рейдне ирттерет, ӑна «Сӑлтавсӑр мар ӳпкелеҫҫӗ» ятпа 1967 ҫулхи апрелӗн 5-мӗшӗнче пичетлесе кӑларать. Ҫыру йӗрӗпе ирттернӗ рейд столовӑй ӗҫне лайӑхлатма пулӑшать.

Рейд бригадисем умне пурнӑҫ хӑй куллен-кун ҫӗнӗ ыйтусем кӑлара-кӑлара тӑрататъ. Юлашки ҫулсенче ялти корреспондентсем эрозие хирӗҫ кӗрешессипе рейдсем ирттереҫҫӗ. Ҫавӑн пек рейдсенчен пӗрне «Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцийӗ Чӑваш АССР Ялхуҫалӑх министерствипе тата Шупашкар телестудийӗпе пӗрле Йӗпреҫ районӗнчи «Красный фронтовик», «Гвардеец» тата «Красный партизан» колхозсенче йӗркелерӗ. Рейд бригадин корреспонденцийӗ «Ҫӗр ҫинчи сурансем» ятпа пичетленчӗ[19].

Ҫапла вара рейд бригадисем хуҫалӑхпа культурӑн пайтах ыйтӑвӗсене татса пама пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем социализмла ӑмӑртӑва епле йӗркеленине тӗрӗслеҫҫӗ; обществӑлла смотрсене хутшӑнаҫҫӗ; парти комитетӗнче сӳтсе явса палӑртнӑ мерӑсене тивӗҫлӗ хуҫалӑхсемпе организацисем мӗнле пурнӑҫланине, хуҫалӑх руководителӗсен отчечӗсене тишкереҫҫӗ; производство коллективӗсенче ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме вӑй хураҫҫӗ т. ыт. те. Рейд темисене редакци ӗҫ планӗнче палӑртаҫҫӗ. Ӑна туса хатӗрленӗ чухне парти комитечӗн, халӑх контроль комитечӗн, «Комсомол прожекторӗ» штабӗн ӗҫ планӗсене шута илеҫҫӗ. Ҫакна манма кирлӗ мар: пурнӑҫ ҫӗнӗ ыйтусем кӑларса тӑратнине, ӗҫялкорсен сӗнӗвӗсене тата редакцие пыракан ҫырусенче хускатнӑ ыйтусене шута илсе, редакцин ӗҫ планне улшӑнусем кӗртме тивет.

Ӑнланмалла ӗнтӗ, кашни пичет органӗн хӑйне уйрӑм тӗллевсем пур. Ҫакна май вӗсем ирттерекен рейдсен темисем те урӑхларах. Тӗслӗхрен, ВЛКСМ обкомӗн органӗ «Молодой коммунист» хаҫат «Комсомол прожекторӗн» облаҫри штабӗпе пӗрле хуҫалӑхпа культура строительствинче комсомолецсемпе ҫамрӑксем епле ӗҫленине тӗрӗслет. Кӑҫал хаҫат корреспонденчӗсем шкултан вӗренсе тухнисене ӗҫе вырнаҫтарма пулӑшас, ҫамрӑксен вӗренӗвӗпе канӑвне лайӑх йӗркелес тӗллевсемпе рейдсем ирттерчӗҫ т. ыт. те. Ачасен хаҫатне «Пионер сассине» урӑх ыйтусем шухӑшлаттараҫҫӗ. Ӑна вӗренӳ

---

[19] Коммунизм ялавӗ, 1983, окт. 13-мӗшӗ.

пахалăхĕ, ачасем уроксене епле çӳрени, шкул тулашĕнчи ĕç, пионерсем çитĕннисене пулăшни кăсăклантараççĕ. «Çăкăр — чи кирлĕ апат-çимĕç» — çак темăпа ирттернĕ пĕр рейда Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуçĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкул столовăйĕнче.

Рейд бригадисем пысăк пĕлтерĕшлĕ пур ыйтусемпе те тĕрĕслевсем тăваççĕ теме çук-ха. Акă, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешӳ епле пынине палăртас тĕллевпе ятарласа рейдсем питĕ сайра йĕркелеççĕ. «Экономикăри тĕп задача вăл — **ĕç тухăçлăхне тĕпрен хăвăрт малалла ӳстересси.** Пирĕн ку енĕпе тĕнчери чи çӳллĕ шая çитме тăрăшмалла. Ахальтен мар ĕнтĕ Ленин çакна, тĕпрен илсен, çĕнĕ обществăллă строй çĕнтерес ĕçре чи кирли, тĕп вырăн йышăнаканни тесе шутланă», — палăртсах каларĕ КПСС Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ Ю. В. Андропов юлташ парти Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче 1983 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче[20].

Паллă ĕнтĕ, ĕç тухăçлăхне хăпартни производство эффективлăхĕ мĕнле ӳссе пынине кăтартакан виçе пулать. Ĕç тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, халăх пурнăçĕ те çавăн чухлĕ тулăхрах. Эппин, редакци планĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерес енĕпе мĕн тунине тĕрĕслесси малти вырăнта тăмалла. Производство хăвачĕсемпе туллин те пĕлсе усă курасси, наукăпа техника çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртесси, ялхуçалăх, транспорт, халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç отраслĕсем юлса пынине пĕтересси, пĕтĕм хуçалăх механизмне лайăх йĕркелесе çитересси, дисциплинăпа йĕркелĕхе çирĕплетесси, организацилĕхпе ответлăха ӳстересси — акă паянхи кун умра тăракан пысăк ыйтусем. Çак ыйтусемпе ырă улшăнусем тăвассишĕн ĕçлекорсен рейд бригадисем те вăй хумалла. Вĕсен производствăна çĕнĕ йышши продукци туса кăлармашкăн хăвăрт тата эффективлă йĕркелесе яма май паракан паха технологие ĕçе кĕртме пулăшмалла, промышленноçра каяшсăр ĕçлеме тата энерги перекетлеме май паракан технологисемпе анлăн усă курмалла тăвассишĕн тăрăшмалла. Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, чĕртаварпа, энергипе перекетлĕ усă курассишĕн, çынсен ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн пыракан кĕрешӳри паха пуçарусене вăхăтра асăрхасси, ырласси тата сарасси — пичет активисчĕсен тивĕçĕ.

Партин XXVI съезчĕ экономикăпа социаллă пурнăçа малалла аталантармалли анлă çул-йĕр палăртрĕ. Кунта халăха апат-çимĕç продукчĕсем парса тăрасси те пысăк вырăн йышăнать. Çак задачăна пурнăçлас тĕллевпе КПСС Центральнăй Комитечĕн 1982 çулхи май уйăхĕнчи Пленумĕ çĕршывăн Апат-çимĕç программине çирĕплетрĕ. Çакă вăл ĕçял-

---

[20] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

корсен çарĕ умне пысăк ответлăх кăларса тăратрĕ. Вĕсем хăйсен рейчĕсене апат-çимĕç продукчĕсем туса илессине аталантарса пыма пулăшас тĕллевпе те ирттермелле.

Пирĕн çĕршывра аталаннă социализм обществи туса хунă. «Аталаннă социализм обществи вăл — коммунизма çитес çул çинчи тивĕçлипе пулакан тапхăр», — тенĕ СССР Конституцийĕнче[21]. Ку çул çинчи кашни кун хăйĕн задачисене, хăйĕн ыйтăвĕсене кăларса тăратать. Журналистсемпе ĕçялкорсем хальхи кунсен историне çыраççĕ пулсан, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ чи малтанах çав задачăсемпе, çав ыйтусемпе çыхăнмалла. КПСС XXVI съезчĕн, парти Центральнăй Комитечĕн 1982 çулхи май уйăхĕнчи тата ноябрьти, 1983 çулхи июньти Пленумĕсен решенийĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртме конкретлă ĕçсем тумалла вĕсен. Коммунизмăн пурлăхпа техника никĕсне туса хума, социализмла обществăлла хутшăнусене лайăхлатса пыма тата вĕсенчен коммунизмла хутшăнусем туса çитерме, коммунизм обществинче пурăнас çынна воспитани пама, ĕççыннисен пурнăçĕн пурлăхпа культура шайне ўстерме партипе халăха пĕтĕм вăйпа пулăшасси — акă пресса умĕнчи паха тĕллев. Ĕçялкорсем ирттерекен рейдсен темисем те çак тĕллевren тухса тăмалла.

Совет пичечĕн массăлăхĕ, ун ĕçне обществăлла йĕркепе тăвасси вăйлансах пырать. Пирĕн хаçатсенче рейд материалĕсем час-часах пичетленни те çакăн çинчен калать. Вулакансемпе, ĕçялкорсемпе çыхăнăва çирĕплетнĕ май хаçатсен редакцийĕсем рейдсен тĕрлĕ тĕсĕпе усă кураççĕ, ĕçялкорсен бригадисен ĕçĕ-хĕлĕпе опычĕ çĕнелсе пуянланать.

## ИККĔМЕШ СЫПАК

# РЕЙДСЕН ТĔСĔСЕМ

Ĕçялкорсен рейдне пĕр кун хушшинчех ирттерсе яма пулать, вăл уйăха е ытлараха та тăсăлма пултарать. Çакă унăн тĕллевĕсенчен, уйрăмлăхĕсенчен килет. Эхер ялкорсен бригади ĕне фермисенчен пĕринче ĕç дисциплинине тĕрĕслеме шут тытсан, унта пĕр-ик хутчен пулниех çителĕклĕ. Хаçат редакцийĕ районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсене пурне те тĕрĕслеме палăртсан, пĕр уйăх та çитес çук. Тепĕр чухне тĕрĕслени çеç сахал, чăрмавсене рейд бригадин хăйĕнех сирсе яма тивет. Қалăпăр, çĕрулми лартмалли машина çĕмĕрĕлнĕрен пĕтĕм ĕç чарăнса ларнă. Рейд бригади членĕсем хушшинче инженер е механик пулсан, иккĕленмелли çук, маши-

[21] Социализмлă Совет Республикисен Союзĕн Конституцийĕ (Тĕп законĕ). Шупашкар, 1977, 3 с.

нăна юсаса хута яма пулăшатех. Çакна май рейд бригадин тĕллевĕ те улшăнма пултарать.

Тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ тĕллевпе хăйне йышши рейд тĕсĕпе усă курма тивет. Журналистсемпе ĕçялкорсем хальхи вăхăтра рейдсен нумай-нумай тĕсне пĕлеççĕ. Вĕсене тĕллевĕсене кура, миçе хут ирттерни, камсем йĕркелени тата хутшăнни тăрăх, пĕлтерсе е пĕлтермесĕр ирттерни енĕпе, хăш вăхăтра ирттернине шута илсе классификацилеççĕ.

Тĕллевĕсене кура рейдсене çакăн пек тĕссем çине уйăраççĕ: 1. Пĕрремĕх рейд. 2. Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд. 3. Тӳреммĕн хутшăну рейчĕ. 4. Малти опыта çутатмалли рейд.

## 1. Пĕррелĕх рейд

Унăн уйрăмлăхĕ çакăнта: рейда пĕр бригада çеç тухать, тĕрĕслеве пĕр-пĕр уйрăм объектра е пĕрешкел темиçе объектра кăна ирттерет; çитменлĕхсене пĕтерме тӳреммĕн хутшăнмасть, хăйĕн сĕнĕвĕсене хаçатра çырса пĕлтерет. Сăмахран, Канашри пĕрлештернĕ хаçат бригади хула пасарне тĕрĕслет, унăн нушисене палăртать. Çавăн хыççăн «Пасар пулăшу ыйтать» корреспонденци çапса кăларать[1]. Ку темăпа урăх çĕрте рейд ирттермен, пĕр объекта çеç тĕрĕсленĕ. Çакна тума редакци пĕр бригада кăна йĕркеленĕ.

Тепĕр тĕслĕх. Шупашкарта пурăнакансем ӳпкеленине шута илсе, «Советская Чувашия» хаçатăн рейд бригади хулара ăçта конькипе ярăнма тата хоккейла выляма май пуррине тĕрĕсленĕ. Пайтах стадионсенче пулнă, хăй мĕн курнине «Стадион — пурин валли те» рубрика айĕнчи материалта каласа панă, тивĕçлĕ организацисене васкавлă мерăсем йышăнма хистенĕ[2]. Хальхинче те рейда пĕр бригада тухнă, пĕрешкел темиçе объекта — хулари стадионсене тĕрĕсленĕ.

Хаçат редакцийĕсем юлашки тапхăрта пĕррелĕх рейдсем час-часах йĕркелеççĕ. Тĕпрен илсен, ăна журналистсен тата ĕçялкорсен вăйĕпе ирттереççĕ.

## 2. Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд

Ку йышши рейда чылай чухне маларах ирттерни мĕнле улшăнусем кӳнине пĕлме йĕркелеççĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Шупашкарти телестудипе тата Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствипе пĕрле Йĕпреç районĕнче пĕррелĕх рейд ирттерет, хуçалăхсем хушшинчи комбикорм предприятийĕ япăх ĕçленине палăртать. Çакăн çинчен «Çурма хăватпа» материал хаçатра 1982 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче

[1] Коммунизмшăн (Канаш), 1967, майăн 16-мĕшĕ.
[2] Пусть звенит под коньками лед.—Советская Чувашия, 1983, 25 февр.

пичетленет. Унтанпа виçĕ уйăх ытла иртет. Предприятие тулли хăватпа ĕçлеттерес тесе, районти ялхуçалăх органĕсем нимĕн те тумаççĕ. Çавăнпа хаçат бригади ку объекта каллех каять, тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд ирттерет. Хальхинче рейд бригадин «Сăмах панипех лăпланнă» корреспонденцийĕ «Хаçатра çырнă хыççăн» рубрикăпа 1983 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче çапăнса тухать.

Тепĕр рейд бригадин «Ответлăха туймасан» корреспонденцийĕнче (1982, сент. 16-мĕшĕ) Канаш районĕнчи «За коммунизм» совхоз руководителĕсемпе специалисчĕсене фермăсен продуктивлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн вирлĕн критикленĕ. Анчах палăртнă çитменлĕхсене пĕтерни çинчен хаçат редакцийĕ уçăмлă ответ илеймен. Кунта та тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд ирттерме тивнĕ. Çавăн пек çине тăни йĕпреçсене те, канашсене те татăклă улшăнусем тума хистенĕ.

Хăшпĕр чухне ĕçялкорсен рейдне урăх сăлтавпа та тепĕр хут ирттерме тивет. Акă, 1965 çулхи февральте Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикинче рейд бригади цехсен склачĕсенче йĕркелĕх çуккине палăртнă, унăн корреспонденцине нумай тиражлă «Трикотажница» хаçат пичетлесе кăларнă. Склад заведующийĕсенчен пĕри хирĕçлеме, хăйĕн айăпне сирсе яма хăтлансан, корреспондентсен бригади çавăнтах тепĕр хут пулать. Нумай тиражлă хаçат çивĕч критикăллă материал çĕнĕрен пичетлет.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд материалĕсене пичетлеме «Малтанхи рейд йĕрĕпе» рубрика уçнă. Тĕслĕхрен, «Хăвăртлăх çав-çавах çитмест-ха» статьяна çавăн пек рубрика айне вырнаçтарнă (1976, дек. 25-мĕшĕ).

Çапла ĕнтĕ, тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд ĕçялкорсен бригади унчченхи объектра е объектсенче иккĕмĕш хут пулассипе çыхăннă. Ку йышши рейд малтанхин йĕрĕпе пырать. Паллах, иккĕмĕш тĕрĕслеве пирвайхи бригада та, çĕнни те ирттерме пултараççĕ, анчах объектра мĕнле улшăнусем пулнине палăртма малтанхине ансатрах. Çавăнпа тепĕр хут тĕрĕслеме унчченхи бригадăнах сĕнмелле.

Тепĕр хут тĕрĕслемелли рейдăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Ана тĕрĕсленĕ объектра тивĕçлĕ улшăнусем тумасан ирттереççĕ. Эппин, вăл рейд материалĕн витĕмлĕхĕшĕн кĕрешмелли майсенчен пĕри пулса тăрать.

### 3. Тӳреммĕн хутшăну рейчĕ

Кунашкал рейдра бригада членĕсем тĕрĕслев ирттернипе тата хаçатра çырса кăларнипе çырлахмаççĕ, ĕçе хăйсем тӳреммĕн хутшăнаççĕ, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме пулăшаççĕ. Хĕрлĕ Чутай ял Совечĕ (ун чухне Çĕмĕрле производ-

ство управленине кĕнĕ) «Октябрь» колхозра депутатсен постне йĕркеленĕччĕ. Çак пост членĕсем «Малалла» хаçат корреспонденчĕсемпе пĕрле çураки епле пынине тĕрĕсленĕ. Вĕсем Туктамăшри пĕр бригада уйĕнче çул тăрăх 0,15 га çĕр сухаланмасăр-акăнмасăр выртса юлнине асăрханă. Рейд бригади уй-хир бригадин бригадирне тата тракториста шыраса тупнă, пушă выртса юлнă лаптăка сухалаттарнă, актарнă. Тепĕр бригада уйĕнче вĕсем лапамра тăпрана ăшăх сухаланине тата шăйрăксем хăварнине палăртнă. Кунта та трактористăн çĕре тепĕр хут сухалама тивнĕ.

Рейд бригади Енкĕлт уйĕнче сеялка кăкарнă трактор, автомашина тапранмасăр тăнине, вĕсен çывăхĕнче çынсем тĕпĕртетнине катаранах асăрханă. Сеялка çĕмрĕлсе ларнă иккен. Çурхи кун тем тери хаклă. Рейд бригади членĕсем çанăсене тавăраççĕ те юсав ĕçне пикенеççĕ. Тепĕр çур сехетрен ака агрегачĕ йĕркеллĕ ĕçлеме тытăнать. Куртăмăр ĕнтĕ, рейд бригади членĕсем кунта тĕрĕслевçĕсем çеç мар, ĕçе активлă хутшăнакансем, чăрмавсене сирсе яма пулăшакансем пулса тăнă.

Тĕрĕсленĕ, çитменлĕхсене палăртнă, вĕсене çийĕнчех пĕтернĕ. Эппин, çакăн çинчен хаçатра çырмалла-ши? Хаçат корреспонденчĕ П. Арсентьев, ял Совет депутачĕсемпе пĕрле рейда хутшăннăскер, ун пирки 1964 çулхи майăн 22-мĕшĕнче «Депутатсен посчĕ тĕрĕслет» ятпа тĕплĕн çырнă отчет пичетленĕ. Рейд бригадин ĕç опытне хаçатра çутатса, корреспондент питĕ тĕрĕс тунă. Хаçатăн ытти бригадисене те кирлĕ чухне çавăн пек активлă пулма вĕрентет вăл.

## 4. Малти опыта çутатмалли рейд

Хаçатăн пĕрремĕш тивĕçĕ — ырри, лайăххи, çĕнни çинчен вулакансене çийĕнчех пĕлтересси, малти опытпа паллаштарасси, çапла майпа умри тĕллевсене ăнăçлăрах пурнăçлама, ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ÿстерме, ырлăх-пурлăх ытларах тума пулăшасси. Апла пулсан, рейд бригадисен те çакна асра тытмалла. Малтисен опычĕ — общество пуянлăхĕ, çавăнпа ăна массăсем хушшинче сарни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн 1983 çулхи Пленумĕнче Ю. В. Андропов юлташ çакна палăртрĕ: «Халĕ ăмăртăвăн çак тĕллевĕсем çине — продукци пахалăхне лайăхлатасси, производство хăвачĕсемпе, чĕртаварпа, энергипе, ĕç вăхăчĕпе лайăхрах усă курасси çине тимлĕрех пăхни кирлĕ пулĕ тетĕп. Паллах, тĕплĕн шухăшласа тунă перекетлĕх пулмалла, пурне те — металăн пĕр тоннинчен пуçласа пĕр килограмм çăкăр таранах перекетлемелле»[3]. Кăтартнă тĕллевсене пур-

[3] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

нăçлассишĕн пыракан кĕрешӳре мĕн çĕнни, пахи пур, çавна анлăн пропагандăламалла. КПСС XXVI съезчĕн делегачĕсем, СССР Верховнăй Совечĕпе РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем, СССР профсоюзĕсен XVII съезчĕн, ВЛКСМ XIX съезчĕн делегачĕсем, производствăра малта пыракансемпе новаторсем епле майпа пысăкрах ӳсĕмсем тунине ытти ĕççыннисене яр-уççăн кăтартмалла. Коллективлă подряд меслетне ĕçе кĕртни, нарядсăр ĕçлекен звеносем йĕркелени экономика тĕлĕшĕнчен пысăк усă кӳрет. Рейд бригадисем çак паха пуçарăва сарас ĕçре активлăрах пулмалла.

Етĕрне район хаçачĕн рейд бригади «Ленинская искра» колхозра выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма епле хатĕрленнине тĕрĕслет. Фермăсене тăрăшсах ăшăтнине, выльăх пăхакансене хĕллехи вăхăтра ĕçлеме тивĕçлĕ условисем туса панине палăртать вăл. Выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлессин паха опычĕпе районти ытти хуçалăхсене те паллаштарас тесе, бригада тĕплĕн çырса хатĕрленĕ корреспонденци пичетлет[4]. Çапла майпа ку ĕçри малти опыта пропагандăлать.

Елчĕк районĕнчи «Колхоз ялавĕ» хаçат «Рейд бригади хыпарлать» рубрикăпа «Слава» колхозăн иккĕмĕш комплексла бригадинчи фермăсенчи выльăх пăхакансен паха опычĕ çинчен каласа парать (1966, апр. 16-мĕшĕ). Рейд бригади ĕçе тарăннăн тишкерет, çавна май малта пыракансене ырă сĕнӳсем парать. Сăмахран, кунта шыва насуспа уçласа пĕверен илеççĕ. Çурхи шывпа пĕрле пĕвене тислĕк е унăн шĕвекĕ юхса анать, çавна пула ĕнесем шыва ĕçесшĕн мар. Рейд бригади артезиан пуссине хăвăртрах чавса пĕтерме, ĕнесене çав шывпа шăвармалла тума сĕнет.

«Рейд вĕçленчĕ. Тавтапуç!» — çавăн пек ят панă «Молодой коммунист» хаçат малти опыта çутатакан пĕр материала (1966, окт. 6-мĕшĕ). Унта Куславкка районĕнчи Тĕрлемесри пĕрремĕш столовăй коллективĕ епле ĕçленине кăтартнă. Çав хаçатрах «Саламлатпăр, шкул!» корреспонденци пичетленчĕ (1968, авг. 24-мĕшĕ). Хаçат редакцийĕпе «Комсомол прожекторĕн» облаçри штабĕ Çĕрпӳ районĕнче ирттернĕ рейд çинчен вăл. Бригада унта çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленессипе районти шкулсем пухнă ырă опыта çутатать.

«Мĕнпур лайăх пуçарусене вăхăтра асăрхамалла, ырламалла тата анлă сармалла, экономика тĕлĕшĕнчен юрăхсăр меслетсемпе усă курма пăрахмалла», — палăртса хăварнă КПСС Центральнăй Комитечĕ «Социализмла ăмăртăва йĕркелес ĕçе, унăн итогĕсене пĕтĕмлетмелли, ăмăрту çĕнтерӳçисене хавхалантармалли практикăна лайăхлатасси çинчен» постановленире[5]. Шел, Чăваш республикинчи хаçатсен рейд

[4] Есть забота о животноводстве.— Знамя труда (Ядрин), 1967, 5 сент.

[5] Коммунизм ялавĕ, 1983, сент. 30-мĕшĕ.

бригадисем ку енĕпе çителĕклĕ ĕçлеççĕ теме çук-ха. Малти опыта çутатакан рейд материалĕсене пичетре сайра куратпăр. Хуçалăхпа культура строительствинчи паха опыта, лайăх пуçарусене çутатассине рейд бригадисен çирĕп план тăрăх тăтăшшăн туса пымалла; ыррине, пысăкрах усă кӳрекеннине анлăн сарма тăрăшмалла.

Çӳлерехре пăхса тухнă рейдсен тĕсĕсем пĕр-пĕринчен тĕллевĕсемпе уйрăлса тăраççĕ. Миçе хут иртерни, ĕçе камсем йĕркелени тата хутшăнни енчен пăхсан, уйрăм рейд, пĕрлехи рейд тата массăллă рейд пуррине куратпăр.

## 1. Уйрăм рейд

Çак рейдăн тĕллевĕ, пĕррелĕх рейдăнни евĕр, хĕсĕкрех: пĕр-пĕр ыйтупа уйрăм участокра ĕç епле пынине тĕрĕслесси. Çавна май унта хутшăнакансен йышĕ пысăках мар. Пĕррелĕх рейда хаçат редакцийĕ массăллă информацин ытти хатĕрĕсемпе пĕрле те, вĕсенчен уйрăм та ирттерме пултарать. Уйрăм рейда хаçат редакцийĕ е массăллă информацин урăх хатĕрĕ хăй тĕллĕн йĕркелет. Унта ĕçялкорсемпе журналистсем кăна хутшăнаççĕ.

Акă, «Советская Чувашия» редакцине çыру пырать. «Пирĕн çуртра стенасем çуркаланса пĕтрĕç, алăкĕсем лăканса хупăнми пулчĕç, штукатурка вырăнăн-вырăнăн хăйпăнса ӳкрĕ. Урай путăклă-шăтăклă, ăна ун пек сăрлама епле пĕлнĕши — шăйрăк хыççăн шăйрăк», — ӳпкеленĕ строительсене çĕнĕ çурта пурăнма куçнисем. Çак çырăва илсен, журналистсемпе рабкорсенчен ятарласа йĕркеленĕ рейд бригади Шупашкарăн кăнтăр-хĕвеланăç районне, пурăнмалли çĕнĕ микрорайон ӳссе ларнă вырăна каять. Тĕрĕслев хыççăн бригада «Туса пĕтермен çурт» статья çырса кăларать (1971, апр. 28-мĕшĕ). Çавăн хыççăн тин строительсем çĕнĕ çуртри çитменлĕхсемпе кăлтăксене пĕтерес ĕçе пуçăнаççĕ.

Уйрăм рейдăн тепĕр тĕслĕхĕ. Кирпĕч çапмалли çĕнĕ сезон çывхарнă май «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн рейд бригади Канашри строительство материалĕсен заводне пырать, унта хĕрӳ тапхăр умĕн хатĕрленӳ ĕçĕсем епле пынине тĕрĕслесе, чылай çитменлĕхсем тĕл пулать. Çакăн çинчен «Вăхăт кĕтмест» статьяра каласа панă (1971, мартăн 20-мĕшĕ).

## 2. Пĕрлехи рейд

Çакăн йышши рейдсем ирттерессине партипе совет пичечĕн флагманĕсем пуçарса ячĕç. С. Гуревич ун пирки çапла çырчĕ: «1960 çулхи май вĕçĕнче вулакансем центрти икĕ чи пысăк хаçатра çĕнĕ рубрика курчĕç. Вăл «Правда» тата «Известия» рабочи корреспонденчĕсен рейчĕ» ятлă. Çавăнтанпа ку рубрика йăлана кĕчĕ: ун айĕнче рабкорсен рейд бригадисем хатĕрленĕ материалсене вырнаçтараççĕ, вĕсенче çĕршер

вин вулакана шухăшлаттаракан ыйтусем хускатаççĕ»[6]. Çакăн хыççăн Чăваш республикинчи пресса та пĕрлехи рейдсем ирттерме тытăнчĕ. Ку рейдсене хамăр республикăра икĕ тĕп хаçат пĕрле, е республикăри хаçатпа пĕр-пĕр район хаçачĕ, е пĕр район хаçачĕпе тепĕр район хаçачĕ, е район хаçачĕпе нумай тиражлă хаçат пĕрлешсе ирттереççĕ.

1966 çулхи январьте «Советская Чувашия» тата нумай тиражлă «Электрик» хаçатсем Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче производствăн тĕп фончĕсемпе епле усă курнине тĕрĕсленĕ. Рейда йĕркелекенĕсем икĕ хаçат редакцийĕсен сотрудникĕсем В. Железновпа А. Савельев пулнă. Вĕсем тĕрĕслеве кунти ĕçе лайăх пĕлекенсене — Л. Кувшинский инженер-технолога, главнăй технолог уйрăмĕнче оборудовани енĕпе ĕçлекен Л. Петрова техника тата ыттисене те явăçтарнă. Рейд бригади чи пысăк резервпа — производствăн тĕп фончĕсемпе усă курассин эффективлăхне ӳстерме пулăшакан конкретлă сĕнӳсем панă. Рейд материалне «Электрик» çав çулхи январĕн 19-мĕшĕнче «Оборудовани тапранмасăр выртать» ятпа, «Советская Чувашия» январĕн 22-мĕшĕнче «Тĕп резерв» ятпа пичетленĕ, мартра вара рейд бригадин сĕнĕвĕсем тăрăх мĕн-мĕн тунине пĕлтернĕ.

Юлашки çулсенче пĕрлехи рейдсен çĕнĕ тĕсĕсем те палăрчĕç. Кунта чи малтан республика хаçачĕсем Чăваш АССР Халăх контролĕн комитечĕпе пĕрле ирттерекен рейдсене асăнмалла. Вулакансем «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ халăх контролерĕсемпе пĕрле ирттернĕ рейд» тата «Совместный рейд» «Советской Чувашии» и республиканского Комитета народного контроля» рубрикăсене час-часах кураççĕ. Çакнашкал рейд материалĕсенчен пĕрне «Советская Чувашия» 1982 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче «Пĕр пек условисенчех...» ятпа пичетлерĕ. Унта пĕрлехи рейд бригади Вăрмар районĕнчи «Ленинский» тата XXV партсъезд ячĕпе хисепленекен совхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлесси епле пынине тишкернĕ. Райхаçат редакцийĕсем нумай чухне ĕçялкорсен рейчĕсене районти халăх контроль комитечĕпе пĕрле ирттереççĕ.

Республикăра халăх контролерĕсен йышлă çарĕ ĕçлет. 1983 çулта вĕсен шучĕ 44 пинрен иртрĕ, пухусемпе конференцисенче 3.078 группа, 3.146 пост йĕркеленĕ. Халăх контроль комитечĕсемпе группăсен председателĕсем пулма парторганизаци секретарĕсен заместителĕсене, парткомпа партбюро членĕсене суйланă. Группăсемпе постсенче ĕçчен коммунистсем, опытлă специалистсем йышлă[7]. Çак вăйпа çыхăну тыт-

---

[6] Гуревич С. Совместные рейды «Правды» и «Известий».— В кн.: Вопросы журналистики, вып. II. МГУ, 1962, с. 34.

[7] Т-р: Халăх контролĕ: Умстатья.— Коммунизм ялавĕ, 1983, июлĕн 17-мĕшĕ.

ни, пĕрлехи рейдсем ирттерни ĕçялкорсене витĕмлĕрех ĕçлеме май параççĕ.

1981 çулта «Коммунизм ялавĕпе» «Советская Чувашия» выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарас ыйтупа ĕçлекен республикăри штабпа пĕрле рейдсем ирттерчĕç. Çавăн пек рейд материалĕсенчен пĕри — «Йывăрлăхсене курса тăмасан» — «Коммунизм ялавĕнче» ноябрĕн 4-мĕшĕнче пичетленчĕ. Хаçат редакцийĕсем юлашки вăхăтра рейдсене массăллă информацин ытти хатĕрĕсемпе — телевидени е радиовещани редакцийĕсемпе — пĕрле ирттерме пуçларĕç. Акă, «Коммунизм ялавĕ» хаçат корреспонденчĕсем Етĕрне районĕнчи «Заветы Ильича», Мартьянов ячĕпе хисепленекен тата ытти хăшпĕр колхозсене телевиденин халăх хуçалăх редакцийĕпе пĕрле тухнă, тырпул пухса кĕртме епле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ. Рейд бригадин материалĕ асăннă хаçатра 1979 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче пичетленнĕ, рейд çинчен телевидени передачи те çав кунах пулнă.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕпе Чăвашрадио пĕрле ирттернĕ рейд» рубрика пĕрлехи рейдăн тепĕр тĕсне палăртать. Çавăн пек рейд материалĕсенчен пĕри — «Кăтартусем панипех çырлахсан» (1982, сент. 17-мĕшĕ). Ку рейдра фермăсене хĕле мĕнле хатĕрленине тĕрĕсленĕ. Рейд материалне радиопа хаçатра пичетленнĕ кунах панă. Пĕрлехи рейд материалĕсене радиопа е телевидени çийĕнчех пани бригада сĕнĕвĕсене хăвăрт пĕлтерме, çитменлĕхсемпе кăлтăксене вăраха тăсмасăр пĕтерме май парать.

Пĕрлехи рейдăн паха тĕслĕхĕ — «Коммунизм ялавĕ» хаçат, Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви, халăх контролерĕсем тата Шупашкарти телестуди Йĕпреç районĕнче 1983 çулхи июньте ирттерни. Унта хаçат корреспонденчĕ А. Леонтьев, Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин агрономĕ В. Елагин, Шупашкарти телестудин кинооператорĕ Ю. Абрамов т. ыт. те хутшăннă. Пĕрлехи рейд бригади Ильич ячĕпе, Киров ячĕпе хисепленекен, «Березовка» колхозсенче, «Ибресинский» совхозра тата ытти хуçалăхсенче те пулнă, ялхуçалăх культурисем мĕнле ӳснине тĕрĕсленĕ. Рейд бригади тĕплĕн çырнă корреспонденцие 1983 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнче «Калчасем мĕншĕн имшер?» ятпа пичетленĕ, телевидени передачине те çав кунах панă.

«Молодой коммунист» полосисенче «Рейд «МК» областного штаба «КП» рубрика тăтăшах тĕл пулать. Ку — «Молодой коммунист» хаçат редакцийĕпе «Комсомол прожекторĕн» облаçри штабĕ ирттерекен пĕрлехи рейд. Сăмахран, унашкал рейд материалĕ—«Йĕтем çинчи калаçусем»—1982 çулхи августăн 3-мĕшĕнче кун çути курчĕ. «Штабăн канмалли кун-и?»—çакăн пек ят панă «Комсомол прожекторĕн» облаçри штабĕ, телевидени студийĕн çамрăксен тата спорт пере-

дачисен редакцийĕ, «Молодой коммунист» хаçат иртгернĕ пĕрлехи рейд корреспонденцине (1983, июлĕн 12-мĕшĕ).

Çавăн пекех ĕçялкорсем ял, поселок тата хула Совечĕсен яланхи комиссийĕсемпе, профсоюз тата комсомол организацийĕсемпе, «Комсомол прожекторĕсен» штабĕсемпе тачă çыхăну тытаççĕ, пĕрлехи рейдсем йĕркелеççĕ. Ку йышши рейд фактсемпе пулăмсене тарăнрах ăнланма, вĕсене тĕрлĕ енчен тишкерме, тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума, тĕрĕслев мĕн палăртнине тĕплĕрех çутатма май парать. Пĕрлехи рейдсем рабкорсемпе ялкорсене йышлăрах хутшăнтарма, хаçатсемпе вулакансем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пыма, пичет массăлăхне вăйлатма пулăшаççĕ. Çак рейдсен материалĕсем сумлăрах, вĕсен витĕмлĕхĕ те пысăкрах.

3. Массăллă рейд

Малтанах çакна палăртар. Хăшпĕр журналистсем ĕçялкорсен кирек хăш рейдне те массăллисен шутне кĕртесшĕн. Çакна тĕрĕс теме çук. Рейдсене планланă е тĕрĕслев объекчĕсене палăртнă чухне хаçат редакцийĕсенче çакăн пек каласнине илтме пулать: «Ку темăпа ĕçялкорсен рейдне иртterĕпĕр, тепринпе вара массăллă рейд ирттерме тивет». Эппин, массăллă рейдăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур.

Калăпăр, ялкорсен посчĕ ялта общественнăлла апатланăва епле йĕркеленине тĕрĕслесшĕн. Столовăй пĕрре кăна. Пĕр объекта тĕрĕслеме 3—4 çын çителĕклех. Пĕр столовăйра пĕрре те, иккĕ те, виççĕ те е ытларах та рейд ирттерме пулать, анчах сахал йышпа пĕр объектрах ирттернисене массăллă рейдсем шутне кĕртеймĕн. «Хаçат бригади ку столовăйра темиçе хут пулчĕ», е «темиçе рейд ирттерчĕ» тени тĕрĕс.

Хаçат редакцийĕ общественнăлла апатланăвăн районти предприятийĕсене пурне те тĕрĕслеме шутласан, урăхла пулса тухать. Паллă, çавăн пек предприятисем район территорийĕнче темиçе те. Пурне те тĕрĕслеме пĕр бригада вăй çитерейместь. Темиçе çĕрте темиçе рейд ирттерме çын нумай явăçтармалла, ĕçялкорсемпе пĕрле ĕççыннисен массисене хутшăнтармалла. Массăллă рейдсем çапла йĕркеленеççĕ.

Массăллă рейд ыттисенчен чи малтанах тĕрĕслев масштабĕсем анлă пулнипе, унта хутшăнакансен йышĕ пысăккипе уйрăлса тăрать. Ку рейда, пичет активисчĕсемсĕр пуçне, ĕççыннисен анлă массисем—рабочисем, колхозниксем, специалистсем йышлăн хутшăнаççĕ. Акă, 1983 çулхи июльте «Коммунизм ялавĕ» хаçат республикăри аш-какай комбиначĕсен ĕçне тĕрĕслеме шут тытнă. Çак тĕллевпе рабкорсемпе журналистсенчен, Чăваш АССР ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тата пахалăхне тĕрĕслес енĕпе ĕçлекен государство инспекцийĕн сотрудникĕсенчен, халăх контролерĕсенчен, комбинатсенче ĕçлекен рабочисемпе специалистсенчен виçĕ бри-

гада йěркеленě. Вěсем Канашри, Çěмěрлери тата Шупашкарти аш-какай комбиначěсенче ěçпе технологи дисциплинине тěрěсленě. Тěрěслев пěр харăсах виçě объектра пулса иртнě. Массăллă рейд комбинатсен ěçне нумай енчен тарăннăн тишкерме, çитменлěхсене пěтерес шутпа коллективлă шыравсем тума май панă. Çакă рейд бригадисем çырса кăларнă материалтан та лайăх курăнать[8].

Йěпреç районěнчи «Коммунизм çěнтерěвěшěн» хаçат 1962 çулхи январěн 25-мěшěнче йěркеленě массăллă рейдăн хăйěн уйрăмлăхěсем пур. Ăна иртterме тěплěн хатěрленнě. Хаçат редакцийě çапла тунă: пěтěм районěпех тěрěслев иртерессиçинчен хаçат редакцийě КПСС райкомěпе калаçса татăлнă та колхозсене пурне те пěлтернě, ěçялкорсемпе колхозниксен, специалистсен бригадисене йěркеленě, аслисене çирěплетнě. Вěсене пулăшма райхаçат редакцийěнчи журналистсем колхозсене кайнă. Рейда епле иртtерессиçинчен кашни бригадăнах «Астумалăх çырнисем» ярса панă. Массăллă тěрěслев пуласси çинчен хаçатра та пěлтернě. Ялкорсене тата выльăх-чěрлěх пăхакансене чěнсе, унта çапла çырнă:

«Ялкор юлташсем! Фермăсенчи корреспондентсен посчěсен членěсем!

Кăçалхи январěн 25-мěшěнче, кěçнерникун, ялти корреспондентсем, корреспондентсен посчěсем, колхозниксем районти мěнпур колхозсенчи обществăлла выльăх-чěрлěх фермисен ěçне тишкермелли кун пулать. Çав кун ялкорсем, корреспондентсен посчěсем фермăсене кайса, унта социализмла ăмăрту епле пынипе паллашмалла, выльăх-чěрлěх йышěпе продуктивлăхне ÿстерес ěçри усă курман резервсене тупма пулăшмалла. Малта пыракансен ÿсěмěсене, çитменлěхсемпе чăрмавсене асăрхамасăр иртес марччě.

Ялкор юлташсем! Çак кунăн итогěсене телефон урлă е урăх майпа çийěнчех редакцие пěлтерěр. Мěн курни çинчен очерксем, репортажсем, рейд бригадин материалěсем, фельетонсем çырăр. Вěсене хаçатра пěр номерте пичетлетпěр»[9].

Массăллă тěрěслев хыççăн редакци «Корреспондентсен посчěсем тата ялкорсем выльăх-чěрлěх фермисенче январěн 25-мěшěнче акă мěн курнă» шапкăпа харăсах икě полоса пичетлет, унта тăхăр колхозран килнě тăхăр материала вырнаçтарать. «Корреспондентсен посчěсемпе ялкорсем ярса панă материалсене пурне те хаçатăн ку номерěнчех пичетлеме май килмерě, вěсене хаçатăн малалли номерěсенче пичетлěпěр», — асăрхаттарать редакци[10].

---

[8] Аш-какай комбинатне çитсен...— Коммунизм ялавě, 1983, июлěн 20-мěшě.

[9] Коммунизм çěнтерěвěшěн (Йěпреç), 1962, янв. 24-мěшě.

[10] Çавăнтах, янв. 28-мěшě.

Асăннă полосара редакци комментарийĕ те пур. Унта тишкерӳ мĕн палăртнине пĕтĕмлетнĕ. Чылай фермăра сĕт суса илессине ӳстерме пур резервсемпе те туллин усă курмаççĕ-мĕн. Сăмахран, Ленин ячĕпе хисепленекен колхозăн ĕне фермисенче пĕринче апла, тепринче — капла. Хурамалти фермăра ĕнесене ытти апатпа пĕрле хыр, чăрăш лăсси параççĕ, искусственнăй сĕт сăвассине йĕркеленĕ, ĕнесене кунне 3 хутчен сăваççĕ. Чăрăшкассинчи фермăра вара çакна тумаççĕ.

Редакци комментарийĕнче малалла çапла каланă: «Чылай фермăсенче дояркăсемпе скотниксен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн кирлĕ пек тăрăшни çук-ха. Общежитисенче таса мар, политорганизаторсем агитаци ĕçне япăх йĕркелеççĕ. Ульянов ячĕпе хисепленекен колхозăн Йĕпреçри ĕне фермине пĕр хаçат-журнал та çырăнса паман. Колхозри парторганизаци секретарĕ И. Данилов юлташ! Ку сире тӳремменех пырса тивет вĕт».

«Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» редакцийĕ массăллă тĕрĕслев материалĕсене колхоз правленийĕсенче, парторганизацисенче, ял Совечĕсенче пăхса тухма сĕнет. Сĕт, аш-какай туса илессипе тата государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем сутассипе çывăх кунсенчех татăклă улшăну тума мĕнле мерăсем йышăнни çинчен васкавлăн пĕлтерме ыйтать. Малашнехи номерсенче редакци çак ыйтупа вырăнтан килекен ответсене пичетлет.

Пичет активисчĕсен рейчĕсене рабочисен, колхозниксен, специалистсен пысăк йышĕпе пĕрле иртерме, паллах, ансат мар. Кунта пайтах вăй хума тивет. Çавăнпа та ĕнтĕ массăллă рейдсене час-часах иртерме сĕнмеççĕ. Вĕсене экономикăпа производство аталанăвĕн, ĕççыннисен культурăпа йăла тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессин чи пысăк ыйтăвĕсемпе иртерес пулать.

Çапла ĕнтĕ массăллă рейдăн тĕп палли — унта пичет активисчĕсемпе пĕрле ĕççыннисен массисем хутшăнни; пĕр бригада çеç мар, темиçе бригада вăй хуни. Кунсăр пуçне, тĕрĕслеве пĕр объектра çеç мар, пĕр харăсах темиçе объектра е пĕрин хыççăн тепринче иртереççĕ. Çакна шута илсе, массăллă рейдсене икĕ ушкăна уйăраççĕ: пĕр вăхăтрисем, тĕрлĕ вăхăтрисем. Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсене — «Коммунизм ялавĕ» — аш-какай комбиначĕсенче, Йĕпреç район хаçачĕ — выльăх-чĕрлĕх фермисенче иртернисене пĕр вăхăтрисем темелле. Тĕрлĕ вăхăтрисем — пĕр паллă ыйтупах вăраха пыракан рейдсем. Ку шута чи малтанах обществăлла смотрсем вăхăтĕнче иртерекеннисене кĕртмелле.

Ĕçялкорсен рейчĕсене кĕтмен çĕртен, сасартăк, е малтанах пĕлтерсе иртерме пулать. Çак енĕпе вĕсен икĕ тĕсне палăртаççĕ: сасартăк иртерекен рейд тата маршрутлă рейд.

1. Сасартăк иртterекен рейд.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Колхоз хаçачĕ» редакцине те, халăх контролĕн районти комитетне те столовăйсем япăх ĕçлени çинчен çыру хыççăн çыру пынă. Çавна май пичет органĕ малтан пĕлтермесĕр-систермесĕр тĕрĕслев туса иртермe шут тытать. Рейд бригадине тăвата çынран йĕркелеççĕ. Унта Ф. Ивановпа В. Шеюков ялкорсене, санитари врачне В. Макарова, редакци сотрудникне М. Назарова кĕртнĕ. Хаçат корреспонденчĕсем Хĕрлĕ Чутайри пĕрремĕш чайнăйăн тата Атнарти столовăйăн пĕр кунхи ĕçне тĕплĕн тĕрĕслеççĕ, пайтах йĕркесĕрлĕхсем тупаççĕ. Этменте вара рейд бригадине систермесĕр тĕрĕслеме май килмест. Ун çинчен «Выçах таврăнтăмăр» корреспонденцире çапла çырса кăтартнă: «Этмен столовăйне çитсе кĕтĕмĕр. Кăмака юсавсăррине пула кухня ĕçлемест. Буфетра сăра пур. Мĕн чухлĕ ярса панине тĕрĕслес тенĕччĕ. Телефон шăнкăртаттарчĕ.

— Алло, алло! Этмен. Столовăй!.. Мари! Сирĕн пата тĕрĕслеме пыраççĕ, — пĕлтерет пĕри райпотребсоюзран. Ку Анна Ярабаева бухгалтер пулчĕ иккен...

Тасамарлăх çинчен асăрхаттарнипех ĕç пĕтрĕ»[11].

Çапла вара, корреспондентсене ку хутĕнче сасартăк, систермесĕр тĕрĕслессин ырă енĕсемпе усă курма май килмен. Сасартăк иртterекен рейд ĕçялкорсене пĕр-пĕр хуçалăхра е организацире ĕç-хĕл епле пырать, çав халлĕн курма май памалла; чееленме хăтланакансене, тӳрĕ мар кăмăллисене, сĕмсĕрсене, ултавçăсене тăрă шыв çине кăларма пулăшмалла.

2. Маршрутлă рейд.

Рейд бригади ăçта каяссине е çитес рейд ăçта пулассине малтанах пĕлтерсе, пĕр конкретлă ыйтупа темиçе хуçалăхра е объектра пĕрин хыççăн тепринче иртterекен рейда маршрутлă рейд теççĕ.

Чăваш АССРĕнче ку йышши рейдсене чи малтан Канаш районĕнчи пĕрлештернĕ «Коммунизмшăн» хаçат редакцийĕ ирттерме тытăннă. 1963 çул пуçламăшĕнче çуракине епле хатĕрленнине тĕрĕслеме хаçат бригадисем массăллă рейда тухнă. Икĕ уйăх çурă хушшинче вĕсем 16 колхозра пулнă. Çавăн хыççăн редакци рейд малалла тăсăласси, малашне вăл маршрутлă пуласси, рейд бригади çывăх вăхăтрах «Искра» ялхуçалăх артельне çитесси çинчен пĕлтернĕ (1963, мартăн 31-мĕшĕ). Хаçат район карттине те пичетленĕ. Унта юлашки рейда «Заря» колхозра йĕркеленине, çитесси «Искра» колхозра пулмаллине стрелкăпа ӳкерсе кăтартнă. Рейд бригади ку хуçалăхра хатĕрлесе панă материал çав çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче çапăнса тухать. Ана В. Воробьев тракторист, А. Грибо-

[11] Колхоз хаçачĕ (Хĕрлĕ Чутай), 1967, июлĕн 13-мĕшĕ.

едов библиотекарь, халăх контроль группин председателĕ Ф. Воробьев, П. Курицын учетчик, Ф. Читнаев кладовщик, хаçат редакцийĕн сотрудници Л. Нестерова алă пусса кăларнă. Редакци маршрутлă рейд малалла Калинин ячĕпе хисепленекен колхозра пулмаллине палăртнă. Çапла çуралать хаçатра «Пирĕн маршрутлă рейд» рубрика.

Маршрут палăртнă çула пĕлтерет. Маршрутлă рейд ирттернĕ чухне вăл ăçта пулассине малтанах хыпарлаççĕ. Пирвай ăна сăмахпа çырса пĕлтернĕ, кайрантарах хаçатри карттă çинче рейд ăçта пулнине пунктирлă стрелкăпа, ăçта иртерессине хура стрелкăпа кăтартма пуçланă.

Маршрутлă рейдпа çуракине епле хатĕрленнине тĕрĕслеме çеç мар, политикăпа хуçалăхăн ытти кампанийĕсем вăхăтĕнче те усă кураççĕ. Канашсенчен вĕренсе, маршрутлă рейдсене хамăр республикăри район хаçачĕсем пурте тенĕ пекех ирттерме тытăнчĕç, каярахпа ку йышши рейдсен материалĕсем республика хаçачĕсенче те час-часах пичетленчĕç.

Рейд ăçта тата хăçан пулассине малтанах пĕлтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакă, пĕр енчен, хуçалăх руководителĕсене те, унта ĕçлекенсене те йĕркелĕхшĕн, плана тултарассишĕн тăрăшма хистет. Тепĕр енчен, рейд бригади те хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек хатĕрленсе пурнăçлать.

Çапла ĕнтĕ, маршрутлă рейд паллисем çаксем: рейд бригади ăçта каяссине е çитес рейд ăçта пулассине малтанах пĕлтерни; ăна пĕр паллă ыйтупа (темăпа) ирттерни; рейд бригади темиçе хуçалăха е объекта пĕрин хыççăн теприне çитни; тĕрĕслеве кашни хуçалăхра уйрăм, тĕрлĕ кун йĕркелени.

Колхозсенче калчасене пăхса ӳстерес, тырпул пухса кĕртме тата патшалăха ялхуçалăх продукчĕсем сутма хатĕрленес ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕслеме Комсомольски районĕнчи Халăх контроль комитечĕпе «Октябрь ялавĕ» хаçат редакцийĕ пĕр çулхине рейдсене тăватă маршрутпа йĕркеленĕ. Кашни маршрутрах тĕрĕслевçĕсен уйрăм бригади ĕçленĕ, кашни бригада çумне редакци сотрудникне çирĕплетнĕ. Пĕрремĕш маршрутрисем малтан Ленин ячĕпе хисепленекен колхозра пулнă, темиçе кунтан тĕрĕслеве «Красный маяк», «Восток» колхозра йĕркеленĕ. Ытти маршрутсенче те рейдсене маларахах палăртса хунă тата хуçалăхсене пĕлтернĕ йĕркепе ирттернĕ.

Малтанхи тапхăрта хăшпĕр редакцисем маршрутлă рейд тĕп уйрăмлăхне тĕрĕс ăнкарса илейменни те пулнă. Акă, «Ленинский путь» хаçат (Улатăр) 1964 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче тата сентябрĕн 11-мĕшĕнче икĕ рейд материалĕ вырнаçтарнă. Редакци ятарласа палăртнă тăрăх, вĕсенчен пĕри «комсомолла маршрутлă рейд», тепри — «каçхи маршрутли». Чăн ĕнтĕ, малтанхи рейд бригади икĕ колхозра, иккĕмĕш бригада

виçĕ колхозра тĕрĕслевсем ирттернĕ. Анчах маршрутлă рейд уйрăмлăхĕ темиçе хуçалăхра пулнинче мар, ăçта тата хăçан ирттерессине маларахах пĕлтернинче.

Утмăлмĕш çулсенче маршрутлă рейдсене, тĕпрен илсен, район хаçачĕсен редакцийĕсем ирттеретчĕç. Çитмĕлмĕш çулсенче вара ку рейдсене республикăри хаçатсен редакцийĕсем те йĕркелеме тытăнчĕç. Маршрутлă рейдăн малтанхи материалĕсенчен пĕри — «Ĕççи сарăлса пырать» — «Коммунизм ялавĕнче» 1975 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче çапăнса тухрĕ. Ăна хаçатăн рейд бригади Вăрмар районĕнчи хуçалăхсенче ирттернĕ тĕрĕслев хыççăн çырчĕ. Редакци материал вĕçĕнче çитес рейд Йĕпреç районĕнче пулассине пĕлтерчĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçатри маршрутлă рейдăн тепĕр материалĕ «Пĕлтĕрхинчен сахал. Мĕншĕн?» ятлă (1976, мартăн 2-мĕшĕ). Ку рейда Йĕпреç районĕнчи хуçалăхсенче ирттернĕ. Материал умне район карттине вырнаçтарнă, вĕçĕнче вара çитес рейд Куславкка районĕнче пулассине пĕлтернĕ.

Хăш вăхăтра ирттернине шута илсе, яланхи вăхăтри рейда, каçхи рейда тата вырсарникунхи рейда уйрăммăн палăртма май пур.

1. Яланхи вăхăтри рейд.

Ку шута кăнтăрлахи ĕç вăхăтĕнче ирттерекен рейдсене кĕртмелле. Яланхи вăхăтри рейдра хăнăхнă йĕркепе пыракан кулленхи ĕç-хĕле тĕрĕслеççĕ, ăна лайăхлатмалли майсене шыраççĕ.

2. Каçхи рейд.

Пирĕн предприятисемпе хуçалăхсенче нумай çĕрте каçхи вăхăтра та ĕç чарăнмасть. Каçхи ĕçĕн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Ку вăхăтра йывăрлăхсем те сахал мар сике-сике тухаççĕ. Строительсенех илер. Вĕсем кăнтăрла та, çĕрле те çĕнĕ объектсем тума вăй хураççĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн бригади стройкăна каç чаршавĕ хупăрласа илсен рейда тухать, строительсем прожекторсен çутипе епле ĕçленине тишкерет. Рейд бригади çĕрлехи чăрмавсене сиресси пирки хăйĕн шухăшĕсене «График хут çинче ан юлтăрччĕ» корреспонденцире каласа парать (1967, дек. 2-мĕшĕ).

Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат, Халăх контроль комитечĕ, «Комсомол прожекторĕн» штабĕ тата райĕçтăвкомăн шалти ĕçсен уйрăмĕ 1966 çулта ятарласа каçхи рейд бригади йĕркеленĕ. Çак бригада, тĕрлĕ колхозсемпе ялсенче пулса, тырă склачĕсене, магазинсене тата ытти объектсене епле хуралланине тĕрĕсленĕ; «Восток» колхозра чылай çитменлĕхсем пуррине, хăшпĕр хуралçăсем çĕрлехи вăхăтра хурала тухманнине палăртнă. Социализмла пурлăха сыхлас енĕпе уйрăм çитменлĕхсене «Россия», «Алга» колхоз-

сенче те асӑрханӑ. Ҫакӑн ҫинчен рейд бригади район хаҫатӗнче критика материалӗ ҫырса кӑларнӑ.

Патӑръел районӗнчи «Авангард» хаҫата вулакансем «Пирӗн каҫхи рейд» рубрикӑна тӑтӑшах тӗл пулаҫҫӗ. Ҫак рубрикӑпа пичетленнӗ материалсенчен пӗри — «Хуҫасӑр клуб» (1967, февр. 9-мӗшӗ).

3. Вырсарникунхи рейд.

Вырсарникун — канмалли кун, анчах пурте канмаҫҫӗ. Хиртен трактор кӗрлени илтӗнет, выльӑх пӑхакансем ӗлӗкхи пекех тӑрӑшаҫҫӗ, Культура ҫуртӗнче хор репетицийӗ пырать. Администраци каннӑ вӑхӑтра ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслеме Канаш районӗнчи «Коммунизмшӑн» хаҫат ятарласа рейдсем ирттерет, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн пыракан ӗҫе ҫак кун та лайӑх йӗркелеме пулӑшать.

Эпир ӗҫялкорсен рейчӗн тӗсӗсене пӑхса тухрӑмӑр. Вӗсенчен пӗрисем предприятисемпе хуҫалӑхсене, организацисене рейда хатӗрленнӗ май ӗҫе лайӑхлатма, ҫитменлӗхсене пӗтерме май параҫҫӗ; теприсемпе систермесӗр-пӗлтермесӗр, сасартӑк пырса тӗрӗсленӗ чухне усӑ кураҫҫӗ. Рейдӑн кирлӗ тӗсне бригада хӑйӗн умӗнчи тӗллеве кура суйласа илет.

ВИҪҪЕМӖШ СЫПАК

## РЕЙД ИРТТЕРЕССИН ЙӖРКИСЕМ

Чи малтанах ҫакна татӑклӑн каламалла: нихӑш рейда та тивӗҫлипе хатӗрленмесӗр ӑнӑҫлӑ ирттерме май килмест. Ӗҫялкорсен рейчӗсене хатӗрленсе ирттерес ӗҫре ҫак тапхӑрсене уйӑрммӑн палӑртмалла: 1. Тӗрӗслев объекчӗсене суйласа илесси. 2. Рейд ирттересси ҫинчен ӗҫҫыннисене пӗлтересси. 3. Бригада йӗркелесси тата ун умӗнчи тӗллевсене сӳтсе явасси. 4. Рейда ирттересси. 5. Тӗрӗслевре палӑртнисене пӗтӗмлетсе, рейд материалне ҫырса хатӗрлесси.

Рейд темине хаҫат редакцийӗн ӗҫ планӗнче палӑртаҫҫӗ. Тӗрӗслев объекчӗсене епле суйласа илмелле-ши? Ку ыйтӑва тӗрӗс татса пама ӗҫсем ӑҫта, мӗнле пулса пынине пӗлни кирлӗ. Улатӑр районӗнчи «Ленинский путь» хаҫат 1967 ҫулхи мартӑн 17-мӗшӗнче «Хуҫалла пӑхни курӑнмасть» корреспонденци пичетлерӗ. Ана рейд бригади «Победа» колхозӑн ӗне ферминче пулнӑ хыҫҫӑн ҫырнӑ. Мӗншӗн-ха рейда шӑпах ку хуҫалӑхра ирттернӗ? Ҫак ыйту ҫине рейд материалӗ хӑй ответ парать: «Сӗт суса илессипе «Победа» ялхуҫалӑх артелӗ районта кайри вырӑнта. Государствӑна сӗт сутассипе кӑҫалхи икӗ уйӑхра кварталти плана пурӗ те 14 процент ҫеҫ тултарнӑ. Хатӗрлев пункчӗсене сӗт 190 центнер вырӑнне 27 ҫеҫ

леçнĕ». Ăнланмалла ĕнтĕ: çавнашкал юлса пынин сăлтавĕсене шыранă та рейд бригади.

«Советская Чувашия» хаçатăн рейд бригади Вăрнар районĕнчи «Гвардеец» тата Элĕк районĕнчи «Звезда» колхозсенче 1983 çулхи çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслет. Ку хуçалăхсене суйласа илнин сăлтавĕ — вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртни[1]. Çав хаçатăнах тепĕр бригадин членĕсем В. Николаев, В. Афиногенов, В. Иванов тыр-пула епле пухса кĕртнине Вăрмар районĕнчи «Чувашия» совхозпа «Дружба» колхозра тĕрĕсленĕ. Мĕншĕн çак хуçалăхсене суйласа илнĕ-ши? Районта хуçалăхсем татах нумай-çке. Ку ыйту çине рейд бригади çапла хуравлать: «Çак икĕ хуçалăхра эпир ăнсăртран пулмарăмăр. Государствăна тырă сутассипе район сводкинче вĕсем иккĕшĕ те чи кайра. Августăн 17-мĕшĕ тĕлне плана «Чувашия» 19 процент, «Дружба» 24 процент çеç тултарнă»[2].

Ĕçялкорсен рейдне хаçатра маларах пичетленнĕ материал йĕрĕпе те иттерме пулать. Ун чухне тĕрĕслемелли объектсене малтанхисенех хăвараççĕ. Улатăр районĕн «Ленинский путь» хаçачĕ çапла тăвать те. 1964 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче вăл «Ырантан ырана хăварса...» корреспонденци пичетлет. Унта «За мир» ялхуçалăх артелĕн правленине çуракине çителĕксĕр хатĕрленнĕшĕн критикленĕ. Икĕ уйăха яхăн иртсен, редакцин ялхуçалăх пайĕ асăннă хуçалăхра мĕнле улшăнусем пулса иртнине пĕлме шут тытать, çак тĕллевпе ятарласа ĕçялкорсен рейдне иттерет. Рейд материалĕ хаçатра «Решенисем йышăнаççĕ. Малалла мĕн?» ятпа пичетленет (1964, мартăн 6-мĕшĕ). Ку хутĕнче çапла татса панă улатăрсем рейд объектне палăртас ыйтăва.

Ĕçялкорсен рейдне хаçат редакцийĕ илнĕ çивĕч содержанииллĕ çыру тăрăх иттернине те куратпăр. Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцине «Звезда» колхозăн Енĕшри ĕне ферми заведующийĕ Г. Егоров япăх ĕçлени çинчен çыру пырать. Вăл июнĕн 9-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче фермăна пырса та курман, имĕш. «Ĕнесем выçă тăрса, 50 процент таран сĕт чакарчĕç. Егоровах ферма заведующийĕ пулсан, эпир пурте фермăран пăрахса каятпăр...»—тенĕ унта. Редакци сĕннипе ялкорсен посчĕн руководителĕ И. Сироткин тата А. Степанов, И. Игнатьев ялкорсем тĕрĕслев йĕркелеççĕ. Çакă паллă пулать: «Г. Егоров пĕр уйăх кăна фермăра заведующи пулса ĕçлет-ха. Унччен кунта пăрусем пăхса пурăннă. Фермăна вăл кашни кунах çӳрет. Пĕр вăхăт, çулса памалли участока улăштарнă вăхăтра, чăнах та, сĕт сăвасси кăштах

[1] См.: Два хозяйства— два подхода. — Советская Чувашия, 1983, 3 марта.

[2] С «сырым» настроением. — Советская Чувашия, 1982, 20 авг.

чакнă пулнă. Вăл пачах заведующи айăпĕпе пўлман»[3]. Ялкорсен рейчĕ çыру авторĕ чăнлăха пăсса кăтартнине палăртать, сĕмсĕр элеке тăрă шыв çине кăларма пулăшать.

Çапла ĕнтĕ, тĕрĕслев объекчĕсене суйласа илесси — тĕплĕн шухăшласа тумалли ĕç. Пулас рейдсен адресĕсене тĕрĕс палăртма район, республика пурнăçне, ăмăртура кам мала тухнине, кам юлса пынине пĕлмелле, редакци почтине тĕпчемелле. Рейд объекчĕсене суйланă чухне çакна та манмалла мар: столица е район центрĕ çывăхĕнчи объектсене çеç мар, катарисене те тăтăшах тĕрĕслемелле; юлса пыраканнисене критикленипе пĕрлех вăтам кăтартуллă хуçалăхсен ĕçне тишкермелле, малти опыта анлăн пропагандăламалла.

Каламасăрах паллă, сасартăк ирттерекен рейд çинчен малтан пĕлтерни чăрмав кăна кўме пултарать. Ытти йышши рейдсем пуласси çинчен маларахах хыпарланин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Унтан та ытларах, ĕççыннисене малтан пĕлтермесен, массăллă рейдсене ирттерме пачах май килмест. Вĕсене обществăлла тĕрĕслевĕн тĕллевĕсемпе, задачисемпе тĕплĕн паллаштармалла, рейда активлă хутшăнма хатĕрлемелле. Икĕ-виçĕ корреспондент цеха е фермăна сасартăк пырса тĕрĕслени татăклă улшăнусем тăваймĕ. Ĕçе рабочисем, колхозниксем, служащисем йышлăн кўлĕнсен, рейд пысăк усă кўресси куç умĕнчех. Журналистсемпе пичет активисчĕсен вырăнти юлташсемпе тачă çыхăну тытмалла, вĕсен канашĕсемпе, сĕнĕвĕсемпе усă курмалла. Пулас рейд çинчен ĕççыннисене тĕрлĕ майпа пĕлтерме пулать: ун çинчен хаçатра, стена хаçатĕнче е уйрăм листокра çырса кăлармалла, телевиденипе тата радиопа каласа памалла, коллективсенче калаçусем ирттермелле.

Рейда хатĕрленессин тепĕр тапхăрĕ — бригада йĕркелесси тата ун умĕнчи тĕллевсене сўтсе явасси. Пур-ха пирĕн хушăра журналистсем: рейд ирттерме пĕр хатĕрленўсĕр хăпăлхапăл тухса каяççĕ, рейд бригадине алă айне кам лекет, çавна—клуб заведующине е пĕр-пĕр учетчика — чĕнеççĕ те тĕрĕслев объектне тухса вĕçтереççĕ. Унпа пĕрле пынисем рейд тĕллевне лайăххăн ăнкарма та ĕлкĕреймеççĕ, журналист васкасах редакцие таврăнать. Унта вăл пĕрре ларсах хăй тĕллĕн рейд материалĕ çырать, ун айне хăйĕн хушамачĕпе юнашар клуб заведующийĕпе учетчик хушамачĕсене те лартать. Пĕччен алă пуснине рейд материалĕ теме çук-çке-ха.

Çавăн пек те пулкалать: редакци рейд ирттерме палăртать, ăна йĕркелеме журналист уйăрать, рейд объектне те кăтартать. Анчах редакци сотрудникĕ, вырăна çитсен, брига-

[3] Тĕрĕссине ĕçре куртăмăр: Çыру йĕрĕпе. — Çĕнтерў çулĕ (Вăрнар), 1968, июнĕн 27-мĕшĕ.

дăна кĕртме çын тупаймасть, никамран пулăшу ыйтма аптрать. Тĕслĕхрен, çавнашкал пулса тухать Тăвай районĕнче[4]. Çуракине епле хатĕрленнине тĕрĕслемелли рейд irttерме журналист «Искра Ильича» колхоза çул тытать, унта хăйпе пĕрле вăрлăх тĕрĕслекен лаборатори сотрудникне илсе каять.

— Рейда хутшăнма халăх контроль группин пĕр членне уйăрăр-ха, — сĕнеççĕ вĕсем колхоз правленийĕнче.

Кунтисем халăх контроль группине кама суйланине аса илме хăтланаççĕ, анчах кăлăхах. Рейд бригади йĕркеленеймест, çавна пула ку кун тĕрĕслеве тухаймаççĕ.

Улатăр районĕнчи «Ленинский путь» хаçат редакцийĕн сотрудникĕ А. Фатеев вара урăхла тăвать. Ĕне ферминче рейд irttерме «Победа» колхоза кайсан, вăл хуçалăх руководителĕсене те, парторганизаци секретарьне те тупаймасть. Журналист аптраса ўкмест: ферма общежитине пырать, выльăх-чĕрлĕх пăхакансене рейд тĕллевне ăнлантарса парать, кăмăл тăвакансене унта хутшăнма сĕнет. Ĕне сăвакансем В. Малюгинăпа Т. Шмагина, пăру пăхакан П. Трифонова, К. Кубыркин завхоз рейда хутшăнма хапăл туса килĕшеççĕ. Тĕрĕслев ăнăçлă иртет, рейд материалĕ хаçатра çийĕнчех пичетленсе тухать.

Рейда хатĕрленнĕ тата irttернĕ чухне йывăрлăхсем те тĕл пулаççĕ. Çак йывăрлăхсем пуринчен ытла хаçат редакцийĕ ĕçялкорсемпе тачă çыхăну тытманнинчен, рабкорсемпе ялкорсен посчĕсем ĕçлеменнинчен килеççĕ. Опыт çакна кăтартать: редакци хăйĕн корреспонденчĕсен активĕпе пĕрмаях çыхăнса тăрсан, кулленхи ĕçре ун çине таянсан, рейд бригади йĕркелесси тата ăна irttересси пĕртте кăткăс мар. Акă, «Советская Чувашия» хаçатăн штатри корреспонденчĕ Л. Решетников, хăйне Канаш районĕнчи ĕне фермисенче рейд йĕркелеме хушсан, малтанах ялкорсен посчĕсемпе çыхăнать. Жданов ячĕпе хисепленекен тата «Звезда» колхозсенчи ялкорсен посчĕсен руководителĕсем Н. Бабанов тата К. Прокопьев, хаçатăн активлă корреспонденчĕ И. Кузьмин тата ытти юлташсем те рейда хапăл туса хутшăнаççĕ. Хаçатăн штатри корреспонденчĕ рейда асăннă юлташсемпе пĕрлех выльăх-чĕрлĕх пăхакансене хăйсене хутшăнтарать.

«Советская Чувашия» хаçат 1978 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче рейд материалĕсем харăсах иккĕ пичетленĕ. «Сĕт сăвассине чакарма сăлтав пулман» — пĕрремĕш полосара тата «Хĕле епле хатĕрленнĕ» — иккĕмĕш полосара. Рейда кама-кама хутшăнтарнине пăхсан, икĕ тĕрлĕ тĕслĕх тухса тăрать. Хаçат корреспонденчĕ П. Кольцов «Чебоксаргэсстрой» управленийĕнчи производство предприятийĕсен комбинатĕнче рейд

[4] Т-р: Федоров П. Ыран килĕр...— Ял ĕçченĕ (Тăвай), 1967, мартăн 18-мĕшĕ.

ирттерме унта ĕçлекенсене — ăшăпа шыв парса тăракан участокри слесарьсен бригадирне, крановщика, бетон завочĕн механикне — хутшăнтарнă, çакна май рейд бригади хĕле хатĕрленес ĕçе тĕплĕн тишкерме пултарнă. Элĕк районĕнчи Калинин ячĕпе хисепленекен колхозри ĕне фермисене тĕрĕсленĕ бригадăна вара выльăх пăхакансене пĕр çынна та кĕртмен. Çакна пула материалĕ те шупка пулса тухнă: анализ ăшăхрах, çитменлĕхсемшĕн камçем айăплине, вĕсене пĕтерме камăн мĕн тумаллине уçăмлăн кăтартман.

«Кам туса парасса кĕтеççĕ-ши?» рейд корреспонденцийĕ çинчен те çавнах каламалла[5]. «Заря», «Урожай» тата «Луч» колхозсен фермисенче хĕле епле хатĕрленнине тăваттăн тĕрĕсленĕ, вĕсем пурте — районтан пынисем. Тĕрĕслеве вырăнти ялкорсене хутшăнтарсан, хаçат корреспонденцийĕнчи анализ тарăнлăхĕ, паллах, ӳсетчĕ.

Чылай хаçат редакцийĕсем вырăнта корреспондентсен яланлăх тата вăхăтлăх посчĕсене йĕркеленĕ. Цехсенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче, сăмахран, яланлăх постсем йĕркелени вырăнлă. Колхозсемпе совхозсенче ĕççи вăхăтĕнче йĕтем çинче, комбайн агрегачĕсем патĕнче, тырă йышăнакан пунктра вăхăтлăх постсем тăваççĕ. Постри корреспондентсем ĕç фронтĕнче ыттисемпе пĕрле вăй хураççĕ. Вĕсем асрах тытаççĕ: ыттисене чĕнетĕн пулсан, чи малтан ху ырă тĕслĕх пул. Пушă вăхăтра вара корреспондентсем хаçат редакцийĕн заданийĕсене пурнăçлаççĕ. Паллах, ĕçялкорсен рейчĕсене яланлăх постсене те, вăхăтлăх постсене те хутшăнтармалла. Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат рейдсем ирттерме рабкорсемпе ялкорсен посчĕсене анлăн явăçтарать. Тĕслĕхрен, редакци район центрĕнче суту-илӳ йĕркине сăнаса тăма 4 çынран корреспондентсен посчĕ йĕркеленĕ, Вăрнарти магазинсем кун йĕркине епле пăхăннине тĕрĕслемелли рейда вара çав пост вăйĕпе ирттернĕ[6].

«Корреспондентсен рейчĕсене ирттерни çакна кăтартса парать: хăшпĕр ялкорсем хăйсен колхозĕсенчи çитменлĕхсене уççăнах тупса палăртаймаççĕ. Те хăяймаççĕ вĕсем, те колхоз руководителĕсенчен шикленеççĕ», — иккĕленет Г. Матвеев журналист[7]. Сăлтавĕ апла та, капла та пулма пултарать. Теприсем вырăнти çитменлĕхсене хăнăхаççĕ, çавăнпа курмăш пулаççĕ. Ун пек ан пултăр тесен, мĕн тумалла-ши? Ответне автор хăех парать: «Рейдсем ирттерме ăмăртакан е кӳршĕ колхозсенчи ялкорсем пĕр-пĕрин колхозне кайса çӳрессине йĕркелерĕмĕр. Тĕслĕхрен, «1-ое Мая» колхозри И. Алешкин, М. Иванов, П. Мальцев ялкорсем, кӳршĕри «Горьковская

---

[5] Авангард (Патăръел), 1963, окт. 13-мĕшĕ.

[6] Т-р: Кун йĕркине пăхăнмаççĕ. — Çĕнтерӳ çулĕ (Вăрнар), 1967, окт. 3-мĕшĕ.

[7] Матвеев Г. Массăллă рейдсем.—Коммунизм ялавĕ, 1959, апр. 10-мĕшĕ.

коммуна» колхоза кайса, унта ҫуракине хатӗрленес, аш-какай туса илес ӗҫсем мӗнле пынине тӗрӗслерӗҫ»[8]. Питӗ лайӑх, каплла туни те кирлӗ.

Рейда кама-кама хутшӑнтармалла-ши? Пӗрремӗшӗнчен, рейд бригадинче объектра ӗҫлекен рабочисемпе колхозниксем пулмалла, мӗншӗн тесен вӗсем хӑйсен объектӗнчи лару-тӑрӑва лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ тата ҫитменлӗхсемпе кӑлтӑксене пӗтерни, йывӑрлӑхсене сирсе яни, усӑ курман резервсене палӑртни, ӗҫе лайӑхрах йӗркелени хӑйсемшӗн усӑллӑ.

Иккӗмӗшӗнчен, рейда объектри специалистсене те явӑҫтармалла. Ҫакӑ пысӑк усӑ кӳрет. Хӗл ҫывхараспа «Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцийӗ Шупашкарти промторг магазинӗсем ӗҫҫыннисене сивӗре тӑхӑнмалли япаласем сутас енӗпе мӗнле ӗҫленине тӗрӗслеме шутлать. Рейд ирттерме А. М. Осипова журналисткӑна хушаҫҫӗ. Тӳрех калар, Александра Максимовна задание чипер пурнӑҫлать. Ӑнӑҫлӑх бригадӑна специалистсене кӗртнинчен килнӗ. Тӗрӗслеве промторгри аслӑ товаровед, «Детский мир» универмагри тата «Росторгодежда» базӑри секцисен заведующийӗсем хутшӑннӑ. Хулари ӗҫҫыннисене ӑшӑ тумтир сутасси епле пулса пынине специалистсенчен тӑракан бригада «Хӗле кӗрес умӗн» репортажра тӗрӗс те туллин ҫутатнӑ[9].

Специалистсем рейд бригадине наукӑпа техника енчен паха сӗнӳсем пама, аталану ҫулӗсене туллин те тӗрӗс кӑтартма пултараҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗшӗнчен, рейд бригадинче кӳршӗллӗ тепӗр объектра ӗҫлекенсем пулни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Тӗрӗслемелли объектри ҫынсем хӑйсен ӗҫӗ-хӗлӗнчи ҫитменлӗхсене хӑнӑхса ҫитнӗ, асӑрхами пулнӑ. Урӑх куҫ вара вӗсене курмасӑр иртме пултараймастех. Ҫавӑнпа тӗрӗслемелли объектри ҫынсемпе урӑх объектсенчи ҫынсене пӗр бригадӑна кӗртнин усси пысӑк.

Тӑваттӑмӗшӗнчен, рейд бригадинче ӗҫялкорсем, хаҫат редакцийӗпе тачӑ ҫыхӑну тытакансем пулмалла. Пичет тусӗсем рейдӑн тӗллевӗсене, унӑн витӗмлӗхне ӳстермелли майсене лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ, бригада материалне редакцие оперативлӑ тӑратаҫҫӗ.

Пиллӗкмӗшӗнчен, рейд бригадинче ӗҫҫынисемпе, ӗҫялкорсемпе пӗрле журналист пулни выранлӑ. Ҫакӑ ӗҫялкорсен рейдне ӑнӑҫлӑ ирттерме, унӑн материалне тивӗҫлӗ шайра хатӗрлесе пама пулӑшать.

Ҫакна асра ҫирӗп тытмалла: рейда чыслӑ-сумлӑ та ӗҫчен ҫынсене хутшӑнтармалла. Тӗрӗслеме япӑх ӗҫлекен ҫын пырсан, хӑй те ҫавнашкалскер кӑна, тейӗҫ.

Редакцин рейд бригадин членне кам пулнине ӗнентерекен документ памалла-ши? Пирӗн шутпа, рейда кайма ятарласа

---
[8] Ҫавӑнтах.
[9] Коммунизм ялавӗ, 1970, ноябрӗн 1-мӗшӗ.

удостоверени е ун евĕрлĕ урăх хут пама кирлех мар. Пĕр енчен, ĕçялкорсен бригадинче яланах тенĕ пек пĕр-пĕр журналист е хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ пулать, вĕсен аллинче редакци яланлăх панă документ пур. Тепĕр енчен, рейд тĕллевне ăнлантарса парсан, ĕçялкорсемшĕн кирек ăçта та çул уçă.

Рейд бригадине кам ертсе пырать? Унта хутшăнакансем хушшинче журналист пулсан, ку ĕçе ăна хушмалла. Çавăн пекех рейд бригадине ĕçялкорсен посчĕн руководителĕ е штатра тăман корреспондент ертсе пыма пултарать. Бригадăра пĕри асли пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл рейдра камăн мĕн тумаллине кăтартать, кашнинех активлă пулма хистет, рейд хыççăн пĕтĕмлетӳсем тăвассине тата унăн материалне çырса хатĕрлессине йĕркелет.

Час-часах çапла ыйтаççĕ: рейд бригадинче миçе çын пулмалла? Тĕп-тĕрĕс цифра калама çук: ку вăл рейд тĕллевĕсенчен, тĕрĕслев объекчĕсем пысăкки-пĕчĕккинчен килет. Уй-хир бригади çуракине епле хатĕрленнине ялкорсен пысăк мар бригади те тĕрĕслеме пултарать. Тĕрĕслеве пĕтĕм колхоз тăрăх ирттерес тесен, паллах, пĕр бригада кăна çителĕксĕр. Çавăнпа пĕрлех рейда хутшăнакансен йышне кирлĕ мар çĕр тенех пысăклатмалла мар. Бригада йышĕпе ĕç калăпăшĕ шайлашуллă пулмалла.

Объекта кайиччен бригада членĕсем рейд тĕллевĕсемпе задачисене тĕплĕн сӳтсе явмалла, вĕсене пурне те тивĕçлĕ инструктаж памалла. Обществăлла тĕрĕслев ăнăçлăхĕ унран нумай килет. Çакна тума опытлă журналистсене тата специалистсене — инженерсене, агрономсене, зоотехниксене, экономистсене, производствăпа экономикăна витĕр курса тăракансене сĕнмелле.

Журналистсене, штатра тăман корреспондентсене, ĕçялкорсене инструктажа пухма май килмен чухне çакна çыру урлă тума май пур. Редакци е унăн пĕр-пĕр пайĕ хатĕрлекен çырура рейд темипе тĕллевĕсене, ăçта тата хăçан ирттермеллине, тĕрĕслеве камсене хутшăнтармаллине кăтартмалла. Çак шутпа тĕплĕн хатĕрленĕ çырусенчен пĕри — «Коммунизм ялавĕ» редакцийĕн культура, литературăпа искусство пайĕ 1962 çулхи июнĕн 23-мĕшĕнче хаçатăн штатри корреспонденчĕсене ярса пани. Унăн хăшпĕр йĕркисене илсе пăхар:

«...Шкулсем çитес вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме çак уйăхра республикăри районсенче рейд ирттерес терĕмĕр. Паллах ĕнтĕ, ку ĕçе эсир хутшăнмасăр ирттерме май килмест. Материала хатĕрленĕ чухне шкулсемпе вĕсен директорĕсем тата çутĕç пайĕпе унта ĕçлекенсем шкулсем валли çĕнĕ çуртсем лартас тата киввисене юсас, вут-шанкă хатĕрлес, шкул участокĕсенче ачасем лартнă пахчаçимĕçсене йĕркеллĕ пăхса çитĕнтерес, вĕренӳ хатĕрĕсем туянас, ачасе-

не учебниксем сутассине тӗрӗс йӗркелес, учительсене шкулсем тӑрӑх вырнаҫтарас тӗлӗшпе халиччен мӗн-мӗн тунине тӗплӗн кӑтартма тӑрӑшӑр. Районти суту-илӳ тата ытти организацисем, колхоз правленийӗсем ҫав ыйтусемпе мӗн тери интересленнине те кӑтартма ан манӑр.

Рейд ирттерес ӗҫе учительсене, ачасен ашшӗ-амӑшӗсене ытларах хутшӑнтарма тӑрӑшӑр. Тӗрӗслемелли районсемпе шкулсене хӑвӑр суйласа илӗр». Ҫыру айне пай заведующийӗ алӑ пусна. Куртӑмӑр ӗнтӗ, кунта рейда епле ирттерессипе паха кӑтартусем панӑ.

«Молодой коммунист» редакцийӗ 1965 ҫулта Шупашкарти ҫамрӑксен общежитийӗсенче массӑллӑ тӗрӗслев ирттерчӗ. Рейда тухакансене кашнинех редакци ҫакнашкал «Астумалӑх ҫырни» пачӗ:

«Хулари общежитисенче ҫамрӑк рабочисем, студентсем, училищӗсемпе техникумсенче вӗренекенсем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсемшӗн общежити тӑван кил пулса тӑнӑ-и е ҫук-и — ҫакна палӑртасси рейд бригади умӗнчи тӗп тӗллев. Рейд вӑхӑтӗнче тӗрӗслемелли ыйтусем:

1. Общежити ҫурчӗ тулаш енчен тата шал енчен мӗнле? Сирӗн шутпа вӑл еплерех пулмалла пек?

2. Кунта ҫынсене кулленхи пурнӑҫра кирлӗ хӑш меллӗхсем пур? Хӑшӗсем ҫитмеҫҫӗ? Сирӗн сӗнӗвӗрсем.

3. Пурӑнмалли пӳлӗмсем хӑтлӑ-и?

4. Ӗҫпе вӗренӳ ӑнса пытӑр тесен, общежити ҫуртӗнче тата мӗн кирлӗ?

5. Культура тата воспитани енӗпе массӑллӑ ӗҫсем йӗркеленӗ-и?

6. Тирпейлӗхпе тасалӑхшӑн тивӗҫлипе тӑрӑшаҫҫӗ-ши?

7. Общежити советне, коменданта кунта пурӑнакансем пулӑшаҫҫӗ-и?»

Рейд бригадисем тӗрӗслеве ҫак ыйтусемпе ирттернӗ, рейд корреспонденцийӗсене вӗсем тӑрӑх ҫырнӑ.

Массӑллӑ рейд йӗркелеме хаҫат редакцийӗ ҫумӗнче ятарласа штаб тумалла. Ҫӳлерехре асӑннӑ хатӗрленӳ ӗҫӗсене те, рейд ирттерессине те, унӑн витӗмлӗхӗшӗн кӗрешессине те вӑл пуҫарса ертсе пымалла. Рейд штабӗ парти комитечӗпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлемелле, тӗрӗслевҫӗсен бригадисене кирлӗ пулӑшӑва вӑхӑтра памалла.

Рейд бригади парти, профсоюз, комсомол организацийӗсемпе тата администрацие ҫыхӑнмалла, тӗрӗслев тӗллевӗсене ӑнлантарса памалла. Ку организацисем те, администраци те бригадӑна пулӑшма тивӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем умӗнче те, тӗрӗслевҫӗсем умӗнче те пӗрешкел тӗллевсем тӑраҫҫӗ. Эппин, кунта конфликт пулма сӑлтав ҫук. Теплерен хирӗҫӳ сиксе тухни вӗсем пӗрне-пӗри ӑнланса ҫитейменнинчен килет.

Объектра миçе участок пулнине кура бригадăна темиçе ушкăна уйăрма юрать. Çакă тĕрĕслеве хăвăртлатма, ăна оперативлă ирттерме май парать. Япăх участоксемпе пĕрлех вăтаммисене те, малтисене те тĕрĕслемелле. Çакă тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума пулăшать.

Тĕрĕслеве çиелтен мар, тĕплĕн тумалла. Пĕринчен илтни кăна сахал, теприн урлă тĕрĕслемелле. «Куçупа курмасăр тĕплĕн пĕлмесĕр ан çыр», — сĕнет юлташĕсене Г. Васильев ялкор. Ăна колхоз агрономĕ траншейăра 200 центнер çĕр улми çĕрни çинчен «систерет». Юрать-ха хаçата çырса яриччен корреспондент бригадирпа пĕрле траншейăна кĕрсе тĕрĕслеме шут тытать. Унта çĕрни пĕр улма та çук иккен[10].

«Советская Чувашия» хаçатăн рейд бригади Чăвашколхозстройпĕрлешĕвĕнчи ПМК-6 Канашра профтехучилище объекчĕсене епле тунине тĕрĕслет. Смена пуçланнăраппа виçĕ сехет иртнĕ, кунта çаплах тăвată платник кăна. Ытти строительсем, çирĕм—çирĕм пилĕк çын, сушилкăра тата мастер вагонĕнче лараççĕ. Мĕншĕн ĕçлемеççĕ-ши?

— Кирпĕч çук... — ответлет пĕри хаçат корреспонденчĕсене. — Пирĕн ялан çапла: е автокран, е раствор, е кирпĕч çук. Сехечĕ-сехечĕпе ĕçсĕр ларатпăр..

Анчах К. Шлыгина мастерпа пĕрле котельнăй тунă çĕре кайсан, корреспондентсем темиçе штабель кирпĕч курах каяççĕ. Эппин, халăх мĕншĕн ĕçлемест?

— Çаплалла пулса тухрĕ-ха...—уçăмсăр хуравлать мастер[11].

Илсе кăтартнă фактсем рейд бригадин членĕсене тимлĕ пулмалли çинчен систереççĕ.

Рейдра палăртнисене чылай чухне тĕрĕслев объектĕнчех пĕтĕмлетме май килет. Унта парти, комсомол организацийĕсен секретарĕсене е вĕсен заместителĕсене, профсоюз комитечĕн председательне, администрацире ĕçлекенсене чĕнме юрать. Çакă рейд бригадин сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртессине хăвăртлатмалли лайăх май пулса тăрать. Рейдра палăртнисене сӳтсе явнă чухне кашнинех хăйĕн шухăшне малтан пуçласа вĕçне çитиех калама ирĕк памалла. Уйрăмах паха шухăшсене çырса пама ыйтмалла. Унпа хаçат валли материал çырнă чухне усă курмалла. Рейд бригадинче асли пулма кама уйăрнă, пĕтĕмлетӳ канашлăвне çавă ертсе пымалла.

Ĕçялкорсен рейчĕ çинчен хаçатра çырмаллах-ши, телевиденипе радиовещани урлă пĕлтермеллех-и? Пĕлетпĕр, рейд бригадисем обществăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тăваççĕ. Эп-

---

[10] Т-р: Çĕнтерӳ çулĕ (Вăрнар производство управленийĕ), 1963, майăн 31-мĕшĕ.

[11] См.: Вытянуть главное звено...— Советская Чувашия, 1979, 23 янв.

пин вёсен ĕçĕ-хĕлĕ, рейд мĕнпе вĕçленни çинчен общественноçа анлăн пĕлтерсе тăмалла, çак тĕллевпе массăллă информаци хатĕрĕсемпе туллин усă курмалла: пичетре çутатмалла, телевиденипе радиовещани урлă каласа памалла, стена хаçатĕнче çырмалла. Ятарласа бюллетень кăларма та юрать.

Кашни рейд хыççăнах хаçатра материал çырса кăлармалла-ши е урăхла та пулма пултарать-и? Паллах, рейд бригади мĕн курни-тупни, палăртни ыттисене те усă кӳме пултарсан тата критика материалне хаçатра пичетлени унăн витĕмлĕхне ӳстерме пулăшсан, рейд материалне пичетлемелле е телевиденипе радиовещани урлă памалла. Рейд материалĕн воспитаниллĕ пĕлтерĕшĕ пулмасан, çитменлĕхсемпе кăлтăксене унсăрах пĕтерсен, паллах, материал хатĕрлесе чăрманма та кирлĕ мар.

Рейд бригадисем хăйсен материалĕсене çырнă чухне индукци тата дедукци çулĕсемпе усă кураççĕ. Акă, «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн рейд бригади, вунпĕрмĕш пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш çулĕнче тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотра хутшăнса, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи темиçе хуçалăха çитнĕ. Хаçат корреспонденчĕсем малтан Ленин ячĕпе хисепленекен колхоза пыраççĕ. Ку хуçалăх тивĕçлипех малтисенчен пĕри шутланать. Унăн хирĕнче пур культурăсем те хитре, çăра та тип-тикĕс ӳсеççĕ.

Лайăх ӳсекен тырпула пухса кĕртме хатĕр-и? Рейд бригади колхозăн машина-трактор паркĕнче çакна палăртать: «Вунултă комбайнран виççĕшĕ юсавсăр. Чылай автомашинăсен ураписем çитмеççĕ. Акă, груз турттармалли пĕр автомашина виççĕмĕш уйăх резинăсăр ларать. Автобус та чупаймасть. Вырма вăхăтĕнче вăл питех те кирлĕ: комбайнерсене аякри хире леçме, агитбригадăна çӳреме, хире вĕри апат илсе тухма», — çырать рейд бригади «Коммунизм ялавĕнче» 1983 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче «Кая юлсан, йывăр килĕ» корреспонденцире.

Малалла рейд бригади корреспонденци жанрне интервью элеменчĕсемпе пуянлатать. Ю. Савельев, Г. Черепанов, Н. Ивантаев комбайнерсем мĕн каласа панисене пĕрин хыççăн тепĕрне кĕртсе лартать. Тĕслĕхрен, çитменлĕхсем çинчен Ю. Савельев комбайнер çапла калать: «Иртнĕ çулхи вырмара районти комбайнерсем хушшинчи социализмла ăмăртура пирĕн агрегат пĕрремĕш вырăн йышăннăччĕ. Кăçал мала тухаймастпăр пулĕ. Паркран кăларма та хăратăп комбайна: передачăсен коробкине виççĕрен пĕрре пухнă, тырă хăпартакан транспортерăн кожухĕ «çĕтĕк-çатăк»—электросварка тĕкĕнмен вырăн юлман, сцеплени муфти «чăхăмлать». Чылай пайсене улăштармалла, анчах çĕннине тупса параймаççĕ». Интервью элеменчĕсемпе усă курса, рейд бригадин членĕсем хăйсем курнине уçăмлăраххăн çутатаççĕ, çивĕч ыйтусене ха-

çатра сӳтсе явма ялхуçалăх ĕçченĕсене хăйсене хутшăнтараççĕ.

Хаçат корреспонденчĕсем «Марксист», «Путь коммунизма» колхозсенче те сахал мар çитменлĕхсем кураççĕ. Темиçе хуçалăхра пулнă хыççăн рейд бригади çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăвать: «Асăннă çитменлĕхсем ытти хуçалăхсенче те пур. Районта çитмĕл трактор ытла юсавсăр. Ку техникăпа икĕ колхозри уй-хир ĕçĕсене вăхăтра туса пыма пулать. 13 комбайна хатĕрлесе лартман, 53 трактор прицепĕ тĕрлĕ пайсем çитменнипе ĕçе хутшăнаймасть. Пресс-подборщиксем çурри майлах юсавсăр... Ĕççи пуçланиччен вăхăт нумаях юлмарĕ. Районта вара ăна тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ теме çук-ха».

Корреспонденцире авторсем уйрăм фактсенчен пĕтĕмĕшле шухăшлав патне пыраççĕ. Уйрăмми патĕнчен пĕтĕмĕшли патне — журналистсемпе ĕçялкорсем килĕштерекен çул. Объект кунта аялтан пуçласа çӳлелле çуталса пынăн туйăнать. Тишкерӳ масштабĕсем вара фактран идея патне, эмпирикăран (пурнăçри сăнавран) теори патне, кăмăл-туйăм хусканăвĕнчен пулăма идеологи енĕпе хак парасси патне сарăлса пыраççĕ. Ку шăпах индукци çулĕ пулать те ĕнтĕ. Кĕскен каласан, индукци — уйрăм фактсене пăхса тухса пĕтĕмĕшле вывод тăвакан шухăшлав меслечĕ.

«Патне çитсен — ĕлкĕреймĕн» корреспонденцие вара урăхла йĕркеленĕ. Унта авторсем малтан Шăмăршă райĕçтăвкомĕн ялхуçалăх управленийĕн главнăй инженерĕ В. Денисов районта техникăна епле юсани çинчен каланине çырса кăтартнă[12]. Унăн сăмахĕсем тĕрĕс, юлашки çулсенче пайтах хуçалăхсенче паянхи куна тивĕçтерекен юсав мастерскойĕсем ĕçе кĕнĕ. Ялхуçалăх техникине юсасси график тăрăх ăнăçлă пулса пырать. Нумай машинăсене хĕл кунĕсенчех юсанă.

«Анчах васкар мар-ха. Хăшпĕр хуçалăхсене çитсе курар»,— пĕлтерет рейд бригади хăй малалла мĕн тăвасси çинчен. Вăл чи малтан Киров ячĕпе хисепленекен колхоза çитет. Кунта техникăна пĕтĕмпех юсаса çитермен иккен. Пĕр косилка, икĕ жатка, пĕр силос комбайнĕ тата пресс-подборщик хатĕр мар.Ултă комбайнран пĕри аккумулятор çук пирки вырма тухаймасăрах юлма пултарать. «КЗС-10» маркăллă агрегата тата тырă типĕтмелли «Волжанка» агрегата юсавçăсем пачах пырса тĕкĕнмен. Çитменнине тата «Волжанка» агрегатпа кам ĕçлемеллине те пĕлмеççĕ.

Рейд бригади «Шемуршинский» совхозра та туса çитермеллине нумай курать. «Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуçалăхри 17

---

[12] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 21-мĕшĕ.

комбайнран виççĕшĕ хатĕр пулман. Косилкăсемпе жаткăсене, пресс-подборщиксене те çак вăхăт тĕлне юсаса çитермен. Шел пулин те, июнĕн малтанхи çурринче те çитменлĕхсене пĕтерес тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Тырă тасатса типĕтмелли вуникĕ агрегатран тăххăрăшĕ çеç хатĕр».

«Ленинская искра», «Восход» колхозсенче жаткăсем юсавсăр. «Ĕлкĕрĕпĕр-ха» тесе шутлакансем ытти хуçалăхсенче те пур. Хаçат редакцийĕпе Чăвашрадио рейдне хутшăннисем ăçта мĕн туса çитерменнине палăртнипех лăпланмаççĕ, ялхуçалăх машинисем юсавсăр ларнин сăлтавĕсене тупса палăртаççĕ. «Паллах, запас пайсем çителĕклĕ пулманни те чăрмантарать. Анчах çакă çеç-ши? — тишкереççĕ вĕсем.— Техникăна юсассине хăвăртлатас тĕлĕшпе социализмла ăмăртăва хут çинче кăна йĕркеленĕ. Мастерскойсенче техникăна юсанă тапхăрти ăмăрту условийĕсене курма çук, итогсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ, малта пыракан механизаторсемпе слесарьсене, ытти работниксене хавхалантармаççĕ». Техникăн ытларах пайне «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕн мастерскойĕнче юсаççĕ. Комбайнсене палăртнă вăхăтра юсаса çитерменни чи малтан унта ĕçлекенсенчен килнĕ. Тепĕр сăлтав — хăшпĕр хуçалăх руководителĕсемпе специалистсем ĕçшĕн ответлăха туйманни. Район руководителĕсем вара вĕсенчен çирĕп ыйтмаççĕ.

Техникăна вăхăтра тата тĕплĕ юсанин пĕлтерĕшне витĕмлĕн уçса кăтартнă рейд бригади хăйĕн корреспонденцийĕнче. 1982 çулта ялхуçалăх техникипе эффективлă усă курнăшăн Шăмăршă районне СССР Министрсен Совечĕпе ВЦСПСăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе наградăланă. Çакă вара ял ĕçченĕсене машинăсене упрама, лайăх юсаса вĕсен ĕмĕрне тăсма хавхалантармалла. Ялхуçалăх техникипе кирлĕ пек усă курни продукци хăйхаклăхне чакарма пулăшать. «Районти хуçалăхсен кăçал 12.705 гектар тĕштырă культурисем, çав шутра 3.275 гектар кĕрхи тырă пухса кĕртмелле. Нумай вырăнта тырă çăра, тĕллĕн-тĕллĕн выртнă. Комбайнсене, жаткăсене çавăн пек тырра вырма хатĕрлесе çитересси тĕп вырăнта пулмалла». Шăмăршăсем кашни гектартан вăтам шутпа 24 центнертан кая мар тĕштырă, 150 центнер çĕрулми, 350 центнер тымарçимĕç, 300 центнер силослăх культурăсем пухса кĕртес тĕллев лартнă. Паллах, çак тĕллевсене пурнăçласси тырпул пухса кĕртмелли техникăна епле юсанинчен те нумай килет.

Рейд бригади «Патне çитсен — ĕлкĕреймĕн» корреспонденцие дедукци çулĕпе çырса хатĕрленĕ. Дедукци — пĕлсе тăракан пĕтĕмĕшле положенисенчен çĕнĕ положенисем тупса кăлармалли логика меслечĕ. Вăл пĕтĕмĕшли патĕнчен уйрămми патне, пĕтĕмĕшле шухăшсенчен фактсем патне илсе пырать; çав фактсем вара пĕтĕмĕшле шухăш мĕн тери тĕрĕс-

сине кăтартма май параççĕ. Эпир тишкерекен корреспонденцире авторсем Шăмăршă райĕçтăвкомĕнчи ялхуçалăх управленийĕн главнăй инженерĕ пĕтĕмлетĕвĕнчен уйрăм фактсем патне, пысăккинчен пĕчĕкки патне пыраççĕ. Объект кунта çӳлтен пуçласа аялалла çуталса пынă пек пулса тухать.

«Патне çитсен тин...» — рейд бригади тĕплĕн шухăшласа çырнă тепĕр корреспонденци[13]. Муркаш районĕнчи Чапаев ячĕпе хисепленекен колхоз çуракине епле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ чухне мĕн курнине бригада дедукци меслечĕпе çырса кăтартать. Каларăмăр ĕнтĕ, унăн çулĕ пĕтĕмлетӳллĕ ӳкерчĕкрен — фактсем патне, пĕтĕмлетӳллĕ шухăшран — уйрăм шухăшсем патне. Ку корреспонденцире те çаплах тунă: «Шел пулин те, вăйлă тырпулшăн пуçарнă кĕрешӳ хĕлхемĕ каярахпа сӳннĕ. Пĕтĕм ĕçе хăй еккипе янă»,— вуласа пĕлетпĕр авторсен пĕтĕмлетӳллĕ шухăшне корреспонденци пуçламăшĕнче. Малалла вĕсем çуракине хатĕрленесси япăх пынине фактсемпе кăтартаççĕ. Отарккăри машина-трактор паркĕнче юсава пуçăнманпа пĕрех, хăшпĕр культурăсемпе вăрлăх çитмест. Тырă тасатмалли машинăсем ĕçлемесĕр лараççĕ. Ака агрегачĕсене комплектласа пĕтермен. «Кăçал пĕрремĕш хут акана хутшăнакан çамрăк механизаторсемпе нимĕнле заняти те ирттермен, агротехникăпа, хăрушсăрлăх техникин правилисемпе паллаштарман». Çуракинче туса ирттермелли ĕçсен планĕ те çук.

Корреспонденцире пĕр тезис та витĕмлĕ аргументпа çирĕплетсе памасăр юлмасть. «Сводкăсенче тӳрлетнĕ тесе кăтартнă тракторсемпе ытти ялхуçалăх машинисенчен чылайăшĕ юсавсăр»,— асăрханă рейд бригади. Çакна ĕнентерекен факт та илсе кăтартнă: «Акă, тĕслĕхрен, Д. Николаев трактористăн ДТ-75 тракторне Муркашри «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче тĕпрен юсаттарма пăхнă. Анчах вăл унтан хăшпĕр детальсене «çухатса» таврăннă: генератор çĕтнĕ, навеска çук, насосĕ курăнмасть. Пĕрлешӳри юсавçăсем алран кайса пултăр тенĕ».

Рейд бригади, тĕрлĕ енчен пăхса, пулăмсемпе фактсене тĕрĕс хак парать. Пĕр тĕслĕх çеç илер: «Юсав звенисем йĕркелеме ĕлкĕреймерĕмĕр. Хам курсра пултăм,— тӳрре тухма пăхрĕ главнăй агроном. — Ытти специалистсем тăрăшман пулас».

**Çак факта рейд бригади тĕрлĕ енчен хак панă: «Айăпа ыттисем çине йăвантарни аванах мар пулĕ. Анчах унăн сăмахĕсенче тĕрĕслĕх те пур: ытти специалистсен мĕншĕн тăрăшмалла пулман?»**

Корреспонденцире диалогсемпе вырăнлă усă курнă. Акă, вăрлăх пирки пулса иртнĕ калаçу: «Мĕншĕн республикăри

[13] Коммунизм ялавĕ, 1983, мартăн 31-мĕшĕ.

ытти хуçалăхсемпе улăштарма тăрăшман? Елчĕк районĕнчи колхозсемпе килĕшӳ те тунă вĕт эсир, — ыйтатпăр Александр Васильевичран.

— Вăхăт пулман,—хуравлать вăл.

— Çураки те çитрĕ, халĕ мĕнле ĕлкĕрес тетĕр?

— Вăхăт пур-ха...»

Çакнашкал диалог материала чĕрĕлĕх кӳнипе пĕрлех лару-тăрăва уçса кăтартма пулăшать. Авторсем корреспонденци чĕлхине халăх сăмахлăхĕпе вăйлатса çивĕчлетнĕ. «Шаннă кайăк йăвара пулмарĕ», «черкке ăшне путнă», «кунĕ иртет, укçи пырать», «алран кайса пултăр», «хӳре вĕçне туй килсен» — акă текста кĕртнĕ хăшпĕр фразеологизмсем. Çирĕп план тăрăх тĕплĕ çырни, ĕçсем епле пынине тĕрлĕ енлĕн тишкерсе тĕрĕс хаклани, çивĕч критика, вырăнлă сĕнӳсем пани, шухăша литература чĕлхипе уçăмлăн калани **рейд бригади** материалĕн витĕмлĕхне ӳстерме май параççĕ.

Хаçатра критика конкретлă пулмалла, кам айăплине, камăн тумаллине ятпа, хушаматпа каламалла. «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Ялти стройкăсенче» рубрикăпа «Шăнкăрав янăрĕ-ши?» рейд кореспонденцийĕ çапăнса тухрĕ (1978, авг. 20-мĕшĕ). Кунта çĕнĕ шкул çурчĕсем туса лартассине вăраха янăшăн строительсене критикленĕ. Çак критика ак мĕнлерех çулпа пырать.

«Чувашсельстрой» трестăн куçса çӳрекен механизациленĕ 400-мĕш колоннин руководителĕсем ку стройкăра час-часах пулаççĕ; çитменлĕхсене курса тăраççĕ, анчах та ĕçсене хăвăртлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ...

Анчах çурта ăшăтса тăмалли системăна тата котельнăйри оборудование вырнаçтарас енĕпе районти «Сельхозтехника» вăрах ĕçлет.

...«Волговятскэлектроэнергострой» пĕр шкул çуртне тунă çĕрте те электроэнерги парса тăрас ыйтăва татса паман...

...«Свинпром» пĕрлешӳ котельнăй валли пĕтĕм оборудование уйăрса пама тăрăшмасть...» т. ыт. те.

Куртăмăр: темиçе организацие те ӳпкеленĕ, анчах айăплисенчен нихăшне те ятпа, хушаматпа асăнман, кам ответлине каламан. Паллă ĕнтĕ, кунашкаллине конкретлă критика теме çук.

Журналистикăри тишкерӳре танлаштару меслечĕ вырăнлă. Кунта сăмах чĕлхене вăйлатмалли танлаштару форми çинчен мар, чăнлăха пĕлмелли танлаштару меслечĕ çинчен. Танлаштару фактпа факт, пулăмпа пулăм хушшинчи пĕрпеклĕхсене, уйрăмлăхсене тупма май парать. Акă, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕпе Шупашкарти телевидени студийĕн пĕрлехи рейд бригади (Л. Иванова, В. Матвеев, В. Тимуков, В. Васильев) хăйĕн корреспонденцийĕнче икĕ ăнаçлă танлаштару тунă.

Пěрремěшě: «Республикăра выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре тырăпа усă курасси çулсерен ӳссе пырать. Кăçал кăна колхозсемпе совхозсем обществăлла выльăх-чěрлěх валли 400 пин тонна ытла тырă уйăрнă. Анчах нумай хуçалăхсенче тырра лайăх вěтетмесěрех выльăхсене çитереççě. Витаминсемпе, ытти хутăшсемпе пуянлатмаççě. Ку вăл пысăк тăкаксем патне илсе пырать. 1980—1981 çулсенче вырăнта туса илнě 275—300 пин тонна тырра выльăх-чěрлěхе çитерсе янă. Çав тырăран пěтěмпех комбикорм тунă пулсан, 55—65 тонна ытла апат единици илме май пулнă. Çак апатпа 45—50 тонна сěт е 6—7 пин тонна аш-какай туса илме пултарнă»[14].

Иккěмěш танлаштару: «Вăрмар районěнчи «Путь Ильича» колхозра яланхи майпа авăртнă пěр центнер концентратăн хăйхаклăхě 18 тенкě те 30 пус пулнă, комбикорм вара 16 тенкěрен те йӳнěрех ларнă. Комбикорм промышленноçěн предприятийěсенче пěр центнер продукци хатěрлеме чылай йӳнěрех ларать»[15].

Рейд бригади шучěпе, выльăх апачě çителěклě пултăр тесен, комбикорм хатěрлесси çине тимлěн пăхмалла, Йěпреç районěнчи хуçалăхсем хушшинчи комбикорм хатěрлемелли предприятие туллин ěçлеттермелле. Хăйсен шухăшě тěрěссине ěнентерме бригада членěсем икě танлаштару тунă. Çав танлаштарусем рейд корреспонденцине палăрмаллах пуянлатнă.

«Молодой коммунист» хаçатри рейд корреспонденцийěнче çакнашкал танлаштару куратпăр: «Çапла, эхер «Эльбарусовский» совхозра рейд кунě тěлне 74 тонна курăк çăнăхě хатěрленě тата çав шутран 27 тонна государствăна сутнă пулсан, «Дружба» совхозра вара çав АВМ агрегатпах çăва тухнăранпа курăк çăнăхě пěр тонна çеç вěтетнě»[16].

Хисеп ячěсемпе авторсем тезиса çирěплетмелли аргумент вырăнне усă кураççě. Çакă шухăша конкретлăрах палăртма май парать. «Дисциплина япăх пулнă пирки кадрсем улшăнса тăраççě. Пěлтěр 268 çын ěçе илнě. 227 çын ěçрен тухса кайнă»,— çырать «Коммунизм ялавě» хаçатăн рейд бригади «Каçхи сменăра» репортажра (1983, февр. 6-мěшě).

Публицистикăн кирек хăш жанрěнче те, çав шутра рейд бригади материалěнче те, хисеп ячě пěлтерěшлě пулмалла. Эппин, хисеп ячě шухăща уçса кăтартма пулăшмалла, танлаштарса пăхма май памалла. Авторăн хăй илсе кăтартнă хисеп ячěн пěлтерěшне тěплěн ăнлантармалла. «Ěçри пěр минут — 11,5 пин киловатт-сехет электроэнергипе, 1.100 штук

---

[14] Çурма хăватпа. — Коммунизм ялавě, 1982, дек. 15-мěшě.

[15] Çавăнтах.

[16] У штаба — выходной?: Рейд областного штаба «КП», редакции молодежных и спортивных передач студии телевидения и «МК». — Молодой коммунист, 1983, 12 июля.

кирпĕчпе, 400 метр пир-авăрпа, 165 мăшăр чăлха-носкипе, 400 килограмм çăкăрпа, 60 килограмм кондитер изделийĕпе танлашать», — уçса кăтартнă Чăваш республикинчи пĕр минут хакне «Кая юлсан — каю шăтать» рейд корреспонденцийĕнче (Пионер сасси, 1983, мартăн 5-мĕшĕ).

Тепĕр тĕслĕх: «Пĕлтĕр совхоз (Канаш районĕнчи «За коммунизм» совхоз — И. Т.) кашни ĕнерен 1.454 кг сĕт суса илнĕ. Ку виçĕмçулхинчен те сахалрах. Кăçалхи январь-февраль уйăхĕсенчи кăтарту — 215 кг. Çав вăхăтрах малта пыракан «Цивиль», «Канаш», Киров ячĕпе хисепленекен колхозсенче продукци икĕ хут нумайрах илнĕ».

Ку корреспонденцире те хисеп ячĕсен пĕлтерĕшне пурте ăнланмалла уçса кăтартнă.

Шел, рейд материалне хисеп ячĕсем тĕлсĕр-йĕрсĕр кĕртекĕрте лартни тĕл пулкалать-ха. «Дружба» колхозра 220 тонна утă, 760 тонна силос хатĕрленĕ, 50 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ авăртнă. «Алга» колхозра 310 тонна паха утă пухнă, 600 тоннăна яхăн сенаж хывнă,—тенĕ «Капансем мĕншĕн сахал?» корреспонденцире (Коммунизм ялавĕ, 1982, июлĕн 25-мĕшĕ). Чăнах та, нумай-и ку е сахал-и, çителĕклĕ-и е çителĕклĕ мар-и, пĕлме çук. Ниме пĕлтермен хисеп ячĕсемпе усă курни сенĕкпе çил хăвалани тĕшне те тăмасть. Палăртсах хăварар, рейд бригадин çак корреспонденцине 56 хисеп ячĕ кĕртнĕ. Кунсăр пуçне, косилкăсемпе жаткăсен маркисене теçеткене яхăн предложенире хисеп ячĕсемпе кăтартнă. Çапла вара, авторсем вулакана хисеп ячĕсен пăттине пĕçерсе панă. «Çаплах васкамаççĕ» корреспонденцире те цифрăсем нумай[17]. Хаçатри материал сводка мар. Хисеп ячĕсем нумай пулни вулакан тимлĕхне сапаласа ярать, унăн вулас кăмăлне пĕтерсе хума та пултарать.

Рейд материалĕсенчен хăшĕ-пĕринче тĕрĕслевçĕсен бригади хăçан тата ăçта пулни, мĕн туни çинчен кирлĕ мар çĕртенех сăмах вакласа каяççĕ. Чылай материал çавăн çинчен пĕрешкел кичем каласа панипе пуçланать. Тĕслĕхрен, вăрмарсен пĕр корреспонденцийĕн малтанхи абзацĕ çапла: «Виçĕмкун эпир «Прогресс» совхозра пултăмăр, общественăлла выльăх валли апат хатĕрлес ĕç мĕнле пынипе интереслентĕмĕр»[18]. Виçĕ кунтан пичетленнĕ тепĕр рейд материалне те çавнашкалах пуçласа çырнă: «Республикăра 1983 çулхи май-июнь уйăхĕсенче хуласемпе ялсене тирпей-илем кĕртмелли, санитари тĕлĕшĕнчен таса тытмалли икĕуйăхлăх ирттерме йышăннăччĕ. Çак икĕуйăхлăха хутшăнса мĕнле мероприятисем туса иртттернипе интересленсе эпир, рейд бригаа-

[17] Коммунизм ялавĕ, 1983, июлĕн 19-мĕшĕ.

[18] Кая юлсан, каю шăтать... — Хĕрлĕ ялав (Вăрмар), 1983, июлĕн 16-мĕшĕ.

дин членĕсем, Чупай ялĕнче пултăмăр»[19]. Паллах, илсе кăтартнă пуçлавсене мухтамаллиех çук. Вĕсем иккĕшĕ те пĕрешкелтерех. Кунсăр пуçне, рейд бригади хăй çинчен каланине кĕртсе лартни кирлех те мар.

Ун çинчен çырма пачах юрамасть, тесшĕн мар эпир. Сăлтавĕ çеç пултăр. Акă, «Малтисен хӳттинче» корреспонденцире çакăн пек абзац пур: «Эпир Мартьянов ячĕпе хисепленекен колхоза кăнтăрла иртсен виçĕ сехетре пытăмăр. Комбайнсем патĕнче никам та пулманни тĕлĕнтерчĕ. Тен, вĕсем пурте юсавлă?»[20] Кунта вара пурте выранлă: рейд бригади хуçалăха хăçан çитнине асăнни юсав бригадине тăр-кăнтăрла та тупма çуккине кăтартать.

«Пичет, телевиденипе радио материалĕсем вулакана пурнăçа тарăн тишкернипе, шухăша фактсемпе çирĕплетнипе, шухăшпа сăмах çивĕчлĕхĕпе хăй майлă çавăрмалла, ĕнентермелле...», — палăртса хăварнă КПСС Центральнăй Комитечĕн июньти Пленумĕн постановленийĕнче[21]. Рейд материалĕсен пурин те тенĕ пекех пĕрешкел çитменлĕх пур: мĕн курнине туллин çырса кăтартас, ыйтусене çивĕччĕн лартас тĕллев хыççăн кайса, авторсем чылай чухне чĕлхе тирпейлĕхĕ çинчен манаççĕ. Коллектив çырнă материал чĕлхи уйрăмах уçăмлă, таса та витĕмлĕ пулмалла. Тӳрĕ те татăклă шухăша палăртма хĕрӳллĕ сăмах çеç çителĕксĕр, кирек кам та ăнланмалла таса литература чĕлхи кирлĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ, Чăваш АССР Ялхуçалăх министерстви, Халăх контроль комитечĕ тата Шупашкарти телестуди ĕççи вăхăтĕнче Вăрнар районĕнче пĕрлехи рейд ирттереççĕ. Тĕплĕ тĕрĕслев тарăн анализ тума май панă. Çакă рейд бригадин «Пĕрчĕренех çухалать» статйинчен уçăмлăн курăнать[22]. Пĕр катка пыл çине пĕр кашăк тикĕт тенĕ пек, материал пахалăхĕ чĕлхе тумхахĕсемпе иксĕлет. Чи малтан кунта пĕр предложенирех пĕр сăмаха е пĕр тĕпрен пулнă сăмахсене икĕ хут каланине асăрхатпăр: 1. «Запас пайсене вăхăтра пухса хунă **пулсан**, хиртех юсама **пулатчĕ»[23]. 2. «Тухăç** гектартан 30 центнер ытла **тухнă...»**. Ку çитменлĕхе пĕтермелли вариантсем темиçе те: 1. Запас пайсене вăхăтра хатĕрлесен, хиртех юсама пулатчĕ. 2. Тырă гектартан 30 центнер ытла тухнă...

Сăмаха предложенире хăй выранне лартманни — тепĕр çитменлĕх. «**Райсельхозтехникăна кирлĕ** деталь илме ком-

---

[19] Çине тăрса ĕçлемелле. — Хĕрлĕ ялав (Вăрмар), 1983, июлĕн 19-мĕшĕ.
[20] Коммунизм ялавĕ, 1979, июлĕн 20-мĕшĕ.
[21] Çавăнтах, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.
[22] Çавăнтах, авг. 3-мĕшĕ.
[23] Кунта тата малалла та сăмахсене эпир хура шрифтпа паллă турăмăр. — И. Т.

байнерăн хăйĕн кайма тивнĕ». Деталĕ кама кирлĕ? Иккĕленмелли çук, комбайнера. Предложенири сăмахсен йĕрки тăрăх, деталь райсельхозтехникăна кирлĕ, имĕш. Пирĕн шутпа, ку предложенире сăмахсен йĕрки урăхларах пулмалла: «Кирлĕ деталь илме райсельхозтехникăна комбайнерăн хăйĕн кайма тивнĕ». Тепĕр предложени: «Вĕсем ĕççи пуçланнăранпа **2 пин центнершар ытла тырă çапса** тĕшĕленĕ». «2 пиншер центнер» кирлĕччĕ. -Шар, -шер аффикссем хисеп ячĕ çумне хушăнаççĕ.

Кирлĕ мар çĕртенех сăмаха нумайлă хисеп формине лартнине ырлаймăн. «Акă, кĕрхи тулă пуссинче **çумкурăксем тырăран** нумайрах». «Ана та пулин комбайнерсем пысăк **çухатусем** туса пухса кĕртеççĕ». Ку предложенисенче **«нумайрах»**, **«пысăк»** сăмахсем хăйсемех, -сем аффикссăрах, нумайлăха палăртаççĕ. Çавăнпа «çумкурăк нумайрах», «пысăк çухату» сăмах çыхăнăвĕсем вырăнларах.

Хаçат, телевиденипе радио валли рейд материалне оперативлă хатĕрлеме тивет. Васканă май текста акă мĕнлерех предложенисем умлă-хыçлах кĕре-кĕре каяççĕ: «...Тырă алламалли, типĕтмелли **чылай** агрегат юсавсăр. **Чылай** уйрăмсенчи йĕтемсенче электричество çук. Хуçалăхри 23 комбайнран **чылайăшĕ** ĕçсĕр ларать...»[24]. Мĕнех калăн, чĕлхе чухăнлăхĕ материал витĕмлĕхне ўстерес çукки кирек кама та паллă.

Тепĕр тĕслĕх. «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн рейд бригади «Уй-хире органикăллă удобренисем кăлармалли икĕуйăхлăх пырать» рубрикăпа «Ячĕшĕн кăна ĕçлесен» статья пичетлерĕ[25]. Калăпăшĕпе пĕчĕк мар вăл. Материалăн çуррине ытла рейда тухмасăрах, ялхуçалăх управленийĕн сводкисем тăрăх çырнă, унта цифра çине цифра чыхса тултарнă. Статья чĕлхи вара ытла та пуклак. Вăл çапла пуçланать: «Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ĕççыннисем пĕлтĕр кашни гектартан вăтамран 17,3 центнер тĕштырă, 37 центнер çĕрулми, 126 центнер пахчаçимĕç тата 1,4 центнер хăмла çеç пухса кĕртнĕ». Ку предложение вуласан, ирĕксĕрех çакнашкал ыйтусем тухса тăраççĕ: 1. Ĕççыннисем е ялхуçалăх ĕçченĕсем? Тен, ку сăмахсем кирлех те мар? 2. «Центнер» сăмаха пĕр предложенирех темиçе хут çырни вырнаçуллă-ши? 3. «Çеç» татăк ялхуçалăх культури ячĕ е виçе единици çумĕнче тăрсан тĕрĕс?

Акă, тишкерекен предложенин юсаса çырнă пĕр варианчĕ: «Хĕрлĕ Чутай районĕнче пĕлтĕр гектар пуçне тĕштырă 17,3 центнер, çĕрулми 37, пахчаçимĕç 126, хăмла 1,4 центнер çеç пухса кĕртнĕ».

Тепĕр предложени: «Юлса пынин сăлтавĕсене тишкерсе тухнă чухне района ертсе пыракансемпе хуçалăх руководите-

---

[24] Вăхăт кĕтмест: Хаçат редакцийĕ Чăвашрадиопа пĕрле ирттернĕ рейд. — Коммунизм ялавĕ, 1983, авг. 4-мĕшĕ.

[25] Коммунизм ялавĕ, 1979, февр. 4-мĕшĕ.

лĕсем тĕп сăлтав çанталăк условийĕсем япăх пулнинче теççĕ». Юсасан, предложени çапларах пулмалла пек: «Района ертсе пыракансемпе хуçалăх руководителĕсем ĕнентернĕ тăрăх, хĕрлĕ чутайсем юлса пынин тĕп сăлтавĕ çанталăк условийĕсем япăх пулнинче». Тĕплĕ тишкерменрен çавăн пек шухăш патне пырса тухнă та ĕнтĕ.

Тата темиçе предложение сăнар:

1. «Пурĕ 44 пин тонна тислĕк кăларма палăртнă. Чылай хуçалăхсенче ку плансене (?) часах тултараççĕ. «Октябрь» совхозра 5 пин, «Присурский» совхозра 8 пин ытла, «Искра» колхозра та çавăн чухлех хатĕрленĕ». Мĕн тата мĕнле виçепе? 2. «Выльăх пăхакансем вара тислĕке мĕнле кирлĕ çапла кăларса тăкаççĕ». «Мĕнле май килнĕ, çапла»,—тесшĕн пулнă автор. 3. «Органикăлла удобренисем хатĕрленин эффективлăхĕ çинчен калаçнă май, тепĕр хут Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз опытне асăнас килет». Автор çапла каласшăн пулнă, ахăр: «...Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз опытне тепĕр хут асăнас килет». 4. «Пирĕн ялти кашни килте кĕл хĕл каçипе пĕрер гектар çине тăкмалăх пуçтарăнать, районти сухаламалли мĕнпур çĕрсем çине сапма çитет вĕт!» Иккĕленмелле: пĕр ял кĕлĕ пĕтĕм района çитейĕ-ши? Кĕле ытти ялсенче те пуçтармалла пулĕ...

Статьяра çине-çинех çакнашкал сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулатпăр: «...Çанталăк условийĕсем япăх пулнинче теççĕ», «...япăх мар темелле», «...тăватшар кăна темелле», «...çу йĕпе-сапаллă пулчĕ терĕмĕр», «...туса илмелле тенине пĕлтереççĕ» т. ыт. те. Пĕрешкел сăмах çаврăнăшĕсемпе йăлăхтармалла темиçе хут усă курни статья чĕлхи чухăннине çирĕплетет.

Хаçатри материал ячĕн икĕ тĕллев: пĕрремĕшĕ—автор мĕн çырнипе вулакана кăсăклантарса ярасси; иккĕмĕшĕ — материалăн тĕп шухăшне, тема тĕшшине палăртасси. Хаçатри материал ячĕ — публицистика произведенийĕн уйрăлми пайĕ, авторăн пĕрремĕш сăмахĕ. Малтанхи сăмах нумая пĕлтерет. Калаçăва вăл пуçлать. Эппин, вулакан кăмăлĕн пирвайхи хусканăвĕ унран килет. Çавăнпа заголовок пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ана тупасси — рейд бригади тĕплĕн шухăшласа тумалли ответлă ĕç.

Шел пулин те, хăшĕ-пĕри кĕске те уçăмлă ят шырама ӳркенет. «Ĕç» тата унран пулнă ытти сăмахсенчен тăракан заголовоксем çине-çинех куç тĕлне пулаççĕ: «Ĕçре йĕрке пулмасан...», «Ĕçсене хăвăртлатмалла», «Ĕç ĕçлемесĕр ӳсĕнмест» т. ыт. те. Рейд материалĕсен йăлăхтарса çитернĕ кичем заголовокĕсене илсе кăтартар: «Вăхăт васкатать», «Вăхăт ыйтать», «Вăхăтра юсамалла...», «Хуçа пулмасан...», «Хуçасăрлăх хуçаланать», «Хуçа çуккине пула», «Ответлăха

туймаççĕ», «Ответлăха туймасан», «Ответлăха кашни туйтăр» т. ыт. те.

«Коммунизм ялавĕн» рейд бригадисем материал валлиат тимлĕн шыраççĕ. Акă витĕмлĕ заголовоксен тĕслĕхĕсем: «Шултăрканă пучах çĕре тăкăнать», «Пĕри — акара, çиччĕн паркра», «Вите витĕр çил вĕрет», «Пĕри юсать, тепри пăсать», «Лайăххи савăнтарать, çитменлĕх кăмăла пăсать» т. ыт. те.

Заголовоксенче халăх сăмахлăхĕпе усă курни выранлă: «Сылтăм алă мĕн тунине сулахай алă пĕлмен чухне», «Ир такăнсан — каçчен», «Тырă çава сассипе пиçет», «Хĕл хырăмĕ аслă»... Рейд материалĕн ячĕ темăна палăртмалла, кăсăклантаруллă та янравлă пулмалла.

«Коммунизм ялавĕ» тĕп заголовокпа юнашар хушма заголовок парать. 1982 çулхи июлĕн 25-мĕшĕнче вăл «Капансем мĕншĕн сахал?» рейд корреспонденцийĕ пичетлерĕ. Тĕп заголовок айне хаçат çакăн пек хушма заголовок вырнаçтарчĕ: «Комсомольски районĕнчи хуçалăхсем утă хатĕрлес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ». «Пĕр-пĕрне ура хураççĕ» корреспонденцин хушма заголовокĕ — «Çĕмĕрлери тырă йышăнакан пункт мĕншĕн начар ĕçлет?»[26] Куратпăр, хушма заголовоксем корреспонденцисен тĕп содержанине уçса параççĕ.

Юлашки çулсенче хушма заголовок выранне тĕп заголовокри предложенин тăсăмне лартнине курма пулать. Çакă тĕп заголовокри шухăша палăртса калама май парать. Тĕслĕхрен, «Советская Чувашия» хаçат рейд корреспонденцине «Уйсем çумкурăк ăшне путнă» ятпа пичетленĕ, хушма заголовокра вара çавнашкал хуçасăрлăх ăçтине пĕчĕкрех кегльлĕ курсивпа (алăпа çырнă чухнехи евĕр тайăлтарнă пĕчĕкрех виçеллĕ шрифтпа) наборласа пĕлтернĕ: «Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Путь коммунизм» колхозра»[27].

Хаçат ĕçĕнче яланлăха юравлă улшăнми рецептсем çук, анчах хăшпĕр правилăсене пĕлни алçырăвне пичете хатĕрлессине çăмăллатма, йăнăшсем тăвасран асăрханма пулăшать. Рейд материалне çыраканĕсен çакна асра тытмалла:

1. Мĕн çинчен лайăх пĕлетĕр, çавăн çинчен кăна çырăр. Хăв куçупа курни, хăв хăлхупа илтни, çынсемпе паллашни тата вĕсемпе тĕплĕн калаçни ыйтăва тарăн, интереслĕ тата шухăша ямалла çутатма май параççĕ.

2. Рейд материалне çырнă чухне унăн тĕллевне пĕр самантлăха та манмалла мар: ку вăл—çынсене сăмахпа, тепĕр чухне ĕçпе пулăшасси.

---

[26] Коммунизм ялавĕ, 1982, авг. 18-мĕшĕ.
[27] Зарастают поля сорняками: В колхозе «Путь коммунизма» Красночетайского района. — Советская Чувашия, 1983, 4 июня.

3. Кирек хăш материалта та фактсемпе пулăмсене тĕрĕс кăтартмалла. Рейд бригади ĕçĕн сулăмлăхĕпе витĕмлĕхĕ чи малтан çакăнтан килеççĕ.

4. Фактсемпе пулăмсене парти куçĕпе пăхса хакламалла; вĕсене тимлĕн тишкерни, сăлтавĕсене тĕрĕс палăртни кирлĕ.

5. Фактсемпе пулăмсем хыçĕнче хамăр çынсем тăнине, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ ӳсĕмлĕ те, тепĕр чухне ăнăçсăр та пулма пултарнине пĕр самантлăха та манмалла мар.

6. Мĕн курнине, пĕтĕмлетӳсемпе сĕнӳсене кĕскен те ăнланмалла çырмалла.

7. Çын ячĕпе ашшĕ ятне, хушаматсене, предприятипе организаци, колхозпа совхоз, вырăн ячĕсене пăтраштарасран тимлĕн асăрханмалла.

8. Цифрăсене тĕрĕс кăтартмалла. Виçев единицисем пĕрешкеллисем пулччăр. Килогрампа центнера — кĕрепенккепе тата пăтпа, метра тата километра — аршăнпа тата çухрăмпа пăтраштарас мар.

9. Алçырăвĕн культури абзацсене тĕрĕс тума хистет. Çĕнĕ шухăша çĕнĕ йĕркерен пуçласа çырни вырăнлă. Çавăнпа пĕрлех абзацсем калăпăшĕпе пĕр пекрех пулни килĕшӳллĕрех.

10. Рейда хутшăннă корреспондентсен материал вĕçĕнче алă пусмалла. Хаçатра рейд бригади членĕн хушамачĕпе пĕрлех ячĕн пуçламăш саспаллийĕ те кирлĕ. Унтах çыраканĕ кам пулса, ăçта ĕçленине кăтартмалла. Кăшт аяларах кашнин адресне, почта индексĕнчен пуçласа, тĕрĕс кăтартмалла, хушаматпа ята тата ашшĕ ятне кăтартма манмалла мар. Çыру вĕçĕнче сулахай енче хăçан çырнине палăртмалла.

11. Кирек хăш материала та кăвак е хура чернилпа çырас пулать. Урăх тĕслĕ чернилпа çырни куçа йăмăхтарать, вулас килми тăвать. Кăранташпа çырнине те вулама йывăр.

12. Текста листан пĕр енне кăна çырăр. Çапла тусан, материала юсаса пичете хатĕрлеме меллĕрех. Ку правилăна шута илни редакци сотрудникĕн ĕçне çăмăллатма та, хăвăртлатма та пулăшать.

13. Кашни листан сулахай хĕррине 2—3 см сарлакăш пушă вырăн хăвармалла. Предложение е унăн пайне урăхлатмалла пулсан, редакци сотрудникĕ çав пушă вырăна çырса хурать.

14. Тирпейлĕ почеркпа, кашни саспалли уçăмлăн курăнмалла çырмалла, çăмăллăн вуламалла пултăр. Йĕркесем хушшине тепĕр йĕрке çырмалăх вырăн хăварас пулать. Редакци сотрудникĕ хушса çырмалли асăрхасан, çакна валли вырăн тупăнтăр.

15. Редакцие ярса париччен алçырăвне тепĕр хут тимлĕн вуласа тухмалла, унсăрăн хаçата йăнăш кĕрсе кайма та пултарать.

16. Рейд бригадин корреспонденцийĕ, репортажĕ, статйи— васкавлă материал, çавăнпа ăна çийĕнчех çырмалла, хаçат редакцине хăвăрт çитерсе памалла.

«Хаçатри е журналти кашни статьяна, радиопа телевиденин кашни передачине çынсемпе тимлĕн калаçни вырăнне хумалла, çынсем фактсене тĕрĕс тата вăхăтра çутатса панине çеç мар, вĕсене тарăн тишкерсе тухнине, тĕплĕн пĕтĕмлетнине кĕтеççĕ»,— кăтартса хăварнă партин XXVI съездĕнче[28]. Паллах, çак кăтартăва рейд материалĕсене хатĕрленĕ чухне те асра тытмалла. Вĕсенче пуш сăмах çаптарни пулмалла мар. Ун вырăнне рейд бригади мĕн курнин тĕслĕхĕсене, конкретлă фактсене илсе кăтартмалла. Материала литература чĕлхипе çырмалла, сăнарлă танлаштарусемпе, витĕмлĕ эпитесемпе метафорăсемпе, вырăнлă ăсларăшсемпе тата каларăшсемпе усă курмалла. Коллективлă материал шухăш çĕнĕлĕхĕпе тата чĕлхе çивĕчлĕхĕпе уйрăлса тăмалла.

Ĕçялкорсен рейдне ирттерессин йĕркисем çинчен маларах каланинчен çакăн пек пĕтĕмлетӳсем тума пулать:

1. Рейда пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтупа ирттермелле. Лайăххине пропагандăлама е çитменлĕхсемпе кăлтăксене пĕтерме уйрăм корреспондент прессăра çырса кăларниех çителĕклĕ пулсан, бригада йĕркелесе чăрманма кирлĕ мар.

2. Рейд пуласси çинчен хаçатра пичетлесе, ятарласа бюллетень кăларса, плакат е лозунг çырса пĕлтермелле. Сăмахран, Комсомольски районĕнчи «Октябрь ялавĕ» хаçат пулас рейд çинчен 1967 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче çапла хыпарланă:

«Маршрутлă рейд пуçланать.

Тĕрĕслев тĕллевĕ — калчасене мĕнле пăхса ӳстереççĕ, тырпул пухса кĕртме, патшалăха ялхуçалăх продукчĕсем сутма мĕнле хатĕрленеççĕ.

Халăх контролĕн районти комитечĕ тата «Октябрь ялавĕ» хаçат редакцийĕ маршрутлă рейд ирттереççĕ. Унăн тĕллевĕ— колхозсенче калчасене пăхса ӳстерес, тырпул пухса кĕртме тата патшалăха ялхуçалăх продукчĕсем сутма хатĕрленес ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕслесси. Рейд çак маршрутсемпе иртет: пĕрремĕш маршрут — Ленин ячĕпе хисепленекен, «Красный маяк», Ульянов ячĕпе хисепленекен, «Восток» колхозсем, иккĕмĕш маршрут — «Алга», «Дружба», «Заветы Ильича», «Красный Октябрь» колхозсем, виççĕмĕш маршрут — «Урожай», «Заря», «Луч» колхозсем, тăваттăмĕш маршрут — «Россия», «Знамя», «Гигант» колхозсем.

[28] КПСС Центральнăй Комитечĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XXVI съездне туса панă отчет тата партин шалтипе тулашри политикин черетлĕ задачисем: КПСС Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ Л. И. Брежнев 1981 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче тунă доклад.— Коммунизм ялавĕ, 1981, февр. 24-мĕшĕ.

Маршрутлă рейда халăх контроль групписен председателĕсене, членĕсене, «Ҫомсомол прожекторĕ» штабĕсен начальникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, колхоз механикĕсене, ялти корреспондентсене явăçтарассĕ.

Тĕрĕслев итогĕсене колхозсенчи халăх контролерĕсен канашлăвĕсенче колхоз председателĕсемпе, трактор бригадисен, уй-хир бригадисен бригадирĕсемпе пĕрле сӳтсе явассĕ тата халăх контролĕн районти комитетĕнче пăхса тухассĕ».

Рейдсем ирттермелли плана та кĕскен хаçатра пичетлени вырăнлă. Акă, «Пионер сасси» Çĕмĕрле районĕнчи Хĕрлĕ Октябрьти вăтам шкулти учкомăн вĕренӳ çулĕнчи иккĕмĕш çурçулта пурнăçлама палăртнă ĕç планĕнчен илнĕ йĕркесене пичетлет:

«Уроксене çӳренине, вĕренекенсем хăйсене еплерех тыткаланине, шкул тумне тăхăннине тăтăшах тĕрĕслемелле.

Вĕренӳ шайне, киле панă ĕçсен пахалăхне, дневниксемпе учебниксене мĕнлерех тыткаланине тĕрĕслесе рейдсем ирттермелле.

Шкулти сĕтел-пуканпа, ĕç хатĕрĕсемпе, кабинетсемпе тирпейлĕ усă курнине пĕлме тăтăшах классемпе кабинетсенче пулмалла.

Рейд, тĕрĕслев кăтартăвĕсене «Комсомол прожекторĕпе» «Колючка» хаçатра çутатса памалла».

Кусем — юнкорсен рейчĕсене ирттермелли темăсем. Вĕсене пичетре пĕлтерни рейд бригадисене ĕç планĕсем тунă чухне пулăшу кӳрет.

4. Рейд бригадинче районтан е республикăран пынă ответлă çынсемпе журналистсем çеç пулни сахал, унта вырăнти рабкорсемпе ялкорсене, производствăра вăй хуракансене хутшăнтармалла. Çакă объекта тĕплĕн тишкерме, тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума май парать.

5. Бригадăна ертсе пыма журналиста, е штатра тăман корреспондента, е пултаруллă рабкора, е ялкора уйăрма сĕнетпĕр. Çакă редакци заданине малтан пуçласа вĕçне çитиех ăнăçлă пурнăçлама май парĕ.

6. Обществăлла тĕрĕслеве тухиччен унăн тĕллевĕсемпе задачисене тĕрĕс палăртмалла, вĕсене бригада членĕсен пурин те пĕлсе тăмалла.

7. Япăх участоксене çеç мар, лайăххисене те тĕрĕслемелле. Хаçат корреспонденчĕсем нихăш участока та куçран вĕçертмелле мар.

8. Фактсене тĕрĕсленĕ чухне те, рейд материалне çырса хатĕрленĕ чухне те обществăлла тĕрĕслевçĕсен пуçарулăх кăтартмалла, активлă пулмалла.

9. Рейдсен бригадин материалне хаçатра оперативлă пичетлесе кăлармалла. Апла тума май килмесен, унти фактсемпе умстатьяра е урăх материалта усă курмалла.

Рейд ирттерсе унăн материалне хаçатра пичетлесе кăларнипех ĕç пĕтмест. Малалла рейд бригади материалĕн витĕмлĕхĕшĕн, унти сĕнӳсене пурнăçа кĕртессишĕн, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешӳ пуçармалла.

ТАВАТТАМĔШ СЫПАК

## РЕЙДСЕН ВИТĔМЛĔХĔШĔН КĔРЕШМЕЛЛИ МАЙСЕМ

Массăллă информаци хатĕрĕсен витĕмлĕхĕ юлашки вăхăтра палăрмаллах ӳсрĕ. Хаçат, телевиденипе радио материалĕсем тăрăх мĕнле мерăсем йышăнни çинчен ответсем тăтăшах килсе тăраççĕ. Тĕслĕхрен, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ кăçал сакăр уйăхра 10.259 çыру, çак шутра августра 1308 çыру илчĕ. Мĕнпур материалсен 66 процентчĕпе хаçатра усă курнă. Министерствăсемпе ведомствăсен, районсемпе хуласенчи парти, совет тата профсоюз органĕсен, предприятисемпе строительство организацийĕсен, колхозсемпе совхозсен, учрежденисен руководителĕсем пичетленнĕ критикăлла материалсем тăрăх мĕнле мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерекен 845 ответ ярса пачĕç»[1].

1983 çулхи çичĕ уйăхра «Советская Чувашия» хаçатра критика материалĕ 250 ытла пичетленнĕ, вĕсем тăрăх 376 ответ илнĕ[2]. «Советская Чувашия» ялкорĕсемпе халăх контролерĕсенчен тăракан рейд бригади Куславкка районĕнчи «Козловский» совхозра тĕрĕслев ирттерет, ун çинчен 1983 çулхи июнĕн 18-мĕшĕнче хаçатра «Ĕçе йĕркелекен çук пулсан» корреспонденци пичетлесе кăларать. Çак корреспонденцие вăраха ямасăрах совхозра производство канашлăвĕнче сӳтсе явнă, рейд бригади илсе кăтартнă фактсем тĕрĕссине палăртнă. Çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес тĕллевпе дирекци ятарласа приказ кăларнă. Хăйĕн ĕçне сӳрĕк туса пынăшăн механизациленĕ паркăн инженерне С. П. Николаева строгий выговор панă.

Совхоз директорĕ А. Леонов редакцие çапла пĕлтерет: «Вĕтетекен параппанĕ ваннă пирки косилка-измельчитель ĕçлеймен. Халĕ ăна юсаса хута янă. Нумай çул ӳсекен курăксене утăлăх çулатпăр. Витнĕ йĕтем çинче утă типĕтмелли установкăна ĕçе кĕртрĕмĕр. Утă хатĕрлессине хăвăртлатма пур майсемпе те тăрăшатпăр. Курăк çăнăхĕ 125 тонна хатĕрленĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлемелли плана пур енĕпе те тултаратпăр»[3].

---

[1] Ĕçялкорсене пĕлсе тăма.— Коммунизм ялавĕ, 1983, сент. 20-мĕшĕ.
[2] См.: Действенность печатного слова: Передовая статья. — Советская Чувашия, 1983, 23 авг.
[3] Советская Чувашия, 1983, 6 июля.

Предприятисен, колхозсемпе совхозсен, учрежденисемпе организацисен, министерствăсемпе ведомствăсен, партипе совет органĕсен руководителĕсем пичетри критикăна тивĕçлипе хаклаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерме мĕн-мĕн туни çинчен вулакансене вăхăтра пĕлтереççĕ. Анчах пурин пирки те çакна калаймăн. Хăшпĕр руководительсем хаçатри критикăлла материала асăрхамանçи пулаççĕ, ăна ним шарламасăр ирттерсе яма пăхаççĕ. Теприсем ячĕшĕн ответ панипе çырлахасшăн. Сăмахран, 1983 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче «Советская Чувашия» хаçатра «Плансем тата чăнлăх» ятпа рейд материалĕ çапăнса тухнă. Ку материалта Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» совхозра тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене уçса кăтартнă. Совхоз дирекцийĕ хаçатри критика пирки пĕр уйăх нимĕн те шарламан, редакцие тырă вырма тухсан тин ответ панă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн 1983 çулхи июньти Пленумĕн постановленийĕнче çапла палăртса хăварнă: «Министерствăсемпе ведомствăсен, совет тата общество организацийĕсен руководителĕсен управлени органĕсен ĕçĕ çинчен, татса паракан ыйтусен характерĕ çинчен прессăна тăтăшах пĕлтерсе тăмалла. Вĕсем пичет, телевиденипе радио материалĕсем çине тĕплĕн ответ пама, йышăннă мерăсем çинчен редакцисене вăхăтра пĕлтерсе тăма тивĕç»[4].

Эппин, партипе профсоюз комитечĕсем, министерствăсемпе ведомствăсен коллегийĕсем кадрсене пичет материалĕсене шута илме вĕрентсе воспитани парассине вăйлатмалла; ячĕшĕн кăна хуравлакансене, ыйтăва татса парассине тăсса яракансене, критикăна хĕсекенсене тата уншăн хĕсĕрлекенсене çирĕп ответ тыттармалла.

Рейд бригадин тĕп тĕллевĕ пире малалла кайма чăрмантараканнине, çитменлĕхсемпе кăлтăксене тăрă шыв çине кăларнинче кăна мар, вĕсене пĕтерме пулăшнинче те. Критика кахала, бюрократа, кукăр алăллине тĕрĕс çул çине тăратсан, ун çинчен хаçатра çырса пĕлтермеллех. Тивĕçлипе критиклени коллектива ĕçе лайăхрах йĕркелеме пулăшсан, вулакансене ун çинчен хыпарламасăр хăвармалла мар. Çитменлĕхсене пĕтерни те, хуçалăх ĕçĕ лайăхланни те — пĕтĕм коллектив çĕнтерĕвĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл хаçатăн, ĕçялкорсен çĕнтерĕвĕ пулать.

Рейд материалĕн витĕмлĕхĕшĕн кĕрешесси — чи малтан редакци ĕçĕ. Çав материал витĕмлĕхĕ хаçатăн активлă позицийĕнчен, материал пичетленнĕ хыççăн мĕн-мĕн туни çинчен вулакансене пĕлтерсе тăрассине йăлана кĕртнинчен, парти комитечĕсем пичетри сăмах витĕмлĕхĕшĕн кĕрешме редакцисене пулăшнинчен килет. Хаçат редакцийĕ рейд ирттернĕ та-

---

[4] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

та унăн материалне хатĕрлесе пичетленĕ вăхăтра та, материал пичетленсе тухнă хыççăнхи тапхăрта та активлă пулмалла. Материал витĕмлĕхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пичет органĕ тĕп вырăн йышăнмалла. Тĕпрен илсен, ăнăçу унран хăйĕнчен килет.

Хаçат редакцийĕн активлă позицийĕ рейд ирттернĕ тата унăн материалне хатĕрлесе пичетленĕ вăхăтра çакăнта палăрмалла:

1. Тĕрĕслев темине тĕрĕс суйласа илмелле. Вăл партипе совет органĕсем умĕнче хуçалăхпа культура строительстви енĕпе тăракан задачăсенчен тухса тăмалла, халăхăн паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе тачă çыхăнмалла. Рейда обществăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ, çивĕч те питĕ кирлĕ ыйтупа йĕркелемелле. Вак-тĕвекшĕнех рейд ирттерни çерçи тытасшăн тупă авăрлани евĕрлĕ. Сăмахран, ванчăк кантăкран витере çил вĕрнине тĕрĕслесшĕнех ялкорсен бригадине ертсе тухма кирлĕ мар. Складран кĕленче çыртарса илмелле те лартса хумалла — ĕçĕ те пĕтрĕ.

Канашри «Коммунизмшăн» пĕрлештернĕ хаçат редакцийĕ пĕр çулхине хулари тата районти предприятисенче производство культурине тĕрĕслеме рабкорсен маршрутлă рейдне ирттерчĕ. Ку тема вара чăннипех пысăк пĕлтерĕшлĕ. Производство культурипе эстетики ĕçе ăслăлăх вĕрентнĕ пек йĕркелессин уйрăлми пайĕсем пулса тăраççĕ. Рабочисем валли тивĕçлĕ условисем туса пани ĕç тухăçлăхне, продукци пахалăхне ӳстерме, унăн хăйхаклăхне чакарма пулăшать.

2. Ĕçялкорсемпе журналистсем рейдсен тĕрлĕ тĕсĕпе усă кураççĕ. Хăшне суйласа илесси умра мĕнле тĕллевсем тăнинчен килет. Рейд витĕмлĕхĕ çав ыйтăва тĕрĕс татса парассипе çыхăннă. КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ 1977 çулта «Ял халăхĕн культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессине малалла лайăхлатмалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çав çулхи сентябрь-октябрь уйăхĕсенче республикăра культура учрежденийĕсем хĕле мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме массăллă рейд йĕркелерĕç. «Рейд вăхăтĕнче... воскресниксем ирттернĕ, строительствăпа юсав ĕçĕсене хăвăртлатнă, оборудовани туяннă, культура работникĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма мерăсем йышăннă»[5]. Эппин, рейд бригадисем тĕрĕслевпе кăна çырлахман, ыйтусене татса пама тӳреммĕнех хутшăннă. Ку вăл тӳреммĕн хутшăну рейчĕ пулать. Культура учрежденийĕсене васкавлă пулăшу кирлине курса, çавăн чухне ĕçялкорсем, комсомолецсем хăйсем умĕнхи тĕллеве юравлă тĕс суйласа илнĕ — тӳреммĕн хутшăну рейчĕсем ирттернĕ.

---

[5] Коммунизм ялавĕ, 1979, авг. 16-мĕшĕ.

3. Хаçатри материал пахалăхĕ — унăн витĕмлĕхĕн никĕсĕ. Материал пахалăхĕ вара рейд бригади хăйĕн материалне хăш жанрпа çырса пичетлемеллине тĕрĕс палăртнинчен пуçланать. «Советская Россия» 1980 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнче «Йĕлтĕрсем çуркунне тин пулаççĕ» ятпа вырăнта хатĕрленĕ материал пичетлерĕ. «Коммунизм ялавĕ» ăна 1981 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче куçарса çапса кăларчĕ. Ку материал айне СССР спорт мастерĕ В. Криушов, «Чувашэнерго» инженерĕ В. Букин, «Советская Россия» хаçат корреспонденчĕ В. Овчаров алă пуснă. Авторсем спорт таварĕсен Шупашкарти магазинĕнче, Çĕнĕ Шупашкарти «Турист» спорт магазинĕнче, «Роскультторг» базăра, тивĕçлĕ организацисенче пулнă, вичçĕш пĕрле тĕрĕсленĕ — пĕррелĕх рейд ирттернĕ. Рейд материалĕнче тĕрĕслев мĕнле пулса иртнине йĕркипе, тĕплĕн ўкерчĕклесе кăтартнă. Авторсем хăйсен куçĕпе курни çинчен çыраççĕ. Йĕлтĕр кўрсе килсе сутасси епле пулса пынине вулакан куçĕ умне уçăмлăн, мĕнле пулса пырать, çапла кăларса тăратаççĕ вĕсем. Кунта рейд бригади репортаж жанрĕпе усă курнă. Ку жанр вулакана та пурнăçра мĕн пуррине хăй куçĕпе курнă пек тума май панă. Çавăнпа пĕрлех бригада чăнлăха тишкерет, пĕтĕмлетўсем тăвать, сĕнўсем парать.

Пичетри материал витĕмлĕхĕ ăна мĕнлерех хатĕрленипе тўреммĕн çыхăннă. КПСС Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ Ю. В. Андропов юлташ пирĕн çынсене вĕрентсе воспитани памалли тĕрлĕ хатĕрсем шутне чи малтан пичете, радиона тата телевидение кĕртет. «Халĕ ĕç акă мĕнре: çак мĕнпур хатĕрсемпе тĕрĕсрех усă курмалла, вĕсене активлăрах, творчествăлла ĕçе кĕртмелле, çавна май, уйрăммăн илсен, совет çыннисен пĕлўпе ыйтăвĕсен шайĕ нумай ўснине шута илмелле. Кунта пирĕн вĕренмелли нумай, çак çул çинчи пирĕн тĕп чăрмавсем вара — формализм, хăнăхнă йĕркерен хăтăлайманни, хăюсăрлăх, тепĕр чухне шухăш ўркевлĕхĕ те»,—палăртнă вăл КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче 1983 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче[6].

Илсе кăтартнă сăмахсем рейд материалĕсене те пырса тивеççĕ. Бригада ячĕпе тухакан материала уйрăмах тăрăшса хатĕрлени кирлĕ. Унта хускатнă ыйтăва вулакан чĕри патне çитермелле. Партиллĕ принциплăх хаçатри кирек хăш материалăн та, çав шутра рейд материалĕсен те тĕп уйрăмлăхĕ пулса тăмалла.

Периодика пичечĕн флагманĕ «Правда» хаçат çапла вĕрентет: «Хаçатра пичетленнĕ, эфирта янăранă материалсен витĕмлĕхне ўстермелли тĕп çул вăл — çав материалсем ĕненмелле, тĕрĕс пулнинче, вĕсене ĕçе пĕлсе çырнинче. Хаçат вулакансене, телевидени передачине пăхакансене, радио итле-

[6] Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

кенсене, вĕсен ăстăнĕпе чун-чĕрине хускатсан çеç, пурнăça тарăн пĕлнипе, çĕнĕ шухăшпа, чĕрĕ сăмахпа çеç хавхалантарма, ĕнентерме пулать. Уçăмлă, ăнланмалла, ĕненмелле, хĕрӳллĕн çырмалла»[7].

Рейд материалĕсенче тарăн анализ тумалла, фактсемпе пулăмсен шалти паллисене уçса памалла. Шухăша, тезиса çирĕплетме витĕмлĕ аргументсемпе усă курмалла. Çавăн пек çырнă материалсенчен пĕри — «Сăмах панипех лăпланнă»[8]. Рейд бригадин членĕсем В. Решетников, В. Тимуков, В. Васильев комбикорм усси пысăккине, ăна хатĕрлекен предприятие туллин ĕçлеттермеллине ĕнентерме акă мĕнле аргументсем илсе кăтартнă:

1. Фуражлăх тĕштырăна хăйсем авăртса çитернипе районти хуçалăхсем çуллен 3,5 пин тонна ытла тырă усăсăр сая яраççĕ. Ку вăра районти чи пысăк хуçалăх — Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз пĕлтĕр пухса кĕртнĕ тырăран та нумайрах.

2. Район валли комбикорм государство фондĕнчен кĕтнинчен сахалрах уйăрнă.

3. Ленин ячĕпе хисепленекен, «Красный фронтовик», «Гвардеец» колхозсем пĕтĕм тырра комбикорм туса çитереççĕ. Сĕтпе аш-какай туса илмелли тата хатĕрлемелли плансене ăнăçлă тултарса пыраççĕ.

Иккĕленмелли çук, тезиса çапла ĕненмелле çирĕплетни вулакана шухăшлаттаратех.

Çĕнниçе, малта пыраканнине çирĕплетмешкĕн пулăшнипе пĕрлех рейд бригадин пире малалла кайма чăрмантаракан сăлтавсене хирĕç активлă тăмалла.

Ĕçри чăрмавсемпе çитменлĕхсене хирĕç кĕрешесси — рейд бригади ĕçĕ-хĕлĕн чи паллă уйрăмлăхĕ. Çавна май рейд бригадисем пуринчен ытла критика материалĕсем хатĕрлеççĕ. Тĕрĕс критика тĕплĕ анализ çинче никĕсленет. Кирек мĕнле критикăна та вырăнлă теме çук. Чăрмава сирсе яма, çитменлĕхе пĕтерме май пуррине шута илсе критиклемелле. Ĕç япăх пынишĕн кам мĕн таран айăплине тĕрĕс палăртмалла. Айăпличчен маĺтан тĕплĕн тишкерни кирлĕ. Чăрмавсен сăлтавĕсене, çитменлĕхсем мĕнрен-камран килнине тĕрлĕ енчен тĕрĕслемелле. Фактсемпе пулăмсен тупсăмне шыраса тупмалла, ăнланса илмелле. Рейд бригади материалĕнче тĕрĕслемен факт, йăнăш цифра, вырăнсăр айăплани пачах пулмалла мар.

Совет журналисчĕпе ĕçялкорне пысăк ĕç шанса панă. «Пирĕн парти совет журналисчĕсен нумай пинлĕ отрядне хытă шанать, вĕсен çăмăл мар ĕçне пысăка хурса хаклать», —

---

[7] Правда, 1983, июлĕн 2-мĕшĕ.
[8] Коммунизм ялавĕ, 1983, мартăн 23-мĕшĕ.

тенӗ КПСС XXVI съездӗнче[9]. Ҫакӑнпа пӗрлех вӗсен ответлӑхӗ те пысӑк. Партипе халӑх шаннине тӳрре кӑларас тесен, хаҫат-журналти кашни сӑмаха тӗплӗн шухӑшласа ҫырмалла. Телевизор куракансемпе радио итлекенсем умӗнчи сӑмах пирки те ҫавнах каламалла. Ӑсли ӑсласа иличчен, ухмаххи персе ярать, тенӗ ваттисем. Журналистсем те, ӗҫялкорсем те ун пек тума пултараймаҫҫӗ.

Тӗпрен илсен, рейд материалӗсем ҫивӗч критикӑпа ҫыхӑннӑ, критикӑна вара тӗплӗн тӗрӗсленӗ фактсем ҫинче никӗслемелле. Ҫавӑнпа пӗрлех ҫынна унӑн тивӗҫлӗхне хисеплемесӗр критиклени, латтисӗр-мӗнсӗр хӑтланни, картран тухса кайни пулмалла мар. Ҫакӑн ҫинчен манса кайни пысӑк йӑнӑшсем патне илсе пырать, журналистсемпе ӗҫялкорсене сумран кӑларать, тепӗр чухне вара пичет органӗн авторитетне те хавшатать. Пӗр тӗслӗх ҫеҫ илер. «Чӑвашколхозстрой» пӗрлешӗвӗнчи «Сельский строитель» хаҫатра 1967 ҫулхи июлӗн 31-мӗшӗнче «Сӑлтавӗ ӑҫта, вӑрттӑнлӑхӗ мӗнре?» ятпа рейд бригадин ҫивӗч критикӑллӑ корреспонденцийӗ ҫапӑнса тухать. Унта Канашри СМУ начальникӗ хӑйне пӑхӑнакансемпе хӑр-хар калаҫнине, социализмла ӑмӑртура мала тухнисене премилесси ҫинчен профсоюзӑн вырӑнти комитетӗнче сӳтсе явиччененех приказ кӑларнине, рейд бригадине транспорт енӗпе пулӑшассинчен пӑрӑннине тӗрӗс палӑртнӑ. Малалла вара авторсем илсе кӑтартнӑ фактсенчен васкаварлӑ, вырӑнсӑр пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ: «Халь хӑй йышӑнакан постра лармалӑх ӳсеймен-ха вӑл...», ҫавӑнпа «тӑрӑшуллӑ лайӑх коллектив уксахлама тытӑнчӗ». Рейд бригадин материалӗнче СМУ начальникне тӗрӗслемен фактсемпе айӑплани те пур. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ тивӗҫсӗр хурласа тӑкса, этеме кӳрентерни.

Илсе кӑтартнӑ корреспонденцие «Чӑвашколхозстрой» пӗрлешӳ совечӗн президиумӗнче тата пӗрлехи постройкомра сӳтсе явнӑ. Унта СМУ начальникӗн ҫитменлӗхӗсене уҫӑмлӑн кӑтартса хӑварнӑ, ҫавӑнпа пӗрлех корреспонденци авторӗсемпе нумай тиражлӑ хаҫат редакцийӗн йӑнӑшӗсене те палӑртнӑ.

Журналистсемпе ӗҫялкорсен критиклеме В. И. Ленинран вӗренмелле. Кӑмӑла кайни-кайманнине шута илмесӗр, хӗрхенсе тӑмасӑр, ҫивӗччӗн критикленӗ вӑл. Ку тӗллевпе шухӑша тӗп-тӗрӗс палӑртакан сӑмахсем суйласа илнӗ, ҫав вӑхӑтрах критика ҫын тивӗҫлӗхне пырса тивесрен, ӑна кӳрентересрен асӑрханмаллине асрах тытнӑ.

Элӗк районӗнчи «Ленин ҫулӗпе» хаҫатра 1983 ҫулхи июлӗн 30-мӗшӗнче рейд корреспонденцийӗ «Кам ҫине шанаҫҫӗши?» ятпа пичетленчӗ. Ульянов ячӗпе хисепленекен колхоз ӗҫӗ-хӗлӗнчи пайтах ҫитменлӗхпе кӑлтӑк ҫинчен тӗрӗс каланӑ унта. Темиҫе йӗрке илсе пӑхар: «Кӗр тыррисене ҫулса кушӑх-

[9] Коммунизм ялавӗ, 1981, февр. 24-мӗшӗ.

тармалли меслетпе пухса кĕртетпĕр, — тет колхоз агрономĕ А. Федотов. Агроном каланă пек ĕçлемелле пек. Анчах, тӳрех каламалла, халлĕхе сăмахĕ çеç-ха.

...Агрегата хире маларах кăларнă пулсан, кунти ыраша тахçанах çулса пĕтерме май пулнă. «Тыră чĕрĕрех» тесе, çулассине йĕркелеме васкаман.

...Скворцовпа Романов комбайнĕсем йĕтем çинчен парка та çитейменччĕ-ха. Вĕсем те сварка ĕçĕсем кĕтеççĕ.

...Нумай çул ӳсекен курăксем пулнă участока дискласа тухнă çеç. Кун пек ĕçлени вара çĕр акма хатĕррине пĕлтерет-ши?»...

Куратпăр, хуçалăхра ĕç унта та, кунта та уксахлать. Анчах мĕн пирки? Камсен айăпĕпе? Ĕçе лайăхлатма камăн тата мĕн тумалла? Рейд бригади çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çине ответ памасăр хăварнă. Критика адрессăр пулнăран унăн çивĕчлĕхĕ мăкалнă, тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсемпе сĕнӳсем çукран унăн витĕмлĕхĕ сĕвĕрĕлнĕ.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствипе тата Шупашкарти телестудипе пĕрле ирттернĕ рейд материалĕ «Пĕр-пĕрин çине шансан» ятлă[10]. Унăн хăшпĕр йĕркисене илсе пăхар:

«Колхозри парторганизаци секретарĕ В. Огаринов, çак ĕçре нумаях мар тесе, айăпа хăй çинчен сирме хăтланчĕ. Тĕрĕссипе, вăл секретарьте икĕ уйăх ытла. Çак хушăра хуçалăхри ĕç-хĕлпе паллашма çеç мар, çитменлĕхсене пĕтерме те пултарнă...»

«Фермăри çурт-йĕре юсаса хатĕрлессишĕн хуçалăхри инженер-строитель Г. Артемьев ответлă...».

«Хуçалăхăн Уйпуçĕнчи сĕт-çу ферминче те... ĕнесене алăпа сăваççĕ. Кунта айăпĕ — «Райсельхозтехникăн» линейнăй монтаж управленийĕнче те. Унти специалистсем аппаратсене юсама май уйăхĕнчех илсе кайнă — хăçан килсе парасси паллă мар».

«Иртнĕ хĕлле хуçалăхра выльăхсем чылай вилнĕ. Кăçал апла ан пултăр тесен, колхоз председателĕн П. Васюковăн, главнăй зоотехникăн Л. Розовăн хĕле кĕриччен юлнă кунсенче фермăсенче йĕрке тума васкавлă мерăсем йышăнмалла»...

Куратпăр, кунта авторсен бригади критика адресне, ку е тепĕр çитменлĕхе камăн епле пĕтермеллине уçăмлăн кăтартнă.

Критика витĕмлĕ пултăр тесен, ăна ĕнентерӳллĕ фактсемпе çирĕплетни кирлĕ. Ячĕшĕн кăна пĕтĕмĕшле каланă критикăран пĕр чĕптĕм те усă çук, сиенĕ вара пысăк. Ун пек ма-

---

[10] Коммунизм ялавĕ, 1983, сент. 23-мĕшĕ.

териала вырӑнта кӑшт-кашт пӑхкаласа тухӗҫ те алӑ сулӗҫ, ячӗшӗн ҫапла хуравлӗҫ: «Тӗпрен илсен, фактсем тӗрӗс...»

Рейд бригади хӑйӗн материалӗнче ӗҫе лайӑхлатма пулӑшакан конкретлӑ сӗнӳсем памалла. Ҫав сӗнӳсем специалист тиркемелле мар тӗрӗс, ҫӗнӗ те вырӑнлӑ пулмалла.

Эхер ӗҫялкорсен бригади е редакци фактсене пӑтраштарсан е урӑх енӗне ырламалла марри тусан, пирӗн шутпа, ку йӑнӑша ҫийӗнчех хаҫатра тӳрлетмелле. Апла тума ҫак сӑлтавсем хистеҫҫӗ. Пӗрремӗшӗнчен, вулакан мӗн ыйтнине тивӗҫтересси. Ӑна чӑннине кӑна пӗлтерсе тӑмалла. Иккӗмӗшӗнчен, тӗрӗс мар критикӑпа кӳреннӗ ҫын кӑмӑлне ҫавӑрасси. Кӑлӑхах никама та кӳрентерме юрамасть. Ун пек чухне ытлашши тӑрӑшнӑ журналистсем ҫав ҫынран каҫару ыйтни питӗ тӗрӗс пулать.

. Виҫҫӗмӗшӗнчен, хаҫат авторитетне сыхласа хӑварасси. Пичет органӗ пӑрахӑҫ тӑвакансем ҫинчен пӗтӗм халӑха пӗлтерет пулсан, мӗншӗн-ха унӑн пӑсӑк ӗҫне ним шарламасӑр ирттерсе ямалла? Иккӗленмелли ҫук, айӑпа йышӑнни ӑна пытарса хӑварма хӑтланнинчен чыслӑрах. Хӑйӗн йӑнӑшне йышӑнни хаҫат авторитетне чакармасть. Пачах урӑхла, вулакан ӑна ытларах шанакан пулать.

Тӑваттӑмӗшӗнчен, авторсемшӗн те, редакци коллективӗшӗн те йӑнӑша йышӑннин воспитани тӗлӗшӗнчи пӗлтерӗшӗ пысӑк пулни. Ҫакӑ партипе халӑх умӗнчи ответлӑха ӳстерме пулӑшакан чаплӑ урок пулса юлать.

Кунта большевикла пичетре маларахри вӑхӑтра ӗҫленисен опычӗпе усӑ курни вырӑнлӑ. Паллӑ, Петроградра тухса тӑнӑ «Красная газета» страницине 1918 ҫулта тӗрӗс мар информаци кӗрсе кайнӑ. Тӳрлетнине хаҫат ҫийӗнчех пичетлесе кӑларнӑ. Кунсӑр пуҫне, хаҫат редакторӗ В. Володарский вулакансенчен хӑй каҫару ыйтать[11]. «Манран килмен сӑлтавпа ӑнсӑртран пулса тухнӑ ҫитменлӗхшӗн пирӗн хаҫата вулакансенчен каҫару ыйтатӑп, — ҫырнӑ Володарский. — Эпӗ мӗн пӗлтернине шута илме тата пирӗн хаҫатра паян вырнаҫтарнӑ хыпарсене официаллӑ тӳрлетни ҫине тимлӗх уйӑрма ыйтатӑп»[12]. Володарский вулакансене хаҫатра йӑнӑш мӗнле кӗрсе кайнине те ӑнлантарнӑ. Ӑна Путиловкӑри завода митинга чӗнсе кайнӑ-мӗн, ҫавӑн пирки вӑл гранкӑсене пӑхса тухма ӗлкӗреймен.

---

[11] Володарский В. (чӑн ячӗпе хушамачӗ — Моисей Маркович Гольдштейн) (1891—1918), 1905 ҫултанпа Российӑри революци юхӑмне хутшӑннӑ. 1917 ҫултанпа Коммунистсен партийӗн членӗ. Октябрь революцийӗ ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешнӗ. Революци хыҫҫӑн — Петроградра пичет, пропаганда тата агитаци енӗпе ӗҫлекен комиссар. ВЦИК Президиумӗн членӗ. Ӑна эсер сӗмсӗррӗн вӗлернӗ.

[12] Власов В. Ответственность журналиста.—Журналист, 1967, № 2, с. 4.

Рейд материалӗн витӗмлӗхӗ ӑна полосара епле вырнаҫтарнинчен те нумай килет. Ку вӑл хаҫат номерне калӑпласа кӑларас ӑсталӑхпа ҫыхӑннӑ. Рейд материалӗсене полосара курӑнмалла та асӑрханмалла вырнаҫтарма КПСС Центральнӑй Комитечӗ органӗнчен — «Правда» хаҫатран вӗренмелле. Коллектив материалӗ ку хаҫатра кирек хӑҫан та хисеплӗ вырӑнта. Сӑмахран, «Хлеб южных степей» корреспонденцие илер (1982, авг. 3-мӗшӗ). Унӑн пысӑк пайӗ — пӗрремӗш, вӗҫӗ — иккӗмӗш полосара. Айккинче е аялта мар, полоса варринче. Ытти материалсенчен ӑна «Вахта урожая: рейд «Правды» рубрикӑпа, ятарласа тунӑ клишепе уйӑрнӑ.

Рейд материалӗсене полоса ҫине кӑларас енӗпе ытти хаҫатсен «Коммунизм ялавӗнчен» вӗренмелли ҫук мар. Редакци коллектив материалне уйрӑм автор хатӗрленинчен малараха хурать, ҫавна май час-часах пӗрремӗш полосара вырӑн уйӑрать. Рейд темипе ҫырнӑ ытти материалсене бригада материалӗпе пӗрле вырнаҫтарать, вӗсене пӗр шапкӑпа пӗрлештерет. 1975 ҫулхи июлӗн 12-мӗшӗнче рейд бригадин корреспонденцийӗ «Ӗҫҫи сарӑлса пырать» ятпа малтанхи полосара пичетленет. Унпа юнашарах ҫав темӑпа ҫырнӑ ытти материалсем: «Ҫӗнӗ тырӑ килет», «Пӗрремӗш квитанци», «Кӗрхи тулӑ выраҫҫӗ», «Выльӑх апачӗ хатӗрлеҫҫӗ», «Пур ӗҫе те — вӑхӑтра» тата «1976 ҫул шучӗпе». Вӗсен пӗтӗмӗшле тӗллевне редакци витӗмлӗ шапкӑпа палӑртнӑ: «Механизаторсем! Техникӑна пӗтӗм хӑватпа ӗҫлеттерер!»

Тӗп заголовок айӗнче рейд бригади корреспонденцийӗн содержанине кӗскен уҫса паракан аншлаг пур: «Комбайнсем ушкӑнпа ӗҫлеҫҫӗ. Пахалӑх — тӗп вырӑнта. Ҫӗнтерӳҫӗсене — парнесем. Хуҫалӑхсене пулӑшу кирлӗ». Кунсӑр пуҫне, рейд бригади хатӗрленӗ икӗ фотоӳкерчӗк валли те вырӑн тупӑннӑ полосара. Пӗр сӑмахпа каласан, шапка та, аншлаг та, материала полосара епле вырнаҫтарни те рейд бригадин корреспонденцийӗ ҫине тимлӗх уйӑрма, ӑна вуласа тухма хистеҫҫӗ.

«Коммунизм ялавӗ» ҫивӗч рейд материалне комментари парса пичетлет. Тӗслӗхрен, «Мӗн пуррипех ҫырлахнӑ» рейд материалӗ ҫумне ҫапла хушса ӑнлантарни пур:

«**Редакциpен.** Курӑнать ӗнтӗ, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи хуҫалӑхсенче выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫре резервсем сахал мар. Анчах чылай хуҫалӑхсен руководителӗсемпе специалисчӗсем вӗсене хакласах каймаҫҫӗ-ха. Ҫакӑнпа КПСС райкомӗпе райсовет ӗҫтӑвкомӗн килӗшсе пурӑнмалла мар. Ҫитменлӗхсене пӗтерес, выльӑх апачӗ ытлӑ-ҫитлӗ хатӗрлес тӗлӗшпе мӗнле мерӑсем йышӑнни ҫинчен хаҫат редакцийӗпе вулакансем ҫывӑх кунсенчех ответ кӗтеҫҫӗ».

Қалас пулать, редакци комментарийӗ рейд бригади материалӗн ҫивӗчлӗхне ӳстерет, кирлӗ мерӑсене хӑвӑртрах йышӑнма хистет.

Хаҫат «Ир такӑнсан — каҫчен» рейд материалне умстатья вырӑнне вырнаҫтарнӑ (1979, майӑн 19-мӗшӗ). Ана виҫӗ пая уйӑрнӑ, кашнин хӑйӗн ячӗ пур: «I. Ялавлӑ агрегатсем. II. Мӗн килӗшмерӗ Кунерте. III. Чи кирлине маннӑ».

Информаци тата тишкерӳ жанрӗсемпе ҫырнӑ публицистика произведенийӗн композицийӗ нумай чухне виҫӗ пайран тӑрать:

1. Пуҫламӑшӗ. Материал темипе тӗллевне кӑтартать, политика тезисӗ е лозунг кӑларса тӑратать.

2. Тӗп пайӗ. Фактсемпе пулӑмсене е проблемӑна пур енчен те тишкерет. Тӗрлӗ енӗсене (паллисене) шутласа тухать. Чи кирлине палӑртать.

3. Вӗҫӗ. Кунта пӗтӗмлетӳрен, хак панинчен, чӗнӳрен, танлаштаруран пӗри пулма пултарать. Вӗҫӗ пуҫламӑшӗпе тата тӗп пайӗпе тачӑ ҫыхӑнать, вӗсенчен тухса тӑрать.

Илемлӗ публицистика произведенийӗсен композици элеменчӗсем кӑткӑсрах, илемлӗ литература произведенийӗсенчи евӗрлӗ. Кунта вара кӳртӗм (экспозици), пулӑм е ӗҫ-хӗл тӗвӗленӗвӗ (завязка), пулӑм е ӗҫ-хӗл аталанӑвӗ, вӗҫӗ (развязка) ҫинчен сӑмах пырать.

Қаларӑмӑр, рейд материалӗсен жанрӗсем, тӗпрен илсен, корреспонденци, репортаж тата статья пулаҫҫӗ. Эппин вӗсен композицийӗнче пуҫламӑшӗ, тӗп пайӗ тата вӗҫӗ пур. Ҫакна тӗплӗн шута илет «Коммунизм ялавӗ» редакцийӗн секретариачӗ рейд материалне полосара вырнаҫтарнӑ чухне. Материал пуҫламӑшне икӗ колонка ҫине хура шрифтпа наборлаттарса, ҫӳлте сулахайра кӳртӗм тӑвать. Материал вӗҫне те ҫаплах наборлаттарса, аяла сылтӑм енне лартать. Тӗп пайне яланхи шрифтпа наборлаттарать. «Выльӑх-чӗрлӗхрен продукци нумайрах илер» рубрика айӗнчи «Майсем пур пулин те» рейд корреспонденцине шӑп та лӑп ҫавӑн пек наборласа вырнаҫтарнӑ (1983, февр. 12-мӗшӗ). Апла туни рейд бригадин материалне ыттисенчен ҫӑмӑллӑнах уйӑрма, сӑмах мӗн ҫинчен пынине хӑвӑрт ӑнланса илме май парать.

«Коммунизм ялавӗ» нумай чухне рейд тӗллевне кӳртӗмре кӗскен ҫырса пӗлтерет. Икӗ колонка ҫине хура шрифтпа наборласа, ҫав кӳртӗме вара полосара заголовок айне материалваррине кӗртсе лартать, рамкӑна илет. Акӑ Ҫӗрпӳ районӗнче ирттернӗ рейд материалӗн кӳртӗмӗ:

«Районти хуҫалӑхсен кӑҫал кашни гектартан 24 центнер тӗштырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсем туса илмелле. Ҫавна май пысӑк тухӑҫ паракан, районланӑ сортсем ытларах акса хӑварма палӑртнӑ. Ҫуртри вӑрлӑхӗ 58 517 центнер хатӗрленӗ.

Анчах 600 центнера яхăн акма юрăхсăр. Техникăна та вăрах юсаççĕ. Мĕншĕн?»[13]

«Пионер сасси» паха темăпа ирттернĕ рейд материалне «Яланах çапла пуласчĕ» ятпа виççĕмĕш полосара пичетленĕ (1981, ноябрĕн 21-мĕшĕ). Çак корреспонденци умне редакци çакнашкал комментари парать: «Пирĕнтен кашни апат çимессерен пĕр грамм çăкăр усăсăр тăкакласан, пĕтĕмпе çĕршыв кунне 750 тонна çăкăр çухатĕ. Çăкăр — чи кирлĕ апатçимĕç». Ку ăнлантару рейд темине уçса парать.

Рейд материалне вулакан ниепле те асăрхамасăр иртеймест. **«Рейдра — Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуçĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкулти пионерсемпе комсомолецсем.** Кашни кунах вĕри апат çитереççĕ шкулти вĕренекенсене. Столовăйĕ çутă та таса... Çĕнни те пур паян — сĕтелсем хушшинче хĕрлĕ хăю çыхнă ачасем çӳреççĕ. Рейд бригадин членĕсем кусем. Мĕн палăртрĕç-ха вĕсем? Çакăн çинчен хаçатăн 3-мĕш страницинче вулăр»,— асăрхаттарнă номерĕн пĕрремĕш полосинчех. Кунтах корреспондент шкул столовăйĕнче тунă тăватă фотоӳкерчĕке панă.

Хаçатăн 1983 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи номерĕ «Кая юлсан — каю шăтать» рейд корреспонденцийĕпе уçăлать. Ăна «Кун йĕркинче — дисциплина ыйтăвĕ» рубрикăпа вырнаçтарнă. Тĕп заголовок айĕнче хушса пани пур: «Пионер сасси» хаçат редакцийĕ Çĕмĕрле районĕнчи Хĕрлĕ Октябрьти вăтам шкулти активистсемпе пĕрле ирттернĕ рейд»,—тенĕ унта. Корреспонденци вĕçĕнче, хура шрифтпа наборласа, корреспондент комментарине панă. Кунсăр пуçне, рейд материалне рамка ăшне илнĕ. Кĕскен каласан, хаçат редакцийĕ юнкорсен бригадин корреспонденцине вуламасăр хăвармалла мар тума тăрăшнă.

Красноармейски район хаçачĕ рейд материалĕсене «Ял пурнăçĕ» контроллет» клишеленĕ рубрикăпа палăртать. Коллектив материалĕсене пичетлеме ытти район хаçачĕсем те ятарласа рубрикăсем тунă. Рейд материалне мĕнле килчĕ апла вырнаçтарни унăн пĕлтерĕшне самаях чакарать. «Советская Чувашия» хаçатра рейд бригадин «Васкамасăр, аваллилле» корреспонденцине ниммĕнпе палăртмасăр-уйăрмасăр, полосан аял енне кайри вырăна вырнаçтаркаласа хунă (1982, авг. 7-мĕшĕ). Вулакан ăна асăрхамасăр хăварма та пултарать, мĕншĕн тесен вăл ыттисенчен ниммĕнпе те уйрăлса тăмасть. Ку материала рейд бригади хатĕрленине темиçен алă пуснинчен кăна тĕшмĕртме пулать.

Çапла ĕнтĕ, рейд материалĕ валли вырăн малти полосара, май килмесен, иккĕмĕш полосара уйăрмалла. Тема рубрикин яланхи вырăнĕ каярахри полосасенче пулсан кăна рейд

---

[13] Коммунизм ялавĕ, 1983, мартăн 6-мĕшĕ.

материалĕсене унта вырнаçтарма юрать. Материала бригада хатĕрленине палăртса хăварни кирлĕ.

Хăй пуçарнă ĕçе вĕçне çитерекен, хускатнă ыйтусене татса пама пĕтĕм вăйпа тăрăшакан хаçатăн авторитечĕ пысăк. Рейд материалĕн витĕмлĕхĕшĕн пыракан кĕрешӳре те çурма çулта чарăнни пачах вырнаçусăр. Кунта материала çутă кун кăтартни сахал. Хаçат малалла та активлă позици тытса пымалла. Материал çапăнса тухнă хыççăн пичет органĕн активлăхĕ çакăнта палăрать: хаçат редакцийĕнчи çырусен пайĕ тата рейда йĕркеленĕ пай, редакци коллегийĕ е ĕçялкорсен совечĕ, редактор хăй тивĕçлĕ предприятисемпе хуçалăхсене, организацисемпе учрежденисене, министерствăсемпе ведомствăсене рейд бригади хускатнă ыйтусем тăрăх вăраха ямасăр тивĕçлĕ мерăсем йышăнма çине тăрса хистемелле. Ку енĕпе хаçат редакцийĕ тумалли ĕçсем çинче чарăнса тăрар. Пĕрремĕшĕнчен, тивĕçлĕ руководителе редакци çыру ярса парать, унта кирлĕ мерăсем йышăнни çинчен хаçата хăçан пĕлтермеллине кăтартать. Çырупа пĕрле рейд материалĕн текстне ярса панине ырламалла. Иккĕмĕшĕнчен, кăтартнă вăхăтра хаçата ответ памасан, редакци çав адреспах астутару хучĕ ярать, ответа çĕнĕрен кăтартнă срокра пама хистет. Виççĕмĕшĕнчен, пичетри сăмаха хакламан руководительсем çинчен критика материалĕ çырса кăларать. Тăваттăмĕшĕнчен, мерăсем йышăнни çинчен ответ килмен чухне татса паман ыйту патне редакци тепĕр хут таврăнать: унчченхи объектсенчех тепĕр хут тĕрĕслемелли рейд йĕркелет.

Паллах, ĕç тупсăмĕ кашни хутрах редакцие вăрăм çырусем ярса панинче мар. Пачах урăхла. Рейд бригади панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртни паха. Эхер вĕсене пурнăçлама май килмесен, ун çинчен редакцие те, вулакансене те вăхăтра хыпарламалла. Ку вăл ĕçе лайăхлатмалли çĕнĕ майсем шырама пулăшать, ĕçялкорĕсемпе хаçат редакцийĕн ответлăхне ӳстерет.

«Советская Чувашия» хаçат 1978 çулта çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли обществăлла смотр вăхăтĕнче рейд материалĕсем умлă-хыçлах улттă пичетлет. Вĕсене Хĕрлĕ Чутай, Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Пăрачкав, Канаш районĕсенче ирттернĕ рейдсем тăрăх çырнă. Вăхăт иртсе пынă, анчах йышăннă мерăсем çинчен редакцие Улатăрпа Хĕрлĕ Чутай районĕсенчен çеç хыпарланă, ку ответсенче те мĕн-мĕн тунине конкретлă кăтартман. Çакна кура хаçат редакцийĕ «Ячĕшĕн çырса яни кăна...» материал пичетлет, айăплисене критика вучĕпе пĕçертет (1978, апр. 6-мĕшĕ). Çапла туни кăлăх пулмасть. Ун хыççăн редакцие йышăннă мерăсем çинчен пĕлтерсе тăрасси лайăхланни палăрать.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ рейд материалĕсем çине ответсем илнипех çырлахмасть, вĕсене тĕплĕн тишкерет,

мĕнле мерăсем йышăннине тĕрĕслет. Акă, 1980 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче «Хуçа çуккине пула» ятпа пичетленнĕ рейд материалĕнче республикăри чылай хуçалăхсенче шăварса тăмалли техникăна япăх юсани тата пăхса тăни çинчен çырнăччĕ. Ун тăрăх редакцие пилĕк ответ панă. Чăваш АССР ялхуçалăх министрĕ Б. И. Егоров, КПСС Вăрмар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В. А. Алексеев тĕплĕ ответсем панă. Çав вăхăтрах Чăваш АССР мелиораципе шыв хуçалăх министрĕн заместителĕ Н. П. Коновалов, Чăваш АССР ялхуçалăхне производствăпа техника енĕпе пулăшакан государство комитет председателĕн заместителĕ В. К. Костин рейд материалĕнче хускатнă уйрăм ыйтусем пирки нимĕн те шарламаççĕ. Хăшпĕр организацисем айăпа хăйсем çинчен сиресшĕн. Çав ответсене тĕплĕн тишкерсе, редакци хаçатра пысăк материал пичетлет, министерствăсемпе ведомствăсене, районсенчи парти тата ялхуçалăх органĕсене ĕçе лайăхлатас енĕпе тăхтаса тăмасăр конкретлă мерăсем йышăнма хистет[14].

Пирĕн хаçатсем малти опыта аванах пропагандăлаççĕ. Çĕнĕ пуçарусем, прогрессивлă ĕç майĕсем çинчен материалсем прессăра тăтăшах пичетленеççĕ. Рейд бригадисем те малти опыта çине тăрсах тишкереççĕ; хаçат, телевиденипе радио урлă ун çинчен ĕççыннисене тĕплĕн каласа параççĕ. Анчах массăллă информаци хатĕрĕсенчен чылайăшĕ малти опыт çинчен пĕлтереççĕ те... лăпланаççĕ. Çакă пулать те ĕнтĕ çурма çулта чарăнни. Лайăххи, çĕнни хăйне валли анлă çул туптăр тесен, ун çинчен пĕлтернĕ хыççăн массăллă информаци хатĕрĕсен организаторла ĕçе малалла туса пымалла. Тĕслĕхрен, «Белгородская правда» хаçат çакăн пек рубрика уçнă: «Эпир малти опыт çинчен каласа патăмăр. Ана сараççĕ-и?» Çав тĕллевпех хаçат «çавра сĕтелсем», уçă çыру кунĕсем ирттерет т. ыт. те[15]. Организаторла ĕçе «Белгородская правда» хаçатран вĕренмелли пурах. Проблемăллă тата критикăллă материалсен витĕмлĕхĕшĕн тăрăшнипе пĕрлех пахине сарассишĕн те çине тăрса вăй хумалла.

Редакци умĕнчи тепĕр пысăк задача — предприятисен, колхозсемпе совхозсен, учреждениcемпе организацисен, министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем çитменлĕхсемпе кăлтăксене пĕтерме, ĕçе лайăхлатма мĕн-мĕн туни çинчен хаçата вăхăтра пĕлтерсе тăрассине йăлана кĕртесси. Çак

---

[14] Т-р: Хуçа çуккине пула.— Коммунизм ялавĕ, 1980, июнĕн 15-мĕшĕ.
[15] См.: Соболев В. Позиция газеты. — Правда, 1983, 27 мая.

тĕллевпе чи малтанах хаçатăн хăйĕн тăрăшмалла, редакцие паракан ответсене тивĕçлĕ тимлĕх уйăрмалла, вĕсем çинчен вулакансене çийĕнчех хыпарласа тăмалла. Вăхăтăн-вăхăтăн хаçатра пичетри сăмаха камсем мĕнле хакланине кăтартакан тишкерӳсем пичетлемелле. Кунсăр пуçне, критикăна шарламасăр ирттерсе яма, корреспондентсене хĕсме пăхакансем çинчен редакцин тăхтаса тăмасăр парти комитетне пĕлтермелле.

Парти комитечĕсем пичетри сăмах витĕмлĕхĕшĕн кĕрешме хаçат редакцийĕсене тăтăшах пулăшмалла.

«Массăллă информаци хатĕрĕсен витĕмлĕхĕпе авторитетне ӳстерессишĕн пĕрмай тăрăшмалла, журналистсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла, прессăн пурнăçа тĕрĕс çутатакан проблемăллă тата критикăллă материалĕсене ырламалла»,— палăртса хăварнă партин Центральнăй Комитечĕ «КПСС Саратов обкомĕн ĕçĕ çинчен отчет» постановленире[16]. Çакă парти комитечĕсене пурне те пырса тивет.

«Виçĕ çул каялла КПСС обкомĕн бюровĕ партин Йĕпреç райкомĕ «Çĕнтерӳшĕн» хаçата мĕнле ертсе пыни çинчен ыйту сӳтсе явнăччĕ. Лайăххине палăртнипе пĕрлех, райком хăйĕн пичет органĕн ролĕпе витĕмлĕхне ӳстерес тĕлĕшпе КПСС XXV съезчĕ, партин Центральнăй Комитечĕ КПСС Томск обкомĕ массăллă информаци тата пропаганда хатĕрĕсене мĕнле ертсе пыни çинчен йышăннă постановленире кăтартса панă пек тăрăшманнине те кăтартса хăварнăччĕ»[17].

Çавăн хыççăн хаçат ĕçĕ-хĕлĕнче мĕнле улшăнусем пулни, парти кăларса тăратнă задачăсене мĕнле пурнăçлани çинчен КПСС Йĕпреç райкомĕн IV пленумĕ 1979 çулта ятарласа сӳтсе яврĕ. Пленум постановленийĕнче ĕçялкорсен рейчĕсене тăтăшах ирттерме кирлине те палăртса хăварнă. КПСС райкомĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ рейд материалĕсем тăрăх мĕнле мерăсем йышăннине хăй контроллесе тăрать. Тĕрĕс тăваççĕ йĕпреçсем.

Парти комитечĕсен ĕçлĕ критикăна тĕрлĕ сăлтавсемпе сирсе яракансенчен, ячĕшĕн кăна ответ паракансенчен çирĕп ыйтас пулать, волокитăпа бюрократизма тивĕçлĕ хак памалла. Пичетри сăмах витĕмлĕхĕшĕн кĕрешесси епле пыни çинчен вăхăтран вăхăта парти комитетĕнче ятарласа сӳтсе явмалла.

---

[16] Правда, 1983, 7 июля.
[17] Кун йĕркинче редакци отчечĕ.—Коммунизм ялавĕ, 1979, дек. 13-мĕшĕ.

Çапла вара, КПСС XXVI съезчĕн тата партин Централь-нăй Комитечĕн 1982 çулхи май уйăхĕнчи тата ноябрьти, 1983 çулхи июньти Пленумĕсен йышăнăвĕсене чыслăн пурнăçа кĕртес ĕçре рабкорсемпе ялкорсен активлăхне ӳстерсех пыни кирлĕ. Общественность рабочи тата ялти корреспондентсене шанать, вĕсен ĕçне пысăка хурать. Производствăра ĕçсем еп-ле пынишĕн пичет активисчĕсем те ответлă, йăнăшсемпе çит-менлĕхсене курмăш тума пултараймаççĕ вĕсем. Тĕплĕн шу-хăшласа тунă планпа рейдсене промышленность, строитель-ство, транспорт, çыхăну, суту-илӳ, обществăлла апатлану предприятийĕсемпе организацийĕсенче ирттермелле. Рейд бригадисен чи малтанах производство планĕсене тултарса пырайман цехсемпе участоксене, бригадăсене çитмелле, ĕç дисциплини мĕн тери çирĕппине тĕрĕслемелле; малти опыта, патриотла пуçарусене сарасси, Ростов облаçĕнчи рабочисен юлса пыракансемсĕр ĕçлемелли меслетне пурнăçа кĕртес-си çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла; производство хăвачĕсемпе усă курас, продукци туса кăларма пурлăх, энерги, укçа-тен-кĕ, ĕç вăйĕ тăкаклассине чакарас, усăсăр тăкаксене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн тума май пуррине тишкермелле. Яла шефла пулăшу пани, ялхуçалăх продукцийĕ туса илекен хушма предприятисен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те манмалла мар. Рейд бри-гадисем малта пыракан коллективсен, производство новато-рĕсен ĕç опытне пур енлĕн уçса пама тивĕçлĕ. Тĕслĕхрен, строительствăпа транспортра коллективлă подряд меслетне ĕçе кĕртессишĕн тăрăшмалла.

Ялкорсем умĕнчи тĕллевсем те пархатарлă. Вĕсен брига-дисем пысăк тухăçлă тырпул, çĕрулми, пахчаçимĕç, хăмла туса илме тата вĕсене патшалăха сутас енĕпе социализмла обязательствăсене пурнăçлама, выльăх-чĕрлĕх валли паха апат хатĕрлеме, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине тата хатĕрлессине ӳстерме мĕн чăрмантарать, çавсене çийĕн-чех сирсе пырассишĕн вăй хумалла. Ставрополь крайĕнчи Ипатовăри çĕр ĕçченĕсен паха тĕслĕхне, унпа пĕрлех вырăн-ти колхозсемпе совхозсенчи лайăх опыта сарма тăрăшмал-ла. Эрозие хирĕç кĕрешесси, выльăх-чĕрлĕх фермисене ком-плекслă механизацилемелли плансене ăнăçлă тултарасси, кĕтĕве çĕнетесси, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварасси, ял-хуçалăх техникипе пур хуçалăхсенче те тухăçлă усă курас-си — çак ыйтусем çине те пĕрмаях тимлĕх уйăрмалла.

Ĕççыннисене коммунизмла воспитани парасси епле пулса пынине, социализмла законлăха тата обществăри йĕркелĕхе çирĕплетессине, культурăпа йăла предприятийĕсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелессине тата ытти чылай ыйтусене рейд бригадисен ĕç планне кĕртмелле. Ĕçялкорсен рейчĕсене çавăн пекех культура, сывлăха сыхлас тата çутĕç учреждениийĕсенче ирттермелле.

Хальхи вăхăтра пирĕн республикăри ĕççыннисем КПСС XXVI съезчĕ палăртса хунисене, вунпĕрмĕш пилĕкçуллăх планĕсене, Апат-çимĕç программине чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Ку темăсем рейд бригадисемшĕн те чи пахисем пулса тăчĕç. Журналистсемпе ĕçялкорсен партипе халăх умĕнчи ответлăхĕ ӳссе пырать. Вĕсенчен кашниех партипе халăх шанăçне тӳрре кăларассишĕн тивĕçлипе вăй хуни кирлĕ. Ĕçялкорсен ĕçне лайăхлатни, вĕсен рейчĕсен витĕмлĕхне ӳстерни коммунизм строительствин задачисене ăнăçлă пурнăçлама пулăшаççĕ.

**Семинарпа практика занятийĕсен темисем:**

Пичет активисчĕсен рейчĕсем тата вĕсен тĕсĕсем.

Рейд ирттерессин йĕркисем.

Ĕçялкорсен рейчĕн витĕмлĕхĕшĕн кĕрешмелли майсем.

Студентсем занятисене çӳренине палăртмалли пĕррелĕх рейд.

Университет общежитийĕсенчи тирпейлĕхпе йĕркелĕхе тĕрĕслемелли маршрутлă рейд.

## УСА КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


О дальнейшем развитии общественных начал в советской печати и радио: Постановление ЦК КПСС от 28 июня 1960 г. — В кн.: В. И. Ленин, КПСС о печати: Сб. док. и материалов. М., 1970, с. 274—276.

Партин идеологи ĕçĕпе массăллă-политикăлла ĕçĕн хальхи кирлĕ ыйтăвĕсем: КПСС Центральнăй Комитечĕн 1983 çулхи июньти Пленумĕн постановленийĕ. — Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

Андропов Ю. В. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче 1983 çулхи июнĕн 15-мешĕнче калană сăмах. — Коммунизм ялавĕ, 1983, июнĕн 16-мĕшĕ.

Социализмла ăмăртăва йĕркелес ĕçе, унăн итогĕсене пĕтĕмлетмелли, ăмăрту çĕнтерӳçисене хавхалантармалли практикăна лайăхлатасси çинчен: КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ. — Коммунизм ялавĕ, 1983, сент. 30-мĕшĕ.

Брискин А. Рейд пяти тысяч. Куйбышев: Кн. изд-во, 1960, 54 с.

Гуревич С. Совместные рейды «Правды» и «Известий». — В кн.: Вопросы журналистики, вып. II. М.: Изд-во МГУ, 1962, с. 34—46.

Доманов И. Рейд двадцати тысяч: Опыт проведения массового рейда. Сталино; Донбасс: Кн. изд-во, 1959, 54 с.

Дубровский В. Ночной рейд. — Комсомольская правда, 1963, 7 сент.

Ермилов В., Магид А. 60 рейдов: Опыт работы ударных бригад «Правды». 2-е изд. М.: Правда, 1930, 65 с.

Организация работы редакции газеты: Учебное пособие. М.: Мысль, 1965, с. 112—117.

Сурков В. Селькоровский пост в колхозе. Пенза: Приволж. кн. изд-во. Пенз. отд-ние, 1959. 35 с.

Тенюшев И. Зимовке скота — неослабное внимание: Массовые рейды селькоров. — Советская Чувашия, 1962, 2 февр.

Тенюшев И. Рейд бригадисем çула тухрĕç. — Коммунизм ялавĕ, 1967, июлĕн 7-мĕшĕ.

Тенюшев И. Рейдсене ялкорсен посчĕсем ирттереççĕ.— Коммунизм ялавĕ, 1968, сент. 14-мĕшĕ.

Ярмаль А. Тысячи участников смотра. — Рабоче-крестьянский корреспондент, 1970, № 6, с. 7—9.

# ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

*Пĕрремĕш сыпăк*

Еçялкорсен рейчĕ — хаçат редакцийĕ йĕркелекен массăллă ĕçĕн паха форми . . . . . . . . . . . . . . . 4

*Иккĕмĕш сыпăк*

Рейдсен тĕсĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 21

*Виççĕмĕш сыпăк*

Рейд ирттерессин йĕркисем . . . . . . . . . 35

*Тăваттăмĕш сыпăк*

Рейдсен витĕмлĕхĕшĕн кĕрешмелли майсем . . . . . . 58

Семинарпа практика занятийĕсен темисем . . . . . . 73

Усă курмалли литература . . . . . . . . . . . 74

Иван Яковлевич Тенюшев

МАССОВЫЕ РЕЙДЫ РАБОЧИХ
И СЕЛЬСКИХ КОРРЕСПОНДЕНТОВ В ЧУВАШИИ

Учебное пособие

Редактор *М. М. Федорова*

Корректор *С. Г. Леонтьева*

---

Сдано в набор 22.11.83. Подписано в печать 31.12.83. НТ 21912. Формат 60×90/16. Бумага газетная. Литературная гарнитура. Высокая печать. Усл. п. л. 4,75. Уч.-изд. л. 5. Тираж 250 экз. Заказ № 1839. Цена 25 коп.

---

Редакционно-издательский отдел
Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова.
Типография Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова,
г. Чебоксары, Московский пр., 15.

25 коп.

Б 38797